С89

Михаил Сунтал

4-44168

# Мăнту вăрттăнлăхĕ



Национальная библиотека ЧР
4-044168

К84.89(=чув)
С89

*Михаил Сунтал*

# *Ăнту вăрттăнлăхĕ*

Калавпа
фантастикăллă повесть

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2011

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2 Рос=Чув) 6-4
С 89

Проверено 1 СЕН 2017

И-44168

ISBN 978-5-7670-1863-5

© Сунтал М.П., 2011
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2011

# *Мăнту вăрттăнлăхĕ*

Калав



Тăвайккинчи шкул çути Анюк чĕринче те ялкăшса илчĕ тейĕн. Хĕр ача аллисене ик еннелле сарчĕ те вĕçме вĕренекен курак чĕппи евĕр хăлаçланса чăнкă çыранран хăвăрт чупса анчĕ. Çырма урлă каçнă чухне ура айĕнчи кĕпер параппан пек кĕрленине пĕр самант итлесе пычĕ, унтан урисене вăрăмрах ярса пусса сăрта хăпарма тытăнчĕ. Унта — ушкăн ача. Çуйхашу, кулă. Тахăшĕ авă йĕрет те пулас. Анюкăн та çак çӳллĕ тăвайккинчен вирхĕнсе ярăнас килет. Анчах...

Васкать хĕр ача. Утнăçем çаврăна-çаврăна пăхать. Пилĕклĕ пальтине йӳле янă. Куçĕ умĕнче вĕт-шакăр, çырма тĕпĕнчи шăн кĕпер, ватă йăмра... Çăлкуç тапса тăнă çĕрте çырма тĕпĕ хуп-хура.

Шкулта ăшă, çутă, урамринчен те шавлă. Коридор тăршшĕпех — аслă классенче вĕренекенсем. Ушкăнăн-ушкăнăн тăрса тухнă. Анюк класа пĕр чарăнса тăмасăр кĕрсе каясшăнччĕ — пулмарĕ.

— Анюк, паян эсĕ чăваш хĕрĕн ĕлĕкхи тумĕпе ташлатăн теççĕ, — пӳлчĕ ун çулне Якур.

— Сана мĕн ĕç! — пăрăнма тăрăшрĕ хĕр ача.

Арçын ача ăна тытса чарчĕ. Тем пулнă. Чăрлаттарсах пăхать. Якур çĕнĕ хура костюмпа. Çырă çӳçне туранă... Тăрăхларах питлĕ вăл. Куç харшисем тӳп-тӳрĕ.

Арçын ача хăйне ашкăнчăкла тыткалани Анюка килĕшмерĕ. Умĕнче тăракан Якура хытах тĕртсе ячĕ те ун аллинчен вĕçерĕнсе сцена хыçне чăмрĕ.

Концерта хутшăнакансем, Анюк пекех, уяв тумĕпе. Ташлакансем тĕкĕр умĕнче çаврăнкалаççĕ, кĕпе аркисене, саппунĕсене турткалаççĕ. Пурте йĕркеллĕ, пĕтĕмпех лайăх. Анюкăн тата тухья тăхăнмалла, мăй çыххи çакмалла. Япалисем вара — шкул музейĕнче, уççи — техничкăра.

Вăйă карталанма пуçличчен мĕн кирлине илсе ĕлкĕрес тесе хĕр ача ун-кун пăхкаларĕ. Наçтаç аппа ăçта-ши?

Анюк ку музейра темиçе те пулнă, пурпĕр çӳçентерет кунта. Акă халĕ те кĕрсенех Наçтаç аппана аллинчен ярса тытрĕ вăл. Вĕсен умĕнче — çын шăмми-шакки. Юнашарах — тăманан пуш кĕлетки. Кантăк куçĕ хĕпхĕрлĕ... Мамонтăн асав шăлĕсем те, формалин ăшĕнче ĕмĕрĕпех çывăракан çĕленсем те пур кунта...

Çамрăксен уяв касĕ хĕрсех пырать. Артистсем пĕрин хыççăн тепри сцена çине тухса юрласа параççĕ. Залра тăвăллăн алă çупни илтĕнет. Анюксен те ташлама вăхăт. Хĕрсен вăйă карти, çил çинчи чечексем евĕр, пĕр енчен тепĕр еннелле тайăлать...

Шăкăрт! илтĕнчĕ сцена çинче. Малта ларакансем кăртах сикрĕç. Мĕн пулчĕ-ши? Мăйĕсене малалла тăссах пăхаççĕ курма пынисем. Нимех те мар иккен. Ташă вăхăтĕнче ăнсăртран Анюкăн мăй çыххи татăлса ўкнĕ. Хĕр ача асăрхайман, урипе таптанă. Шăрçине пуçтара-пуçтара ташлать Анюк. Ташă кĕввине çухатмасть вăл.

Савăнăçлă концертăн вĕçĕ те хаваслă пулмалла пек. Урама тухсан арçын ачасем юрпа перкелешме тытăнчĕç. Тахăшĕн юр чăмаккийĕ зал чўречине пырса çапăнчĕ, пăрпа эрешленнĕ кантăк чăнкăр-р! турĕ. Камăн ун пек чухне айăплă пулас килтĕр? Пурте чăлпар саланчĕç. Хыçалта Наçтаç аппа ятлаçни çеç илтĕнсе юлчĕ.

* * *

Тепĕр кунне ирпе шкула ватăрах сăнлă столяр килсе çитрĕ, утиялпа кăна кăшт-кашт карса хунă чўречен кантăкне улăштарма тытăнчĕ. Анюк пĕрремĕш тăхтаврах пуçтарса хунă мăй çыххипе шăрçасене çиппе тирме пикенчĕ.

Столяр кичемрех çын пек курăнать. Акă вăл ачасене вăрçкаласа пысăк кантăк листи илсе кĕчĕ. Кĕленче каскăчĕпе ăна чăр-р! чĕрчĕ. Анчах кăшт пуснипех чулĕ тухса ўкрĕ. Шыраса туп ĕнтĕ халĕ пĕчĕк тĕпренчĕке урайĕнче. Тен, хăма хушăкĕнчен тĕпсакайне те сикрĕ пулĕ?

Мăкăртата-мăкăртата столяр каскăч чулне шырама тытăнчĕ. Телее, часах тупрĕ вăл ăна.

Анюк музейра мăй çыххи майлаштарса пĕтерчĕ, анчах пĕр шăрçи çухалнă пулас. Хĕр ача ĕнерхи уява аса илчĕ. Музейра шыракаланă хыççăн зала вĕçтерсе çитрĕ. Унта Наçтаç аппа, шăпăрпа савук тытнăскер, урай шăлать. Столяр ĕç хатĕрĕсене пуçтарса хунă.

— Ай, мĕн ку? — тĕлĕнчĕ Наçтаç аппа.

— Мăй çыххинчи шăрçа мар-и? — калаçăва хутшăнчĕ Анюк.

— Ара, ку ман алмаз вĕт-ха, — тĕпренчĕке çавăркаларĕ столяр. Унтах кантăк татăкне чăйлаттарса чĕрсе пăхрĕ. Аптранă енне вăл кĕсьери каскăчне тутрса кăларчĕ. Алмазĕ вырăнтах-мĕн!

Анюк тем тĕшмĕртсе татах шырама пуçларĕ. Унăн çивĕч куçĕ самантрах çӳп çинчи темиçе йăлтăрккана уйăрса илчĕ. Вĕсене пĕрпĕрин çумне çыпăçтарса хурсан шăрçа пулмалла. Пĕри çеç вырнаçмасть. Столяр хăйĕн каскăчĕнчи алмаз тĕпренчĕке темиçе пайлă шăрçа çумне тытса пăхрĕ. Чул катăкĕн вырăнĕ йăлтах хупланать. Пурте харăсах ăнкарса илчĕç: таптаса ватнă шăрçа тĕпренчĕкĕсем — алмаз!

Ку хыпар шкулĕпех сарăлчĕ. Пуçланчĕ мăй çыххи тавра пăтăрмах. Пуринчен ытла Якурпа Михайлов учитель тăрăшрĕç. Историк кун йышши хаклă мăй çыххи чăваш ялне епле лекнине пĕлесшĕн пулчĕ. Якур шăрçасене тĕрĕслесшĕн ăшталанчĕ.

— Эй, çав шăрçасем! Эпĕ вĕсене кантăкран тунă тесе. Мăй çыххине ăна ман валли эп çамрăк чухнех ăсталанăччĕ. Ватăлтăм та

ак шкулти музея патăм. Сыхланса юлтăр терĕм. Эккей, мĕнле килсе тухрĕ-ха капла? — такамран пулăшу ыйтнă евĕр пăхкаларĕ Наçтаç аппа.

— Ăçтан тупрăр-ха çавăн чухлĕ шăрçа? — тĕпчерĕ Михайлов.

— Ара, ун чух пит начар пурăнаттăмăр та, шăрçа илме укçа çукчĕ. Вара кĕленче ванчăкĕсенчен тутарттартăм. Эп кантăк тесе! Тем чухлехчĕ вĕсем Мăнтури тимĕрçĕ лаççи хыçĕнче. Ман старик вĕсенчен пĕр ярăм шăрçа туса пачĕ вара.

— Леш Ительмес тимĕрçĕ лаççи патĕнче тупнă-и?

— Çавăнта, ара...

Пурин те халех Мăнту çине чупса каяс килчĕ, анчах апла тума май çук. Урамра хулăн кĕртсем. Хĕлле.

— Унта ĕлĕк питĕ ăста тимĕрçĕ ĕçленĕ тет, — хăйĕн калавне малалла тăсрĕ ватă хĕрарăм. — Хресченĕн ĕç хатĕрĕсене пĕтĕмпех çавă тунă пулать. Пĕр вăрçă вăхăтĕнче ăна тăшман тыткăна илнĕ, хĕç-пăшал тума хистенĕ. Ку вара килĕшмен. Тăван халăха пĕтермелли хĕç-пăшал туса çылăха кĕрем-и тенĕ. Тăшман умĕнче пуç тайман тимĕрçе хĕçпе касма тăнă. Тимĕрçĕ çав самантрах лаççи-мĕнĕпех куç умĕнчен çухалнă тет. Çавăнтанпа тимĕрçĕ Мăнту ăшĕнче ĕçлесе пурăнать имĕш. Çĕр çине выртса итлесен халĕ те шалта чанк-чанк! туни илтĕнет тет Энтри хăта. Те чăнах çапла вара?

— Халь те ĕçлет тет... — шухăша кайрĕ учитель.

— Çапла калаççĕ çав, — тавăрчĕ Наçтаç аппа...

Куна илтнĕ шкул ачисем ахăлтатсах кулса ячĕç. Учитель куçĕнче те иккĕленни палăрать... Çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, урока йыхăрса шăнкăрав янăраса кайрĕ. Пулни-иртнине манса ача-пăча самантрах класалла ыткăнчĕ.

* * *

Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ. Шкулти пăтăрмахсем те манăçа тухрĕç. Çурхи кунсем çитрĕç. Шыв-шур тапранчĕ. Сăрт пичĕ типсе çитнĕпе пĕрех. Тулта ăшă. Çурхи уявсем умĕн учительсемпе ачасем шкула тирпейилем кĕртме шут тытрĕç. Музейра Михайлов, Наçтаç аппа тата Анюк ĕçлерĕç. Истори учителĕ яланхи пекех ĕлĕкхи вăрçă хатĕрĕсен тутăхĕпе тусанне шăлчĕ. Анюк тухьяпа хушпусене питех те асăрхануллăн тыткаларĕ.

— Наçтаç аппа, кăтарт-ха пире леш кантăк алмаз тĕпренчĕкĕсем тупăннă вырăна, — концерт хыççăнхи калаçăва аса илчĕ хĕр ача. — Манăн та çав кевер чулсенчен шăрçа тăвас килет.

— Ма кăтартас мар, кăтартас. Мана çула май, — килĕшрĕ Наçтаç аппа. — Акă шкулти ĕçсене пĕтерĕпĕр те пурте пĕрле кайăпăр.

Ваттипе çамрăкки куç илмесĕр истори учителĕ çине пăхаççĕ. Ку шухăша Михайлов та пуçа илчĕ пулас. Ĕлĕкхи тимĕрçĕ çинчен хывнă халапа тĕрĕслесе пăхма вăл та

пĕртте хирĕç мар. Çакна çеç кĕтнĕ тейĕн хĕр ача, ĕçне пăрахсах картишне чупса тухрĕ.

Шкул ачисенчен чылайăшĕ садра тăрмашать-мĕн. «Якур, Якур!» — чĕнчĕ юлташне хĕр ача. Нумайччен пăшăлтатрĕç çамрăксем. Çурхи пахчана пуçтаракансем вĕсем çине пĕрре кăна мар пăхса илчĕç. Вăхăтран вăхăта Якурĕ аллинчи кĕреçепе çĕре чавса илчĕ. Анюкĕ кăкăрĕ умне тем тытса кăтартать. Никама та асăрхамаççĕ вĕсем...

Мăнту — таврари чи çӳллĕ вырăн. Аялта çырма. Пĕчĕк юхан шыв хĕррипе ял урамĕ вырнаçнă. Кунтан аякра та мар тимĕрçĕ лаççи пулнă. Халĕ унăн, паллах, йĕрри-палли те юлман. Ватă çынсем каланă тăрăх, тимĕр тăприне те таçтан илсе килмен, çакăнтах, çырма тĕпĕнчех, тупнă пулать. Пусă чавнă чух тăпрапа пĕрле хура чул катăкĕсем тухнине Якур темиçе те курнă-ха, анчах кун пирки кăсăкланса шутламан.

— Ман шутпа, ак çакăнта пулма кирлĕ вăл, — терĕ Наçтаç аппа Якур шухăшне татса. — Çак тĕлте тупсаччĕ. Шыраса пăхăр, эпĕ каям.

Мăнту пичĕ пĕтĕмпех типсе çитнĕ. Хĕвел анăçа тайăлнă пулсан та, самаях хĕртет. Ăшă. Пиншакне хывса пăрахнă учитель çеремлĕ çĕре çĕтет. Якурпа Анюк пысăк муклашкасене алăпа тĕпретсе пыраççĕ. Çамрăк çивĕч куçсем йăлтăркка кантăксене асăрхаççех ĕнтĕ.

— Ĕлĕк, пин те çич çĕр çитмĕл тăваттăмĕш çулсенче, Пăкачав çарĕ пирĕн ял çумĕпех

иртсе кайнă тет. Тен, çавсем пытарнă мул пур кунта? — сăмахларĕ Якур. Хăйне вăл «Мул утравĕ» кĕнекери мул шыравçăсем пекех туйрĕ пулас.

— Нумай тупсан эпĕ вĕсенчен хама валли шăрçа тутарттарăп, — терĕ Анюк. Шухăшĕпе вăл, çав шăрçапа капăрланнăскер, тĕкĕр умĕнче çаврăнкалать.

— Малтан тупар-ха мулне. Вара пĕлетпĕр ăçта хумаллине, — калаçăва хутшăнчĕ учитель, — тен, музей валли пулĕ. Хамăр ял историйĕ ку тĕслĕхпе татах пуянланĕччĕ вара. Хальлĕхе эпир çавна, пулни-иртнине, тĕплĕн тĕпчесе пĕлеймен-ха.

— Мĕн ку? — янăрарĕ хĕр ача сасси. Унăн пылчăкланнă пӳрни çинче темĕнле пĕчĕк йăлтăркка. Пурте ăна тимлесе пăхаççĕ. Çапла, ку кантăкăн тĕсĕ те леш шăрçасенни евĕрех. Кевер чул ку. Чăн та çавă! Анюк ăна хутпа чĕркесе кофта кĕсйине чикрĕ. Ачасем пушшех хавхаланса ĕçлеме тытăнчĕç. Анчах урăх нимĕнех те тупăнмарĕ. Тĕттĕмленме те пуçларĕ.

— Эккей, куç курми пулчĕ. Хунар çутса килмелле мар-ши? — терĕ Якур.

— Çук, ачасем. Паянлăха çитĕ. Ыран татах ĕçлĕпĕр, — лăплантарчĕ пĕчĕк йыша учитель. — Ыран уроксем хыççăн пĕтĕм шкулпа килĕпĕр. Кунта пĕччен-иккĕн нимех те тăваймăн.

Аслин шухăшĕпе пурте килĕшрĕç.

Тепĕр кунне, уроксем вĕçленсен, аслă классенче вĕренекенсем истори учителĕ мал-

танрах хатĕрлесе хунă планпа сăрт типпине тухрĕç. Анчах Мăнту мулĕ тупăнмарĕ-ха, пит шалта пуль, шеремет. Кĕлпе кăмрăксăр пуçне нимех те курăнмасть. Тимĕрçĕ лаççи пулнах пуль çав ку тĕлте. Анчах кĕлпе кăмрăк мул мар-çке. Тупни-пĕри сапаланчăк. Пытарса хунă пулсан пĕр çĕрте — кăкшăмра е пĕр-пĕр савăтра — выртмалла.

Якура питĕ кичем. Вăл кунта мул пуррине пач ĕненми пулчĕ. Анюк та шăрçалăх кевер чул тупайманшăн хытах пăшăрханчĕ. Истори учителĕ шухăша кайрĕ.

— Тупрăм, тупрăм! — кăшкăрса ячĕ çав вăхăтра пĕр ача çĕр ăшĕнчи темĕнле хытă япалана кĕреçепе таккаса. Чанк-чанк! тутарать. Ун тавра ыттисем пухăнчĕç. Кашни хăй куçĕпе курасшăн. Тата кăшт чаврĕç. Майĕпен шурă чул курăна пуçларĕ. Тăпрана татах сирсе ывăтрĕç. Плита евĕр лаптак чул иккен.

Якур тĕлĕннипе пуçне ик аллипе ярса илчĕ. Чул тухнăçем пысăкланса пычĕ.

— Ку чул истори палăкĕ пулма кирлĕ, — тавçăрса илчĕ Михайлов учитель. — Арабла çырнă сас паллисем те пур мар-и-ха. Чăн-чăн палăк! Ачасем, асăрханарах ĕçлĕр!

Акă чул çинчи касса çырнă çыру уççăнах палăрчĕ. Учитель текста вулама тытăнчĕ. Институтра вĕреннĕ чух Иван Михайлов студент Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнчи палăксем çинчен курс ĕçĕ çырнăччĕ. Акă хайхи мĕн пĕлни кирлĕ пулчĕ те. «Çак вырăнта, — вуларĕ вăл, — çĕре кĕнĕ мучарсен князĕ

Магна...». Хыҫалти сас паллисем катăлса ӳкнĕ. Мĕн ҫырнине пĕтĕмпех вулама май ҫук. Мадьяр — венгрсем. Ăҫтан килсе лекме пултарнă вĕсем Мăнту ҫине? «Ҫук, ҫук, эпĕ тĕрĕсех вулаймарăм пулас», — иккĕленчĕ учитель. Ăсчахсем кĕнекере ҫырнине аса илме тăрăшрĕ: «Ҫапла, пин те ик ҫĕр вăтăр улттăмĕш ҫулсенче венгрсен королĕ тутар-монголсем тапăнса килнине илтсен Юлиан ятлă монаха Атăл ҫине Хĕвел тухăҫĕнчен куҫмасăр юлнă Магна Хунгария ăрăвĕнчи венгрсене шырама ярать. Монах вĕсене чăнах та шыраса тупать, анчах пăлхарсен патшалăхĕ саланса кайнă-мĕн. Венгрсем пăлхарсемпе пĕрле вăрмансене тарса пытаннă».

«Ҫав Магна венгрĕсем пурăнман-ши ку вырăнта? — ҫырăва тепĕр хут вуланă май шухăшларĕ учитель. — Чăнах та, пирĕн ял ҫумĕнчех Мучар ялĕ пур-иҫ. Венгрсем вара хăйсене ҫапларах чĕннĕ пулать. Нишер, Мишер, Можар, Мучар, Моджар ятлă ялсем халĕ те чылай ҫĕрте сыхланса юлнă. Апла чăвашсемпе венгрсем ку вырăнсенче те пĕрле пурăннă пек килсе тухать».

— Ачасем! — хăй шухăшне ăшĕнче тек тытса тăраймарĕ учитель. — Ку чул ҫырура венгрсен княҫне ҫакăнта пытарни ҫинчен пĕлтернĕ. Эпир пурте хамăр аякри тăвансен вилтăприйĕ ҫинче тăратпăр.

Ачасемпе историк татах чаврĕҫ. Палăк айĕнче йăла-йĕрке таврашĕ пулмалла. Асăрханса ĕҫлеҫҫĕ ҫамрăк археологсем. Михайлов учитель, вĕреннĕ чухне пĕрре ҫеҫ мар экспе-

дицисене хутшăннăскер, майне пĕлет. Çавăнпа та ĕç наука ыйтнă пек тĕп-тĕрĕс пулса пырать.

Анчах та темле тимлесе шырасан та нимĕнех те тупăнмарĕ. Князь шăмми-шакки, ванчăк савăт-сапа, хаклă йышши япаласем курăнмаççĕ. Ванчăкрах кăкшăм ăшĕнче пĕр ывăç кăмрăк пур. Леш тĕнчере кăвайт чĕртме кăвар кирлĕ пулĕ тенĕ-ши?

— Ку вилтăприне тахçан çаратнă пулас, — калаçрĕ ачасемпе Михайлов. Унтан кăкшăмри кăмрăка йăлтах çĕре силлерĕ, савăт-сапа ванчăкĕсене пуçтарса илчĕ. Çыпăçтарсан музей валли шеп экспонатсем тухмалла.

Ачасем палăка хăй вырăнĕнчех хăварас терĕç. Плитана тăратса лартрĕç, ун тĕпне тăпрапа хутăш чул ярса çирĕплетрĕç. Ал ăстисем тепĕр куннех ун тавра карта тытма пулчĕç.

Палăк чавса кăларнă хыççăн кевер чул ăçтан тупăннине, вăл мĕншĕн сапаланса выртнине те ăнланмалла пек. Князь мулĕ ĕнтĕ. Анчах тупнă япаласем мĕншĕн кĕлпе кăмрăк хутăшĕнчен? Çакă канăç памасть Якура.

— Тен, кунта мул мар, урăххи, — терĕ шухăшлама юратакан ача. — Тахçан çакăнта ăста тимĕрçĕ пурăннă теççĕ. Тимĕр-тăмăр шăратнă вучах вырăнне тупасчĕ. Мĕнле майпа ĕçленĕ-ши ĕлĕкхи хурçă шăратакансем?

Çĕр чавса чылаях ывăннă ачасем килĕсене саланчĕç. Ванюк та килелле утрĕ. «Ара, алмаз тени углеродпа пĕр вĕт-ха, вĕсен ты-

тӑмӗ анчах урӑхла, — аса илчӗ вӑл физика урокӗнче вӗреннине. — Кӑмрӑк, кӗл — алмаз, кевер чул. Ҫав шӑрҫасем тимӗрҫӗ лаҫҫин вучахӗнче ҫуралман-ши? Пулма пултараймасть! Углеродран алмаз тума пысӑк температурӑпа сывлӑш пусӑмӗ кирлӗ. Ун пек пусӑм вучахра ҫук.

Мӗнлеччӗ-ха физика кӗнекинче? «Условие равновесия между углеродом и алмазом, направление перехода из одной фазы в другую зависит от температуры и давления». Ҫаплаччӗ вӗт-ха. Алмазӗ вара хӑех питӗ пӗчӗк хӑвӑртлӑхпа углерода куҫма пултарать. Наука куна тахҫанах палӑртнӑ. Углерод алмаза куҫма вара?.. Тен, авалхи ӑстасем урӑхла мел тупнӑ? Калаҫҫӗ-ҫке Америкӑри индеецсем — инксем — ылтӑнран тунӑ питех те нумай япаласемпе усӑ курнӑ тесе. Ылтӑн тӑприпе пуян вырӑнсем вара унта ҫукрах. Алхимиксем тӑхлана ылтӑна куҫарман пулӗ те? Ҫук, апла мар!» — пӗрре ыйтрӗ, тепре хӑйне хирӗҫлерӗ Якур. Анчах шухӑшӗ ҫапах пуҫран тухмарӗ.

Якур кӑмӑлӗ ӗмӗтлӗ. Акӑ вӑл институтран вӗренсе тухнӑ та, авалхи алхимиксем евӗр, элементсене пӗр тытӑмран тепӗрне куҫарать. Ҫӗнӗ наука та усӗ вӑл.

Ӗмӗтлененекен тӑпах чарӑнса тӑчӗ. «Эккей, эпӗ кил тӗлӗнчен иртсех кайнӑ-ҫке», — тавҫӑрса илчӗ арҫын ача. Унтан каялла вӑртах ҫаврӑнчӗ те кил хапхинчен кӗрсе ҫухалчӗ.

Тавралӑх тахҫанах шӑпланнӑ. Мӑнту ҫумне лӑпчӑннӑ ял тутлӑн ҫывӑрать. Сайра ҫӑл-

тăрсем, кевер чулĕ евĕр, йăлтăр-йăлтăр çиçсе илеççĕ.

Тепĕр кунне Якур ир-ирех вăранса кайрĕ. Тем çухатнăн туйăнать ăна. Ĕнерхине аса илчĕ. Палăк тупни савăнтарчĕ ачана, анчах кевер чул мĕн-ма тупăннине пурпĕр вĕçне çити чухласа илеймерĕ. Çавă пăшăрхантарать те...

Вырăн çинче пĕр вăхăт пулни-иртнине аса илме тăрăшса выртрĕ Ванюк. Кашни япалана, ĕнер курнăскере, шухăшĕпе кăна тепĕр хут тыткаласа пăхрĕ. Тем çухатнăн таçта. Пĕлет ача, ĕçри йăнăша миме хăех картса хăварнă. Анчах хăçан тата хăш тĕлте йăнăшнă-ши — каламасть. Аптранă енне Якур вырăн çинчен вăшт сиксе тăчĕ. Шыв ĕçме тесе кухньăна кĕчĕ. Амăшĕ кăмака хутса янă-мĕн. Кăмакара çулăм ялкăшать. Урайĕнче тимĕр савук. Савукра кăмрăк.

«Кăмрăк, кăмрăк», — çиçсе илчĕ Якур пуçĕнче шухăш. Куç умĕнче тата тепĕр ӳкерчĕк. Историк кăкшăмри кăмрăка çерем çине сапать. «Акă вăл çухатни, — савăнса кайрĕ шухăшлакан. — Миме пaçăр мĕн калас тенине тинех илтрĕм. Пĕтĕм тупсăмĕ çавăнта пулма кирлĕ. Çук, ахальтен лартман çав кăкшăма князь вилтăпри çине. Кунта йăлайĕрке ыйтăвĕ çеç мар, кунта тем урăххи. Хаклă йышши япаласем çук теççĕ. Вилтăприне çаратнă теççĕ. Тем, пулнă-ши ун чухне чăвашсемпе венгрсен мул таврашĕ? Мĕн пурри вут-çулăм айне юлнă. Эпир ниме тăман япала тесе кăларса пăрахни — чи хакли».

Çил пек вĕçтерчĕ шкул ачи урам тăрăх. Ăна хирĕç хĕвел хăпарать. Ыйхăран вăранать ял. Палăк патĕнче вара шăп. Юнашарах — чавнă вырăнсем. Акă вĕсем — кăмрăк катăкĕсем. Çерем çине мĕнле сапнă çаплипех выртаççĕ.

Савăнса кайнă ача пурне те хăвăрт пуçтарса илчĕ. Унтан чул палăк умне ларчĕ те пĕрерĕн-пĕрерĕн илсе çавăркаласа пăхма тытăнчĕ. Пӳрне çинче вăйлăрах пуснипе, тен, кăшт тĕпренчĕ. Ача кăмрăка хĕвел çине тытса пăхрĕ. Кĕтмен те, çип евĕр çутă кăмрăк витĕр тухса ун куçне шартарса ячĕ. «Кăмрăк варринче кантăк! Кевер? — хăвăрттăн сăтăркаласа тĕпретрĕ хытă кăмрăка Якур. — Çапла, кашни катăкра хаклă йышши чул. Акă мĕнпе чысласа пытарнă князçе».

Ача аллинче пĕр ывăç кевер чул. Хĕвел çутинче вĕсем пин тĕслĕ йăлтăртатаççĕ. Хăшпĕрин çумĕнче — кăмрăк тĕпренчĕкĕсем. Тем пек сăтăрсан та каймарĕç хуралчăксем. Уйрăлми çыпăçса ларнă тейĕн.

Йăлтах ăнланчĕ Якур. Мăнту хăйĕн чăнчăн вăрттăнлăхне кăшт çеç уçса кăтартрĕ. Çавă паллă: авалхи тимĕрçĕ кăмрăкран алмаз тума вĕренсе çитнĕ. Ительмес ятлă пулнă вăл. Халăх ун ятне халĕ те астăвать. Ун чухнехи ăстасем мĕнле меслетпе усă курнă-ши? Ылтăна тăхланран мар пулсан та, алмаза кăмрăкран туни куç кĕретех. Тĕслĕхсем пĕр ывăç. Енчен те майне-шывне шыраса тупсан? Анюка шăрçалăх кăна мар, пĕтĕм çĕршыв валли — çынсене те, хуçалăха та питех те

кирлĕ материалсем — алмазсем туса тултарĕ вăл...

Хĕвел питтинчи сăрт аякĕ. Чул палăк. Ун умĕнче шухăша путнă ача. Нимĕн те илтмест вăл... Хĕвел пĕçертет. Çил çырă çӳçне вĕлкĕштерет. Шкула кĕме чĕнекен шăнкăрав сасси те ахалех уншăн. Ĕмĕчĕпе вăл урăх çĕрте. Аваллăхра ăста тимĕрçĕпе пĕрле. Ун лаççинче пек...

* * *

...Лаç алăкĕн хушăкĕсенчен хĕвел çути вăйсăррăн сăрхăнса кĕрет. Çĕрĕпе куç хупман Ительмес чĕринче вăл хурлăхпа пĕрле шанчăк та çуратать. Кам вăл халь? Читлĕхри çын. Мĕн тăвăн, тăшман вăйлăрах пулчĕ. Пăлхарпа Сăвар, Чикетупа Мерчен хуласем вутра юлчĕç. Мĕн чухлĕ халăх пĕтрĕ. Мĕн чухлĕ асап тӳсрĕç тарса пытаннисем ку тăрăха çитиччен. Чăвашсемпе пĕрле мучарсем те пурччĕ. Ительмес пĕлет: унăн тимĕр тупри пур вырăна шыраса тупмалла, тимĕрçĕ лаççи уçса ĕç хатĕрĕсем тума тытăнмалла, ял пуçласа ямалла, çухатнă пурлăха çĕнĕрен пуçтармалла. Мул пухмалăх меслет те пĕлетха вăл. Ахаль кăмрăкранах хаклă йышши чул тухать, анчах ун çинчен систерме иртерех-ха. Вăрçă пырать. Пĕлсен вăрă-хурахсем вĕçтерсе çитĕç.

Меслечĕ вара ансат. Аслати курăкĕ кăна пултăр. Ун сĕткенне сăрхăнтарса илетĕн те савăта пĕр ывăç хăрăм пуçтарса яратăн. Е вĕтетнĕ кăмрăк. Лайăх пăтраштаратăн та пĕр



И-44168
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

эрнелĕхе хупса лартатăн. Вара курăн. Савăта ӳпĕнтерсен шăкăртах тухса ӳкĕç ывăçа кăмрăк катăкĕсем. Никам та шутламĕ мул тесе. Шалта вара... аслати курăкĕ кăна пултăр...

Шухăша путнă ача ялт хускалса илчĕ. Кам пăшăлтатса каласа пачĕ ăна Ительмес тимĕрçĕ çинчен? Ун-кун пăхкаларĕ Якур. Çил ачисем мар пулĕ те? Е Мăнту? Арçын ача арпашса кайнă çӳçне аллипе пĕр еннелле шăлса якатрĕ те çĕр çине выртрĕ, сывлама чарăнсах Мăнтăва итлеме тытăнчĕ... Чанк-чанк! илтĕнет пек. Те чĕре тапать, те сас. Калама хĕн. Ним тума аптранă ача палăк тавра темиçе хутчен хăвăрт утса çаврăнчĕ. Нумайччен ял çине пăхса тăчĕ. Ун чунĕнче çĕкленӳ. Тупĕ вăл! Пурне те шыраса тупĕ! Аттесем çухатнă аслати курăкне те, асаттесем ăслăланă меслете те.

Çунат хушса чупса анчĕ Якур сăртран. Умра — çырма тĕпне пытаннă ял, çӳлерех — тăван шкул, тата çӳлерех — чул палăк. Каллех шăнкăрав сасси...

# *Ялти ҫăтмах*

**Фантастикăллă повесть**



## Тĕлĕк

...Ванюка тĕлĕк тĕлленет. Вăл Тибета, авалхи аслашшĕсем патне, кайнă пек. Йĕри-тавра — Ҫĕр пуҫланса кайнă вăхăтрисемех пуль — ҫӳллĕ-ҫӳллĕ тусем. Каччă хăй те питĕ ҫӳлте. Кунта хĕвел янкăр ҫутатать. Тӳпе кăн-кăвак. Ту тăррисем шап-шурă. Вĕсен тăрринчи ӳкерчĕк нихăҫан та улшăнмасть тейĕн.

Ванюк та хăйне пĕчĕк ту пек туйма пуҫларĕ, мĕн-ма тесен йĕри-тавра тусемсĕр пуҫне урăх ним те ҫук.

Чулсенчен такăна-такăна утса пырать каччă. Пушмакĕ ҫĕтĕлсе пĕтнĕпе пĕрех ун, чул ată-пушмака ҫиет. Эх, шел, вĕсене кукамми илсе панăччĕ. Кунта чаплă пушмак тупса тăхăнаймăн...

Хырăмĕ те выҫрĕ ачан... Ăҫта-ши кукамми кăмакаран тин ҫеҫ пĕҫерсе кăларнă тутлă-тутлă шăршăллă ҫăкăр... Выҫăпа асапланса ҫитнĕ ача аллипе хырăмне сăтăркаласа илчĕ, шăтса пĕтнĕ пушмак пусĕнчен тухса тăракан ура пӳрнисене пытарчĕ. Ара, чул ҫине лексе ним те мар урана ыраттарма пулать.

Вара çак ту хушăкĕнчен хăтăлса тухаймĕ вăл. Ашшĕпе амăшне те, Нинука та тек кураймĕ. Ун юратнă хĕрĕ Нина пит хитре. Хĕр сăн ӳкерчĕкне каччă хĕвĕнчех чиксе çӳрет. Тепĕр чухне кăларса пăхать те вара, чĕри хаваслăн тапма пуçлать.

Халĕ те акă чăтаймарĕ Ванюк, ал тупанĕ çине вырнаçакан пĕчĕк сăн ӳкерчĕке кăларса пăхрĕ. Хĕр, чăн та, ытла хитре, куç илеймĕн. Каччă чĕри тунсăхпа тулчĕ. Ах, миçе хут тĕл пулман-ши Ванюкпа Нинук хурăн айĕнче!

Çапла асаилӳсемпе сĕмленсе, савăнса пыракан ача куçа курăнми сукмак çине тухса тăнине сисмерĕ те. Çул турри хăй илсе тухрĕ пуль. Такăнас мар тесе пуçне çĕклемесĕр утса пыракан Ванюк сасартăках йывăç çине пырса çапăнчĕ. Йывăçах та мар пек, типсе ларнă. Пĕчĕккĕ хăй... Çулçă вырăнне тем чухлĕ тĕрлĕ тĕслĕ хăюсем çакса тултарнă ун çине. Çавăнпа-ши хайхискер авалхи Киремет йывăçне асилтерет...

Ташкилтре те çавăн пек йывăç пурччĕ. Унта пурăнакансем паянхи кунччenех авалхи чăваш тĕнне тытса пыраççĕ. Вĕсен масарĕ те расна. Вилтăприсем çинче хĕрессем мар, çак ту хушшинчи пек шурă-шурă чулсем мăнаçлăн выртаççĕ. Ванюкăн тăван ялĕнче те, Мишерте, çавăн пек масар пулнă теççĕ. Пĕррехинче унти кĕмĕл çĕрре пĕр хĕр тупса тăхăннă тет те... хĕне кайса вилнĕ тет...

Самантрах ача куçĕ тем чухлĕ ӳкерчĕк

умне тухса вӗлтлетсе илчӗ. Ҫук, хӑрас-тӑвасси пулмарӗ ун. Мӗн хӑрамалли пур?! Кун пеккине кӑна курман вӑл! Тӗпсӗр кӳлӗ тесенех кашни ҫыннӑн сехри хӑпать! Ванюк вара... унта темиҫе те пулнӑ.

Ҫапла хастарланса тӑракан ача йывӑҫ ҫине тинкеререх пӑхрӗ те, ах турах, ун ҫумне сӗвенсе ларнӑ шап-шур сухаллӑ старике курах кайрӗ. Сӳ-ӳ сӳлетсе илчӗ ача чӗри. Тин ҫеҫ никам та ҫукчӗ вӗт-ха унта! Ӑҫтан сиксе тухрӗ ку ват ҫын? Йӑвашшӑн пӑхать хӑй, пӗр сӑмах та чӗнмест. Ахӑртнех, ача хӑраса ан ӳктӗр тет, вӑл мӗн тӑвасса кӗтет.

Ванюк вара хӑраса тӑраканни мар, ватӑ енне пӗр утӑм ярса пусрӗ те кӗххӗм-кӗххӗм! тукаласа илчӗ. Чим-ха, ун пек чӑхӑмласа мар, вӑл чӑнласах салам пултӑр тесе каласшӑнччӗ вӗт-ха. Халь вара чӗлхе ҫыхланнипе ача ним калама аптраса тӑчӗ.

Чике сухаллӑ старик ҫакна сисрӗ пулас, хӑй те чисти ача пекех кӗххӗм-кӗххӗм! ӳсӗркелесе сухалне шӑлса илчӗ. Сана та салам пултӑр терӗ пулас. Хаваслӑ тӗлпулушӑн иккӗшӗ те савӑнса кайрӗҫ, пӗр-пӗрин пирки ыйтса пӗлме тытӑнчӗҫ.

Старик Каткей ятлӑ-мӗн. Таҫта илтнӗ пек. Ванюк чӗринче тахҫантанпах упранать ку ят. Анчах ӑҫтан илтнине тӳрех ӑнланса илеймерӗ-ха ача. Старик кунта виҫ ҫӗр ҫул ытла пурӑнать-мӗн. Ҫын ҫапла вӑрӑм ӗмӗрлӗ пулни Ванюка пӗрре те тӗлӗнтермерӗ. Вӑл хӑй те ҫӗр ҫула ҫитесшӗн. Вӗсен йӑхӗнче пурте нумай пурӑннӑ теҫҫӗ.

Чим-ха, Мишер ялне пуҫарса яракан ҫын мар-и-ха ку, Каткей текенскер? Шкулта каланӑччӗ. Ҫӗвӗҫ Хӗветри, е урӑхла каласан биологи учителӗ Хӗветӗр Хилипчӑ, каланӑччӗ. Акӑ ӑҫтан пӗлет вӑл ку ята! Каткей — Ванюксен ялне пуҫарса яракан! Унӑн вун икӗ ывӑл пулнӑ тет. Апла Ванюк та ун пра-прамӑнукӗ!

— Каткей тете, эсир кунта мӗн туса ларатӑр?! — кӑшкӑрса ячӗ Ванюк хӑй тӗлӗннине пытараймасӑр. — Эсир тахҫанах вилнӗ вӗт-ха!

— Ҫук вара, — кулкаларӗ мучи, — эпӗ, хӑвах ӑнланса илтӗн авӑ, сан юнра, мӑнукӑм. Эпӗ нихӑҫан та вилес ҫук. Эсӗ те нумай-нумай ҫул пурӑнӑн. Акӑ ҫак пан улмине ҫисе пӑх-ха, мӗн тути калӗ вӑл сана.

Ванюк умӗнчи лутра йывӑҫ тем самантра шӗлтӗртетсе илчӗ те, куҫа ҫулҫӑсем хушшине пытаннӑ улмасем курӑнса кайрӗҫ. Килти пахчара ӳсекеннисем пекех сукмак хӗрринчи улмасем... Ҫил кӑшт килсе ҫапсассӑнах кӑлтӑр-кӑлтӑр кусса анса каятчӗҫ пахчари татӑлса ӳкнӗ улмасем сукмак тӑрӑх. Ванюк ҫав улмуҫҫи айӗнче ҫуллахи ӑшӑ кунсенче ӗмӗтленсе ларма юрататчӗ. Тепӗр чухне тӗлӗрсех каятчӗ. Ун чухне телейлӗччӗ вӑл, ӑна ним те кирлӗ марччӗ, ӗмӗчӗпе таҫта ҫити вӗҫсе каятчӗ. Кӑвак тӳпери шурӑ пӗлӗтсенче тем тӗрлӗ чӗр чунсем куратчӗ, вӗсемпе калаҫатчӗ...

Халь ав ҫав улмуҫҫин пӗр улми каллех ал тупанӗ ҫинче. Тутлӑ шӑршӑ сӑмсана кӑтӑклать...

— Çи, — тет хайхи асамçă.

Каткей асамçă пулнине Ванюк тӳрех ăнланса илчĕ-ха, анчах вăл сĕннĕ пан улмине çиме те юрать, те юрамасть... Çи тет. Çисен пурнăç чăнлăхне пĕлĕн.

Кун пек каласан тӳрех пурнăç йывăççи аса килчĕ. Ай, тин тĕшмĕртрĕ ача ку мĕн йывăççи пулнине! Ăна Турă çынсенчен çак тусем хушшине пытарнă пулас та, халь вара унăн çимĕçне Ванюкăн тутанса пăхмалла-им? Арçын ача хăраса кайрĕ. Ку пан улмине çисен вăл ырăпа усала уйăрма тытăнĕ. Усалĕ вара кĕттермĕ, час килсе çапĕ. Ырри куçа та курăнмĕ...

— Çи, — тет ача тăхтаса тăнине сиснĕ старик. — Çи, ан хăра. Ăна çисен эсĕ хăватлă пулăн. Темле йывăрлăх килсе тухсан та тăван çĕре пăрахмăн, унтах çăтмахри пек ырлăх туса хурăн та нумай çул ача-пăчаллă пурăнăн.

Чăн та, Ванюк та çапла шутлать мар-и-ха? Мишер ялне вăл тахçанах çăтмах пек курать. Биологи учителĕ ăна çапла курма вĕрентнĕ. Кунта эпир çăтмах туса хурăпăр тетчĕ. Ачасем кулатчĕç куна илтсен, çăтмах туса хурсан аванччĕ тетчĕç.

Акă халĕ мĕн тăвăпăр-ха? Ĕненĕпĕр-и çав халаплă ĕмĕте е çук? Эх, чăнласах çапла килсе тухсан мĕнле лайăх пулнă пулĕччĕ те çав...

Ача куçĕ умне тулли шывлă çырма, юнашарах ешерекен улма-çырлаллă садсем тухса тăчĕç... Уйра тыр-пул ӳсет, вăрманта кайăк-

кӗшӗк юрлать. Ялта вара — урам тулли ачапӑча сасси. Ванюк ачасене пит юрататать. Пиччӗшӗ-шӑллӗ ҫук пирки хуларан канма килекен Антонпа питӗ туслӑ, ӑна ял пурнӑҫне хӑнӑхтарать.

Ҫак ӳкерчӗк хавхалантарчӗ пулӗ Ванюка, кап ҫыртса илчӗ тахҫантанпах алӑ лаппи ҫинче сӗтекӗпе илӗртсе выртакан пан улмине. Ача вӑранчӗ...

Тусем те мар иккен кунта. Ванюк килти пахчарах, сукмак хӗрринчи улмуҫҫи айӗнче, выртать. Аллинче — ҫыртӑк. Те чӑнласа пулчӗ ку пӗтӗмпех, те тӗлӗк тесе шутларӗ ача аллинчи пан улмине ҫавӑркаласа.

Ҫав вӑхӑтра ӑна ҫурӑмран такам ҫемҫен кӑна кӑлт тӗкрӗ. Унтан кӑлтӑртаттарсах кулса ячӗ. Нинук-мӗн. Хӗр каччӑн аллинчи пан улмине ярса илсе шатӑрт ҫыртрӗ... Тем пулчӗ. Вӑл пӗрре шурса, тепре хӗрелсе кайрӗ. Унтан тата хытӑрах кӑлтӑртаттарса кулса ячӗ те сукмак тӑрӑх аналла чупса анса кайрӗ.

Каччӑ та хӗр хыҫҫӑн ыткӑнчӗ. Халь иккӗн тан ӗрӗхтерсе пыраҫҫӗ. Мӗнле хитре иккен вӑл ҫамрӑклӑх тени! Каччӑ хӗре хӑваласа ҫитрӗ те ҫӗклесе илсе хӑй тавра темиҫе хутчен ҫавӑрчӗ. Унтан Ванюк ӑна тем самантра чӑпӑрт тутарса чуптуса илчӗ. Халь вӑл хӑй те хӗр пекех пӗр шуралса, пӗр хӗрелсе кайрӗ. Пӗр-пӗрне куҫран пӑхаймаҫҫӗ пулин те, иккӗшӗ те питӗ телейлӗ курӑнаҫҫӗ. Темле кулӑшла саманта туйса хавхаланнӑскерсем ахӑрсах кулса ячӗҫ. Халь тин кулма та юрать ӗнтӗ. Ҫав пан улми хавхалантарчӗ тем! Хӗр

аллинчех-ха вăл, мур илесшĕ! Çавра çыртăка хĕр тепĕр хут шатăрт çеç çыртса илчĕ. Питĕ тутлă пулчĕ пулинех, каллех кăлтăртаттарса кулса ячĕ те çыртăка каччăна сĕнчĕ. Ванюк та пĕр шутласа тăмасăрах татах та татах çыртса илчĕ. Пан улмирен ним те хăвармарĕ. Вăрри-мĕнĕпех çисе ячĕ. Халь тин тутă тесен те юрать. Унтан каччăпа хĕр çырма тăрăх шăкăл-шăкăл калаçса анса кайрĕç.

Вĕсене улмуççи курса ăсатрĕ. Акă каччăпа хĕр вĕлтрен пусса илнĕ çыр хĕрне çитрĕç те шыв урлă каçма тытăнчĕç. Çырма урлă çил йăвантраса янă ватă йăмра выртать. Вăл калама çук питĕ пысăк, виçĕ хăлаçа та кĕрес çук. Ванюк аслашшĕ лартниех. Сарлака пулсан та каçнă чухне вулли силленет.

Тарăн çырмана халь-халь персе анас пек пыраççĕ аллăран-алă тытăннă каччăпа хĕр. Çапах хушăран кулни илтĕнет. Шыва ӳкесрен шикленеççĕ пулинех. Акă вĕçне çитсен чупса тенĕ пек кайрĕç те йăлт-ялт сиксе анчĕç çыран тепĕр енне. Йăмра вулли вĕсем хыççăн силленсе юлчĕ. Çил килсе çапрĕ-и, улмуççи те тайăлса илчĕ. Улма ӳкрĕ. Кăлтăр-кăлтăр кусса кайрĕ вăл сукмак тăрăх çырма еннелле...

## Тĕпсĕр кӳлĕ

Çуллахи каникул хăвăрт иртет. Ванюкпа Нинук кашни кун шкула васкаççĕ, мĕн-ма тесен вĕсен унта биологи учителĕ йĕркеленĕ сăнав станцийĕ пур. Ачасене çĕр уйăрса панă.

Çав çĕр çинче кашни шкул ачи хăй кăмăлланӑ пахча çимĕç ӳстерет. Кăçал тăххăрмĕш классен биологипе экзамен тытмалла. Ăт çав экзаменра мĕнле паллă илесси пĕтĕмпех çак йăрантан, ун çинче мĕнле ĕçленинчен килет.

Хĕветĕр Хилипчă ялран çăтмах туса хурасшăн, çавна пула мар-и халь ачасен те çав ырлăх пирки шутлама тивет. Ванюк ăна темшĕн ял тавра мар, пачах урăх çĕрте — икĕ çырма пусĕнчи Тĕпсĕр кӳлĕ патĕнче — курать. Мĕн-ма тесен каччă унта темиçе хутчен те кĕтӳ кĕтнĕ, тапăра аннă, выртса каннă, вылянă, малашлăх пирки ĕмĕтленнĕ. Вырăнĕ те калама çук илемлĕ. Сăртра — ката. Унта хурăнĕ, хырĕ, чăрăшĕ, акаци — йăлт пĕрле ларса тухнă. Кăшт утсан юнашарах вăрман. Вăл пысăк. Хир сыснисем тĕл пулаççĕ. Çăлкуçĕ вара, пăхса выртатăн та, пăл-л-пăл-л туса тапса выртать. Мĕнле вăй пĕр вĕçĕмсĕр тапса тăрать-ха — куна никам та пĕлмест. Хĕветĕр Хилипчă та чухласа илеймест. Ванюк çеç тавçăрать. Шалта-шалта, çĕр ăшĕнче, пурнăç пур, çавăнпа сывлать.

Пулли тесен вара кунта кĕшĕл ишет! Алла йывăç тымарĕн çăрарах вырăнĕсене чиксе яратăн та, пĕр ывăç çырма пулли туртса кăларатăн. Ку та тĕлĕнтерет, мĕншĕн тесен ытти çырмасенче ун пек мар. Пулă тени халь ниçтах та çук. Кунта вара...

Нинукăн та хăйĕн ĕмĕчĕ пур. Хĕр ача çав çăтмах тенине темшĕн ял çырминче курать. Мишер çырми ахаль те пит хитре. Вăл çи-

рёклё, йăмраллă, курăклă, вёлтренлё те! Анчах юлашки çулсенче çырмана тем те пёр тăкса тултарчёç. Ку Нинука пит тарăхтарать. Хăй вăл ниçта та нимле çӳп-çап та пăрахмасть. Кун пеккине хёр ача «Таса çёр» операци тет. Енчен те кам та пулин пёр пёчёк спичка кăна пăрахнă пултăр, çавна çёр курать пулать — асап кăтартать. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă тенё пек, çёр, ун шучёпе, пётёмпех курать, çыннăн кашни хусканăвне сыхласа тăрать. Çавăнпа та Нинука çак Мишер çырми чёрё пек курăнать. Чăн та, асамлă юмахри çёлен евёр авкаланса выртать мар-иха вăл, чун юратнă çырма! Мён чухлё çăмхалла выляман пуль унта, шыва кёмен, сурăхёне кётмен...

Çуркуннепе кётӳ тухиччен ял çыннисем килти выльăха çырмана кăларатчёç. Çав çырмара курăкё те маларах тухатчё, çăрарахчё тата. Енчен те Мишер çырми тăрăх йăмрасем кăна мар, чечексем те лартса тухсан, кирлё çёрте пёвесем пёвелесен епле аван пулёччё. Çын çӳремелёх тротуарсем хывсан вара атăпа мар, çӳллё кёлеллё пушмаксемпе те шаклаттарса çӳреме май килё. Çӳресен-çӳресен ларса канмалăх беседкăсем туса лартсан... Вара вăл чăнласах çăтмах вырăн пулса тăрё.

Çапларах ёмётленсе ёçлеççё хёрпе каччă. Йăранёсем юнашарах та, чунёсем савăк. Акă вёсем ытти ачасенчен маларах çумласа тухрёç те канма тесе юнашар вырнаçса ларчёç. Каччă хёре ытама çавăрса илчё. Унтан са-

сартăках Нинука хăй çумне туртса илчĕ те чуптума тăчĕ. Хĕр хăраса ӳкрĕ: тантăшсем курсан тем калĕç. Анчах пурте пуçĕсене пĕкнĕ, çум çумлаççĕ.

Çав самантра пуç çĕклеми ĕçлекен ачасем патне çывхарса килекен биологи учителĕ курăнса кайрĕ. Хăй тĕллĕн тем мăкăртатса пырать пулас. Ял çыннисем тепĕр чухне ун пирки ăсран тайăлнă тесе те калаççĕ. Çав çăтмах тăвас тениех пĕтерет ăна, ăсран кăларать. Ун пек тĕллев, чăн та, тепĕр çын пуçне пырса кĕрес те çук. Кунта темле кăшт ухмах пулни кирлĕ. Ăт çавăн пек ăсран кăшт тайăлнă çын вăл Хĕветĕр Хилипчă.

— Çумласа пĕтерсенех Икĕ çырма пуçне лартнă хунавсене сыхлама каятпăр, — терĕ учитель. — Ĕнер такамсем каллех кĕтӳ кĕртсе янă, чылай йывăça пĕтернĕ.

— Каяс, — килĕшрĕ Ванюк вĕрентекен шухăшĕ хăйĕннипе пĕр килнишĕн савăнса. — Вăл кĕтӳçе лекет-ха пĕрре, — терĕ чышкисене чăмăртаса.

— Çук, — калаçăва хутшăнчĕ Нинук, — ун пек юрамасть. Эпĕ унпа, Тулай Иванĕпе, хам калаçса пăхатăп. Вăл ман тăван вĕт. Кĕтӳçĕ эпир мĕн тунине ăнланмасть, ача-пăча вăйăйи тет. Кĕтӳ çӳретмелли вырăн хăвармастăр тет. Ара, чăн та, çырма тăршшĕпе йывăç лартса тухсан выльăхсене ăçта çӳретĕпĕр-ха эпир.

Хĕр ачапа пĕрле ыттисем те шухăша кайрĕç. Ĕлĕкрех Самать патĕнче шăварса курăк

ӳстермелли уй пулнине те астăваççĕ-ха вĕсем, çав таса уй мĕншĕн пĕтнине кăна ăнланмаççĕ. Пĕтерекенĕсем пулнă-çке. Такамсем уй шăвармалли пăрăхсене вăрласа кайнă. Ачасем лартнă йывăççене пĕтерекенсемех мар-ши вĕсем, çав çынсем?

— Выльăх çӳретмелли вырăн та тăвăпăр. Ятарлă çаран уçăпăр. Шурта акă, сăмахран, курăк шăвармасăрах лайăх ӳсет. Шывне кăна кăшт типĕтмелле. Ирригаци теççĕ-и-ха?

— Тĕрĕс, — ырларĕ ку шухăша учитель. — Халĕ вара хунав сыхлама каятпăр.

Пĕр ушкăн ача çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, Икĕ çырма пуçĕ еннелле самантрах тухса вĕçтерчĕ. Унта пĕве вĕт-ха! Эх, шыва кĕретпĕр, тытмалла вылятпăр тесе шутлать кашни. Çăвĕ те кăçал пит шăрăх тăрать. Хӳтлĕхне шыва чăмса кăна тупма пулать пек туйăнать.

Калас пулать, Икĕ çырма пуçĕ патне çитес тесен Сăхăт шывĕ урлă каçмалла, Тишле текен вырăнпа иртмелле. Вара тин пысăк пĕве патне çитсе тухатăн. Пĕви чăнах та пысăк. Унта Тĕпсĕр çăлкуç тапса тăрать, çавăнпа пуль шывĕ тап-таса.

Пĕр ушкăн ача чăтса тăраймарĕ — шыв патне çитеспе ĕрĕхтерсех чупса кайрĕ. Чупнăçемĕн хăшĕ-пĕри кĕпи-йĕмне салтса пычĕ, кам маларах çитсе шыва сикет теççĕ пулинех. Ванюк чи малта. Хĕрсем хыçаларах юлнă.

Чăмпăлт-чăмпăлт! риксе пĕтрĕç чупса çитнĕ çамрăксем пĕвене. Шыв çийĕн халь пĕр-

пӗрне тытмалла вылякан ачасен шӑй-шайӗ ҫеҫ илтӗнсе тӑрать. Куна таҫта аякка юлнӑ Хӗветӗр Хилипчӑ та илтет. Ача хыҫҫӑн ӑҫтан ӗлкӗрсе пырӑн?Васкать хӑй.

Ҫапах та учитель питӗ кӑмӑллӑ. Акӑ темиҫе ҫул вӑл ачасем пулӑшнипе Сӑхӑт тӑрӑх вӑрман ӳстерет. Икӗ ҫырма пусӗнче ку ӗҫ пушшех те ӑнассӑн туйӑнать. Анчах такамсем вӑрмана кӗрсе каяҫҫӗ те хунавсене йӑлт хуҫса тухаҫҫӗ. Тин ҫеҫ ӳссе вӑй илнӗ хурӑнсене милӗклӗх тесе касса йӑвантарса хӑвараҫҫӗ. Хамӑр ялсемех ӗнтӗ, урӑх кам пултӑр тесе шутлать ватӑ ҫын. Камне те чухлать. Тулай Иван тӑванӗсемех пуль, урӑх кам пултӑр. Ҫавсем Тулайран куҫса килнӗ, ку ял йӑли-йӗркине ниепле те йышӑнасшӑн мар. Малашне те кун пек пулсан, тен, каҫхине те хурала тухма тивет пуль тесе шутлать Хӗветӗр Хилипчӑ.

Учитель утса ҫитнӗ ҫӗре ачасем шыва кӗрсе те тухрӗҫ. Тӗпсӗр ҫӑлкуҫ тавра пуҫтарӑннӑ та ҫӳҫӗсене хӗвел ҫинче типӗтсе лараҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗри ӳпӗнсе чӗрӗ те сиплӗ шыва тутанса пӑхать.

— Ҫак шыва ӗҫекен паттӑр пулать тет, — пуҫларӗ хӑй илтнӗ юмаха Ванюк.

— Тетӗн хӳри кӗске тет, — пӳлчӗ ун шухӑшне Ҫтаппан. Хӗвеле хирӗҫ пӑхнипе ҫавра куҫӗ хӗсӗнсех ларнӑ хӑйӗн.

— Эпӗ ку халапа кӑна мар, шыв вӑйне те ӗненетӗп, ҫавӑнпа ӑна ӗҫетӗп, — терӗ Нинук та, пӗшкӗнсе пӗр ҫӑвар шыв сыпса илчӗ.

— Эпӗ вара пачах урӑхла халап илтнӗ, —

каллех пӳлчӗ Ҫтаппан. — Кам ку шыва ёҫет — качака пулать.

Ку шӳт пурне те килӗшрӗ. Ачасем ахӑлтатса кулса ячӗҫ те ҫӑлкуҫ хӗрне упаленсе пырса шыв ёҫрӗҫ, кулчӗҫ, савӑнчӗҫ, качака пек мекеклетрӗҫ. Шӑмпӑлт! тутарса Ҫтаппан аякрах та мар выртакан чула ҫӑлкуҫа пӑрахрӗ. Шыв тумламӗсемпе йӗпеннӗ ачасем чалт ҫеҫ айккинелле сиксе ӳкрӗҫ. Ҫтаппан ахӑрса ячӗ, анчах ачасене ку пӗрре те килӗшмерӗ курӑнать. Кушака кулӑ, шӑшие куҫҫуль тенӗ евӗр, Ҫтаппан ҫине пурте ун-кун пӑхкаласа илчӗҫ те сасартӑк ӑна пӗрле ярса илсе шыва печӗҫ.

Шывран шӑмпӑртаттарса тухаканскере курсан хальхинче ачасем ахӑрса кулса ячӗҫ. Пуринчен ытла Нинук кулли шӑнкӑрав сасси пек илтӗнет. Ванюк хӗр ҫине кӑшт тӗлӗнерех пӑхса илчӗ, ара, Ҫтаппан пӗрмай Нинук ҫумӗнче явкаланса ҫӳрет мар-и.

— Ну, эпӗ сире куншӑн тавӑратӑпах, — шӑл витӗр сӑрхӑнтарса каларӗ Ҫтаппан.

Ачасене ку тата ытларах ахӑрттарса ячӗ. Халӗ тин вӗсем пӳрне кӑтартсан та кулма хатӗр. Таса шыв ёҫсе вӑй пухнӑскерсем темле тӑшманпа та кӗрешме пултараҫҫӗ, ҫавӑнпа савӑнаҫҫӗ.

Ҫӑлкуҫ пӑтранса хуралса выртрӗ, анчах куна никам та асӑрхамарӗ.

Хӗветӗр Хилипчӑ ачасене лартса тухнӑ йывӑҫсем ҫумне тӑратса тухрӗ. Калас пулать, аякрах та мар ют ял кӗтӗвӗ ҫӳрет. Тулай Иванӗ те акӑ ҫырма тӑрӑх ҫаврӑнса ҫитӗ. Ял

кётёвё Сăхăт тăрăх çӳресе тăранса çитеймест, çавна пула кёртет те кётӳçё выльăха хунавсем патне, тăрантăр тет. Ку ăнланмалла, çапах та лартнă пур йывăçа упраса ӳстернё пулсан кунта тахçанах Сăхăт тăршшёпех вăрман кашласа лармалла. Халь вара вăрман вырăнне — çара çырма. Çу шăрăх тăрать те — пур-çук курăкё типсех кайнă. Çакна пёле тăркачах ачасем хăйсем лартса ӳстернё вăрмана никама та кёртесшён мар.

* * *

Хурала Нинук Ванюкпа пёрле лекрё. Каччăпа хёр пёр-пёрне килёштернине пётём ял пёлет.

Акă вăл çăтмах пусламăшё тесе шутларё Ванюк. Кашни хунав ăна пурнăç йывăççи пек курăнать кунта. Мён-ха вăл йывăç? Пёлётелле кармашакан туна тата хёвел еннелле туртăннă çулçăллă туратсем кăна тейён. Çапах та кунта темле вăрттăнлăх пур. Ахальтен мар-çке-ха халăх Киремет йывăççине пурнăç йывăççи вырăнне хурса пуççапнă. Тем пирки те шутласа пăхрё Ванюк. Юнашар утса пыракан Нинука хăй шухăшёсене калама вăтанчё, лешё кулса вилё терё. Çапах та пёр сăмах чёнмесёр пыма аван мар.

— Нинук, — темшён такам илтесрен хăранă пек пăшăлтатса ыйтрё Ванюк пёр пысăк йывăç тёлне çитсен, — Нинук, эсё çак йывăçсенче мён куратăн?

— Вёсем мана хăйсем тёллён пурăнма пултаракан чунсене аса илтереççё. Никамран

та ним те ыйтмаççĕ. Хăйсем вара çимĕçне те, сулхăнне те йăлтах пама хатĕр пире. Пурнăç пуçламăшĕ вăл йывăç, пурнăça тăсаканĕ. Тен, малашлăхĕ те!

— Каларăн та вара, — каçса кайсах кулчĕ Ванюк. — Апла ку тĕнчере çынсем те юлмĕç.

— Кун пек пурăнсан чăнах, тен, юлмĕç те. Мĕншĕн тесен çын хăй ларакан турата хăй касать, вара турачĕпе пĕрлех персе анать. Акă кур — мĕн туса хунă кунта!

Чăнах та, авă тин çеç паркаланса ӳссе çитнĕ çамрăк хурăна такам тĕпренех касса янă. Милĕклĕх пултăр тенĕ ĕнтĕ. Ешĕл турачĕсене иртнĕ. Хурăнăн тункати кăна тăрса юлнă.

Шухăша путнă ачасем йăвантарса янă хурăн туни çине пырса ларчĕç. Йывăçа шар кăтартакансене пĕр енчен ăнланма та пулать пек. Ара, Ванюк хăй те мунча хутсан лапка çине ларса мĕн вăйран кайиччен хурăн милĕкĕпе çапăнма юратать. Хурăн сиплĕ, сăваплă йывăç. Ахальтен-им пирĕн мăн асаттесем Çимĕк кунне çăва çинче ӳсекен йывăç милĕкпе çапăннă тет. Хальхи масарсем те йăлт хурăнлă. Милĕкне касмаççĕ çеç. Çылăх теççĕ пулас. Кунта вара юрать иккен! Ах, мур илесшĕсем!

Çапла шутласа ларчĕ икĕ çамрăк. Пуласлăх пирки ĕмĕтленчĕç. Мĕнле пурăнĕç вĕсем? Ванюк ашшĕ каланă тăрăх, тахçан Сăхăт тăршшĕпех вăрман ӳснĕ. Пĕр ĕмĕр тăршшĕнчех вĕт, асăрхăр, пирĕн асаттесем

çав вăрмана касса та пĕтернĕ. Макарсен йĕтемĕ патĕнче, Микки сăртĕнче, темиçе хăлаçлă юман ларнине Ванюк астăвать-ха. Халĕ вăл та çук. Такам касса кайнă. Хайхи хурăна та çĕрле, çын курман-çӳремен чух, килсе вакланă.

— Пирĕн йывăççене касакана çĕрле сыхламалла пулать, — сасартăках пĕлтерчĕ хăй шухăшне Ванюк. — Тухатпăр-и çĕрлехи хурала?

— Тухмасăр! — хаваспах килĕшрĕ Нинук. Килĕшессе килĕшрĕ те, амăшĕ çĕр хута хурала çамрăк каччăпа çӳреме ирĕк парĕ-и-ха?

Калас пулать, Нинукăн амăшĕ, Марье аппа, кăмăллă хĕрарăм. Хĕрĕшĕн питĕ пăшăрханать вăл, лешĕ каçпа килте çук чухне урама пĕрре кăна мар тухса пăхать. Çакна Нинук питĕ лайăх чухлать, çавăнпа каçа хирĕç урама тухас пулсан яланах систерет амăшне.

Пĕррехинче шкул ачисем кӳршĕ яла спектакль лартма кайнăччĕ. Хĕллесерен çапла ялтан яла концертсем кăтартса çӳретчĕç вĕсем. Ун чухне те асăрхануллă пулма хытарса каларĕ амăшĕ. Çав пулăма аса илчĕ Нинук. Хальхинче те пĕччен мар пулин те...

«Çук, — амантнă хурăн çине пăхса илчĕ Нинук, — хурăнсене пĕтме памастпăрах! Пурпĕрех хурала тухатăп».

* * *

Кĕтӳ янă хыççăн касхи апат кăшт-кашт çырткаларĕç те калаçса татăлнă пекех укăлча умĕнче тĕл пулчĕç Ванюкпа Нинук. Хĕр

ача амăшне кинона каятăп тесе каласа хăварчĕ. Вĕсемпе пĕрле тантăшĕсем те хурала тухрĕç.

Хăш вăхăтра тавралăха тĕттĕм чаршав карса илнине ачасем сиссе те юлаймарĕç. Вĕсем кăвайт чĕртес терĕç. Хăрăк туратсем пуçтарчĕç те канмалла Тĕпсĕр çăлкуç патнех пырса ларчĕç. Шăплăх хуçаланать кунта. Çанталăк тӳлек. Ванюк çăлкуç шывне ĕçес терĕ. Пĕрре мар асăрханă вăл: çак шыва ĕçсен вăй кĕрет. Хальхинче те ача хăйне паттăр пекех туйрĕ.

— Килччĕр кăна хурăн касма, — паттăрланчĕ вăл хĕр умĕнче, — эпĕ ăна часах тăн кĕртсе илетĕп.

— Çук, ун пек хăтланмастпăр, — килĕшмерĕ хĕр. — Эпир ăна ăнлантарса кăна парăпăр.

— Мĕн ăнлантарса парасшăн эсĕ çав хурăна шеллеме пĕлмен анкă-минкĕне? Вăл пурпĕрех нимĕн те ăнланмасть. Ăна, анрана, милĕк кирлĕ-мĕн! Кай та урăх çĕрте кас...

— Ăçта кастăр-ха вăл — «урăх çĕрте»? Урăххи ăçта тет?

— Чăн та, — шухăша кайрĕ ача. Ял йĕритавра урăх хурăн кати курăнмасть. Милĕкĕ чăнах та кирлĕ. Юрать-ха хурăнĕ Ванюксен картишĕнчех сарăлса ларать те — милĕкне килтен тухмасăрах темĕн чухлех хатĕрлеме пулать. Килте ку йывăç ӳсменнисен вара мĕн тумалла тет? — Акă мĕн, — терĕ каччă кĕтмен çĕртен, — вăрă текенскерне эпир милĕкне хамăр касса парăпăр!

— Мĕнле апла? — ăнланмарĕ хĕр.

— Ак çапла, — терĕ те каччă çумри пĕр хурăн тăррине йăпăр-япăр хăпарса кайрĕ. Хĕр тĕлĕнсе кăна пăхса тăчĕ. Часах ун умне милĕклĕх хуçнă хурăн турачĕсем персе анма тытăнчĕç. Нинук Ванюк иртнĕ туратсене пĕр çĕре купаласа пычĕ. Пĕр хурăнранах хĕл каçмалăх милĕк пулчĕ те!

Унтан милĕк хатĕрлесе ĕшеннĕ икĕ çамрăк канма тесе купа умне сĕвенчĕç те кашни хăй шухăшне шухăшларĕ. Тӳпери çăлтăрсем халь-халь татăлса анассăн ялтăраççĕ. Тен, ӳкеççĕ те пулĕ, анчах тулли уйăх çути тӳпене çавăрса илнĕ те, çăлтăр ӳкни курăнмасть. Ӳкме-и унта?! Ванюкпа Нинук çăлтăрĕ тӳперех-ха! Вăл сӳниччен нумай пурăнмалла...

Хурăн уйăх çутинче кĕмĕл тĕслĕ хĕр упраç пек курăнать. Уйăх сапса тăран çутă айĕнче çав хĕр шыва кĕрет пек. Асамлă шывĕ пуçĕнчен пуçласа шурă-шурă ури таранах йăпăртаттарса чупса анать те сасартăках йĕп чиксен те куç курман тĕттĕмре çухалать. Çак тĕлленчĕк каччăна антăхтарсах ярать.

Хĕр пуçĕнче те хурăн шухăшĕ. Анчах ăна урăхларах курать вăл. Хурăн ӳссе çитсен вутта каять. Хурăн вуттин çулăмĕ питĕ хĕрӳ. Пĕр тивсе кайсан кĕр-р! кăна хыпса илет. Хĕр чĕри те çапла. Ун чĕри вутри хурăн пек çунать, пурпĕрех ăна капла питĕ лайăх, канлĕ. Хĕл тăршшĕпе, çук, пурнăç тăршшĕпех чĕре ăшшипе çынсен кăмăлĕсене çемçетес килет. Çунать хĕр чĕри, çунать... Хăй мĕншĕн çапла хыпса çуннине ăнланса илеймест.

Çук, çут çанталӑк юрату пӑтине хӑватлӑн кӑна чӗренех çапса кӗртсе лартнӑ вӑхӑтра хӗрпе каччӑ кӑшт та пулин хускалмарӗç, çаплах шӑп пулчӗç. Халь тин ӗнтӗ вӗсем çак пӗрлӗхрен нихӑçан та уйрӑлмӗç, çут çанталӑкпа ялан пӗрле пулӗç.

Шатӑрт! илтӗнчӗ çав вӑхӑтра катара. Вӑрӑ! Вӑрӑ килнӗ. Çут çанталӑк илемӗпе киленсе ларакан ачасем самантрах тӑна кӗчӗç. Вӑшт сиксе тӑчӗç те сасӑ илтӗннӗ енне ыткӑнчӗç. Ун-кун шутлама вӑхӑт пулмарӗ. Сасартӑк тухрӗç Ванюкпа Нинук уйӑх çутиллӗ хурӑн уçланкине. Куна кӗтмен хура мӗлке пек курӑнакан арçын хӑранипе хутлансах ларчӗ. Хирӗç тӑма-и унта? Таçтан катаран сиксе тухнӑ ачасем арçынна хӑрушӑ тискер кайӑксем пекех курӑнчӗç пулӗ — аллинчи пуртти çӗре тухса ӳкрӗ.

— Руки вверх! — кӑшкӑрчӗ Ванюк арӑсланла. Хӑйне вӑл халь вӑрçӑри паттӑр пек туйрӗ.

— Кам пултӑн эс? — тӗпчерӗ хӗр питне аллисемпе хуплакан çынна. — Ан пытан, пурпӗрех палларӑмӑр сана, Тулай Иванне.

Ачасем ӑна хӑйсем паçӑр хатӗрленӗ милӗк купи патне илсе кайрӗç — лешӗ хирӗç тӑмарӗ. Хӑранипе хӑй халӗ те сиксе чӗтрерӗ. Ӑт сана хурӑн милӗкӗ! Чӗлхесӗр пулса юлатӑн вӗт.

Кӑшт сывлӑш çавӑрса илнӗ çын тин хӑй умӗнче камсем тӑнине уйӑрса илчӗ.

— Э-эй, мӗн эсир, мӗн туса çӳретӗр кунта? Хӑратса вӗлеретӗр вӗт.

— Хурӑн касакан тискер кайӑка тытма тухрӑмӑр. Акӑ лекрӗ те алла. Ыранах сана пӗтӗм халӑх умӗнче суд тӑватпӑр.

— Ун пек намӑс ан кӑтартӑрах! — тилмӗрчӗ Тулай Иванӗ. — Мунча кӗме милӗк хатӗрлес терӗм. Йывӑҫсем ҫӳллӗ ӳссе кайрӗҫ те — хӑпараймастӑп.

Ку тӗрӗс ӗнтӗ. Хурӑнсем хунав чухне ял ҫыннисем вӗсене милӗклӗх тесе иртсех тӑратчӗҫ. Ҫавна пулах пулӗ йывӑҫсем яштака ӳсрӗҫ. Халӗ вара, чӑн та, ешӗл вулӑсем ҫӳле кайнӑ...

— Итле-ха, Иван мучи, — терӗ мӗн тумаллине тавҫӑрса илнӗ ача, — эпир эсӗ килессе пӗле тӑркачах сана валли милӗклӗх хурӑн тураттисем касса хутӑмӑр. Акӑ ил. Малашне сана валли кӑна мар, ял ҫыннисем валли те хатӗрлӗпӗр. Пурте хӗл касмалӑх милӗклӗ пулччӑр. Эсӗ те, Иван мучи, сывлӑхлӑ пул!

— Тавах, тавах! — терӗ ним калама аптраса ӳкнӗ ватӑ ҫын. — Ҫапса пӑрахаҫҫӗ пулӗ тенӗччӗ. Ҫупкӑ вырӑнне ҫу ҫитереҫҫӗ иккен.

— Ай аван! — савӑнса кайрӗ Нинук та. Вӑл Ванюк ватӑ ҫынна кӳрентересрен шикленнӗччӗ. Тата Тулайсем хӗр ачана тӑван лекеҫҫӗ, ҫавӑнпа питӗ аван мар пулчӗ. — Атя эпир сана ӑсатсах ярар. Ан хӑра, милӗкӗсене те ҫӗклесе ҫитерсех парӑпӑр.

Ку шухӑш Ванюка та килӗшрӗ. Ватӑ ҫын чӗнмерӗ. Акӑ вӗсем виҫҫӗн катаран тухрӗҫ те уйӑх ҫутиллӗ сукмакпа ялалла танккарӗҫ. Ҫапла, танккарӗҫ темелле, мӗншӗн тесен ҫӗрле

уйăх çути пулсан та мĕлкеллĕ. Ланкашкасем курăнмаççĕ. Вĕсенче ура лăнках путать. Хыçалта пыракан Нинука çакă кулăшла пек курăнать. Анчах хĕр кулмасть. Ун пуçĕнче урăх шухăш.

Вăл хăйне хурăн пек туять. Ӳссе кайнă йывăç пек. Ун çине никам та хăпараймасть. Çынсем милĕк касма килеççĕ те ун-кун пăхкаласа тăраççĕ. Ешĕл туратсем питĕ çӳллĕ пирки милĕк касаймасăрах каялла саланаççĕ. Хурăн та хурланать. Ял халăхне кăшт та пулин усă кӳрес килет. Анчах мĕнле майпа-ши? Чăнах тет хăй сисмесĕрех Ванюкпа Тулай Иванĕ хыççăн танкăлтатса пыракан хĕр. Йывăç вăррисене ытларах та аяккарах вĕçтермелле çеç. Вара кашни çул çĕнĕ пĕчĕк хурăнсем шăтса тухĕç, ӳснĕçемĕн милĕк касмалăх пулĕç.

— Çапла, çапла, — сасăпах каласа ячĕ ĕмĕтленсе пыракан Нинук, — ӳснĕ хурăнсемпе юнашар тепĕр хурăн кати ӳстермелле. Илтетĕр-и?

Малта пыракансем тăп чарăнчĕç. Илтмесĕр. Каçхи шăплăхра шăппăн каласан та илтĕнет.

— Чăн та, — килĕшрĕ Ванюк, хăй те çак ыйту пирки пуçне ватаканскер. — Кĕркунне хурăн вăрри пуçтарăпăр та Сăхăт тăршшĕпе тепĕр ката ӳсмелĕх акăпăр. Тепĕр çул та, тата тепринче те...

— Пĕрисем ватăлса çитнĕ çĕре теприсем кăтраланса ӳссе пырĕç, — хăй савăнăçне пытараймарĕ хĕр. Унтан кăлтăр-кăлтăр кулса

ячĕ. Каçхи шăплăхра кулă та тĕлĕнмелле асамлă илтĕнет.

Ку ĕмĕте çамрăксем çеç ĕненеççĕ пулĕ çав, ватти каллех мăкăртатса илчĕ:

— Тем çав, тем çав. Ун пек пулсан аванччĕ те... Выльăхсем таптаса пĕтереççĕ пуль.

— Выльăхсем мар, çынсем пĕтереççĕ! — хĕрӳленчĕ каччă. — Хăшĕ-пĕри вĕсенчен те, тен...

— Тавлашмастпăр, — калаçăва хутшăнчĕ хĕр ача. — Мĕн тăвас тенине пурпĕрех пурнăçлатпăр. Пирĕн таврара та çăтмахри пек пулĕ. Мишерпе Сăхăт тăрăх садсемпе катасем ӳссе ларĕç. Пĕвесенче çап-çутă пулăсем ишĕç. Пĕве хыçĕнче — пĕчĕк гидроэлектростанцисем. Утса уçăлса çӳремелĕх сукмаксем пулĕç, çул ик айккипе чечексем, ларса канмалăх тенкелсем...

— Сем-сем-сем! — лĕхлетсех кулса ячĕ мучи. — Кун пек пулсан вара ĕçлеме те кирлĕ мар. Çăтмахри пек ĕçсе-çисе çеç пурăн.

— Ха! — чăтаймасăр кулса ячĕç çамрăксем. — Ĕçле-ĕçле çи!

Ха! илтĕнчĕ Сăхăт çырминче ахрăм сасси. Ахăртнех, вăл та çамрăксемпе пĕр шухăшлă пулчĕ.

...Çимĕк хыççăнах шкул ачисем биологи учителĕ ертсе пынипе пĕтĕм ял халăхне хурăн милĕк касса пачĕç те Акатуйне хатĕрленме тытăнчĕç. Тĕпсĕр кӳлĕ патĕнчи хурăн кати шакла пуçлă ларса юлчĕ. Çавă питĕ пулăшрĕ те ăна. Унсăрăн...

## Çил-тăвăл

Акатуй тесен ват карчăк та хускалнă тет. Аслă классенче вĕренекенсем Сăхăтпуç вăрманне ушкăнпа кайрĕç. Нимех те çук пек ĕнтĕ унта, çав вăрманта, анчах... Ахальтен мар çак вăййа чăтăмсăррăн кĕтеççĕ çамрăксем. Ĕлĕк Акатуйра вăй виçнĕ, ухăран пенĕ. Халĕ лаша чуптараççĕ е вăй виçмелле кĕрешеççĕ. Волейбол тесен кашни çулах ялпа ял выляççĕ. Ванюк та Мишер ял командинче. Мишерсем ку вăййăра нихăçан та маххă паман. Хальхинче те çаплах килсе тухрĕ — Ванюк команди çĕнтерчĕ. Ярмăрккăра кăшт çӳренĕ хыççăн çĕнтерĕве уявлама Тĕпсĕр çăлкуç патне каяс терĕç. Унтах пĕве пур, хăтлă, уçă...

Уявласси-мĕнĕ, çанталăкĕ тӳсме çук шăрăх, çавăнпа шыва кĕрсе рехетленес терĕç.

Хĕвел çинче хĕртĕнсе выртакансксерсем сасартăк тем шăхăрнине илтрĕç. Тĕлĕрсе кайма пуçланă Ванюк куçне уçрĕ те — ав еплерех ӳкерчĕк курăнчĕ ăна.

Тĕпсĕр çăлкуç çийĕн тĕтĕм евĕр япала çăмăллăн кăна çаврăнма пуçларĕ те шăхăрнă пек сас кăларса хăпарса кайрĕ. Ачасем те илтрĕç çак сасса. Самолет вĕçет пулĕ тесе пуçĕсене çӳлелле çĕклесе пăхрĕç. Ним те курăнмарĕ. Лăпланчĕç. Ванюк та тин çеç мĕн курнине пуçа илмерĕ. Куçĕ ун Нинук куçĕпе тĕл пулчĕ. Яшт тирсе илчĕ каччă чĕри. Хĕр куçĕ Тĕпсĕр çăлкуç пек тарăн та таса. Пăхнăçем пăхас килет. Кĕлетки те Нинукăн

яштака, гимнасткăнни пекех. Шыва кĕмелли костюмпа çеç тăрса юлнă хĕр каччă хăйне тилмĕрсе сăнанине аванах туйрĕ, анчах кăмăлне ниепле те палăртмарĕ. Савăк ăна. Намăс та мар. Мĕн намăсĕ? Мĕн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ-çке вĕсем. Пĕрле вылянă, ĕçленĕ, апат çинĕ. Яланах пĕрле пулнă, анчах хĕр çапла хитреленсе кайнине асăрхаман Ванюк. Кăкăрĕ тата, епле мăкăрăлса тăрать! Çакна курчĕ те каччă аванмарланса кайрĕ. Юрамасть кун пек тимлĕ сăнама. Хĕр кӳренме пултарать.

Акатуй кунĕ питĕ лăпкă, шăрăх тăрать. Кăнтăрла та иртрĕ, киле каймалла. Тата тепĕр хут шыва кĕрсе тухас-и тесе шутласа тăракан Ванюк сасартăк вăрман хыçĕнчен хура пĕлĕт хăвăрттăн шуса килнине курчĕ те тăп чарăнса тăчĕ. Çав вăхăтрах шăплăха çурса тем шăхăрса ячĕ. Сивĕ сывлăш хумĕ килсе çапрĕ. Хурăн кати хашăл-л сывласа илчĕ те шăтăр-шатăр-р! хуçăлма тытăнчĕ. Куç курми тусан çĕкленчĕ.

— Выртăр, çĕр çине выртăр! — кăшкăрса ячĕ Ванюк. Хăй вара ăçталла тармаллине чухлаймасăр ун-кун чупкаларĕ. Ăçта-ши уçăрах вырăн тесе шырарĕ.

Шари! çухăрса ячĕç хĕрсем, ял еннеле тарма пикенчĕç. «Выртă!» — терĕ Нинука Ванюк, хĕре хăй çумне туртса антарчĕ. Çав вăхăтра çĕр çине выртман пулсан вĕсене вăрмантан вĕçсе килнĕ турат пырса çапатчĕ. Лап! ӳкрĕ тепĕр тем пысăкăш йывăç туратти хĕрпе каччăпа юнашарах. Лаштăр хупласа

хучӗ вӗсене. Самантлӑха тавралӑх шӑпланчӗ. Унччен те пулмарӗ аслати шартлаттарса кӗрлесе ячӗ те, витререн тӑкнӑ пек ҫумӑр ҫума пуҫларӗ. Ҫапса ҫӑвать, утма та памасть. Хӗрпе каччӑ хӳтлӗх шыраса пӗр хурӑн патне чупса кайрӗҫ. Усси ҫук. Турачӗсене милӗклӗх тесе иртнӗ хурӑн шыв ярать, ҫумӑртан хуплаймасть. Тата аслатиллӗ ҫумӑрта йывӑҫ айне тӑма хушмаҫҫӗ: аслати ҫапать.

Хурӑна ҫатӑр ыталаса илчӗ хӗр, ниепле те вӗҫертмерӗ. Каччӑ ӑна ҫумӑртан хӑй хӳттине илчӗ, ҫавӑнпа Нинук аптрамарӗ. Ҫил-тӑвӑллӑ ҫумӑр айӗнче вара пачах урӑхла. Витререн тӑкнӑ евӗр ҫӑвакан ҫумӑр стена пек курӑнать, никама та утма памасть. Хӗр вара, ҫил-тӑвӑл кӑмӑлне кайрӗ-ши, хавасланса тӑчӗ. Акӑ вӑл Ванюка тӗртсе ячӗ те ҫумӑр айне тухса ташлама пуҫларӗ. Пирӗшти пек хитре хӗр пӗр вӑхӑт вӗттӗн-вӗттӗн чупрӗ, унтан путек евӗр тринкки-тринкки сикрӗ.

Ванюк та чӑтса тӑраймарӗ, ӑмӑрт кайӑк тейӗн, хӗр тавра ҫаврӑнма тытӑнчӗ. Ку ташӑ калама ҫук хитре курӑнчӗ. Йывӑҫсем хыҫне пытанса тӑнӑ ытти ҫамрӑксем те уҫланкӑна сиксе тухрӗҫ те ҫумӑр лӳшкенине пӑхмасӑрах чӑваш ташши яра пачӗҫ. «Ӑт ку Акатуй тӑк Акатуй!» — шутларӗ кашниех. Ҫил-тӑвӑл мӗнле сиен кӳнине пӗлмерӗҫ-ха вӗсем. Ялта кашни ҫурт тӑрӑсӑр тӑрса юлнӑ, пӳрт умӗнчи йывӑҫсене, ҫутӑ юписене йӑлт йӑвантарнӑ, пралукӗсене татса пӗтернӗ. Анчах кун пирки хальлӗхе Тӗпсӗр ҫӑлкуҫ патӗнче таш-

лакансенчен пĕри те тĕшмĕртмерĕ. Çут çанталăк вăйĕ Акатуйпа пĕр килни çамрăксене савăнтарчĕ...

Пĕр уйăха яхăн тăрмашрĕ ял халăхĕ, пурпĕрех пĕтĕмпех юсаса пĕтерейменерĕ. Кашни киле çутă кĕртнĕ хыççăн, пӳрт тăррисене хупласан тин лăш пулчĕ. Каллех юратнă хурăн кати патĕнче пухăнчĕç ачасем. Хальхинче те Хĕветĕр Хилипчă пĕрле пычĕ.

— Тăвăл пирĕн таврара кăна çӳренĕ иккен. Юнашар ялсенче çил те çĕкленмен, — пуçларĕ хăй сăмахне учитель. — Çитменнине тата, пур çĕрте те шутсăр шăрăх тăрать, ниçтан пĕр пĕлĕт татки шуса килни çук. Çумăр кунĕнче те çаплаччĕ. Акатуй кунĕнче тӳпе янкăрччĕ вĕт!

— Янкăрччĕ, — терĕç ачасем вĕрентекен сăмаха ăçталла пăрнине тавçăраймасăр.

— Апла ку тăвăл пирĕн ял тăвăлĕ пулнă. Вăл пирĕн ялтан тухнă.

Ку шухăш ачасене аптратрĕ. Чăн та, таптаса тӳпере сасартăках çил-тăвăл çуралчĕ, вăйлă çумăр çурĕ. Ăçтан тупăнчĕ-ха вăл? Атлантика енчен нимле циклон та куçса килмен. Ытти ялсенче те çумăр çуман.

— Эль кӳллинчен тухнă пулĕ. Çавăнтан тухнă çумăр питĕ вăйлă пулать теççĕ, — тĕшмĕртрĕ Ванюк.

— Мĕн сӳпĕлтетен, — кулчĕ Çтаппан. — Тен, тата çак пĕчĕк çăлран тесе калăн?

Ачасем пурте кулса ячĕç.

— Ним кулăшли те çук кунта. Ку çăла

эпĕ тахçантанпах сăнатăп. Ахальли мар вăл. Тĕпсĕр çăл. Ёлĕк пирĕн ял çыннисем унта вĕрен ярса пăхнă тет. Тем чухлĕ ярсан та вĕçне çыхнă чул тĕпне çитеймен тет, — килĕшрĕ Ванюк шухăшĕпе вĕрентекен.

— Тетĕн хӳри кĕске тет, — каллех мăкăртатрĕ Çтаппан. — Учитель пулсан та темле халапсене ĕненетĕр хăвăр. Вĕсене каласа кăтартса пирĕн ăса пăтрататăр.

— Халап ахаль çуралмасть. Ун никĕсĕ пур. Çавна пĕлесшĕн эпĕ. Ăна тĕпчесе пĕлме вара пысăк пĕлӳ кирлĕ.

— Çумăрĕ ку, чăнах та, усалскер пулчĕ. Эль кӳллинченех тухрĕ пулĕ, — Ванюк шухăшĕпе Нинук та килĕшрĕ. — Пăр çапмарĕ пулин те, пĕтĕмпех тăвăл ватса-çĕмĕрсе пĕтерчĕ.

— Асăрхарăр-и эсир? — пӳлчĕ ăна Хĕветĕр Хилипчă. — Асăрхарăр-и?

— Мĕн? — харăссăн ыйтрĕç ачасем.

— Турачĕсене иртмен йывăççем кăна хуçăлнă. Çил вăйне хăйсем çине илнĕ вĕсем. Çара туратлисем чип-чипер лараççĕ.

— Авă ăçтан илтĕннĕ иккен шăхăрнă саcă! — шăхăрсах кăтартрĕ Çтаппан.

Ачасем кулса ячĕç.

— Кулă мар ку, — шухăша путрĕ учитель.

Ăна кура çамрăксем шăпланчĕç.

Ванюк та çил-тăвăл вăрттăнлăхĕ пирки шухăшларĕ. Çтаппан шăл йĕрни темшĕн куç умĕнчен каймасть, вăл çăлкуçа чул пăрахать пек. Тата тăвăл умĕн çăл çийĕн тем мăкăр-

ланнине астăвать ача. Мĕне пĕлтернĕ-ши ку? Тĕпсĕр çăлпа çыхăнман-ши тăвăл? Ку çăлкуç та ялтан пăхсан Эль кӳлли енчех. Тен, пирĕн ялти çăлкуç Эль кӳллипе çыхăннă? Калаççĕ-çке, ку халап паллах, Эль кӳлли Хура тинĕспе çыхăннă тесе. Кӳлĕ тĕпĕнчен карап ванчăкĕсем тухаççĕ пулать. Апла, тен...

— Тăвăл ниçтан та мар, Тĕпсĕр çăлкуçран тухнă! — саспах каларĕ хăй шухăшне ача.

Куна илтсен пĕрле вĕренекенсем тата хытăрах кулса ячĕç. Пуринчен ытла Çтаппан ахăрчĕ. Хырăмне тытсах йăваланчĕ.

— Ну, каларăн та вара эс! Ха-ха-ха! Çак юшкăнлă пĕчĕк çăлран çавăн чухлĕ шыв епле çĕклентĕр. Çилĕ тата! Йăлт хуçса пĕтерчĕ вĕт!

— Ненай çав, — иккĕленчĕ вĕрентекен те.

— Атьăр-ха, атьăр пырса пăхар çăлкуç патне, — сĕнчĕ Нинук. Темшĕн ăна Ванюк тĕрĕс калана пек туйăнчĕ.

Ачасем çавна çеç кĕтнĕ тейĕн. Пурте чупса тенĕ пек Тĕпсĕр çăлкуç патне пырса тăчĕç. Пычĕç те хăйсем мĕн курнинчен хăраса каялла чакрĕç. Юшкăнланнă пĕчĕк çăл вырăнĕнче тап-таса та çав вăхăтрах, питĕ тарăн пулнипе пуль, хуп-хуран курăнакан кӳлĕ выртать. Çийĕнче пĕчĕк хумсем кăтраланса выляççĕ. Шăп. Никам та пĕр сăмах та чĕнмест.

— Нивушлĕ чăнах та çак пĕчĕк çăлран тухрĕ тăвăллă çумăр? — шăппăн, темрен хăранăн каласрĕ Хĕветĕр Хилипчă.

— Апла ваттисем калани тӳрре тухать, —

терӗ Нинук. — Тепӗр чухне халăх сăмахне ӗненместпӗр эпир. Тӗшмӗш тетпӗр. Пирӗн ял çӗр кăвапи çине килсе ларнă тет. Парк çумӗнчех, чăн та, çӗр путнă вырăн пур.

— Кун пирки шутласа кӗрсе кайсан Çӗр аннемӗрӗн çамки те, çăварӗ те, кăкри те пур, — хӗр ача шухăшне малалла тăсрӗ Ванюк. — Микки сăртне выртса тăнласан çӗр чӗри таппине илтме пулать имӗш! Эх, шел, юлташăм Антон хуларан каникула килсе çитеймерӗ. Вăл географ, тем те пӗлет, мӗн те пулин хушса калатчех ӗнтӗ.

— Мӗнле килмен, килнӗ вăл! Сана курас тесе вара пӗрре те хыпса çунмасть, — йӗкӗлтешрӗ Çтаппан. Лешӗ аслашшӗпе пӗрле вите тăррине витнине те пӗлет, анчах шарламасть. — Эсир каланисем тӗрӗс пулсан Çӗр планета та чӗрӗ пек килсе тухать. Ăçтан чӗрӗ пултăр çак тăпра? — урипе çӗре тăлт! тапрӗ ашкăнчăк ача. Унтан тарăхса кайса ури айӗнчи чула илсе çӗр çине пӗтӗм вăйран печӗ. — Ку йăлтах чӗрӗ мар япала! Мӗн пултăр чӗрӗ марскерпе? Унпа эсӗ кирек мӗн ту — çӗршӗн пулсан пурпӗрех.

— Чӗрӗ мар тетӗн! Çавăнпа эсӗ ăна чулпа петӗн-и? Çӗре ыраттармасть терӗн-и? — Ванюк куçӗ умне каллех Çтаппан çăлкуçа тем пысăкăш чул пăрахни тухрӗ. Йăлт сирпӗтсе пӗтерчӗ ун чухне. — А-а! — сасартăк тӗшмӗртсе илчӗ ача. — Эсӗ мар-и-ха вăл çăла чулпа çапаканни! Çавна пула çилленчӗ вăл! Чӗрӗ мар пулать? Çӗр чӗрӗрен те чӗрӗ. Акă вăл хăй çиллине мӗнлерех кăтартрӗ!

Куна илтсен пурте хăраса-хăраса çăлран тата аяккарах чакса кайрĕç. Çтаппан тин çеç çĕре чулпа печĕ мар-и-ха? Акă çĕр çилленĕ те — пурне те çăтса ярĕ. Çĕр çăтнă ырăн кунта тесе калĕç вара кайран. Пĕр ушкăн ашкăнчăк ачасене çăтнă тейĕç.

Хăшĕ-пĕри ăçта тарса хăтăлма май килетши тесе ун-кун пăхкалама тытăнчĕ. Çав вăхăтра, çил çĕкленчĕ-ши, шăхăракан сасă илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ пĕр ушкăн ача, кашкăртан хăранă пек, ял еннелле тапса сикрĕ. «Эсир ăçта таратăр?» — тесе учитель кăшкăрнине те илтмерĕç вĕсем халь.

## Хула ачи

Антон ялти юлташĕсемпе тĕл пулас тесе хыпса çунчĕ пулсан та кăмăлне хытарсах аслашшĕ мĕн ыйтнине чунтан парăнса пурнăçларĕ. Епле-ха унсăр? Çил-тăвăл вите тăррине вистесе кайнă — ватă çын унта хăпараймасть. Антоншăн пулсан ку ним те мар. Сирсе пăрахнă хăмасене чылайăшне çапса тухрĕ те канма тесе вите тăрринех ларчĕ.

Кунтан, çӳлтен, инçете курăнать. Йĕри-тавра уй-хир, икĕ вăрман, Сăхăтпа Мишер шывĕсем. Тĕлĕнмелле хитре. Икĕ çырма пуçĕнче — ачасем лартнă вăрман. Анчах мĕн ку? Тĕпсĕр çăлкуç енчен пĕр ушкăн ача чупса тухрĕ те тусан кăларса яла кĕрсе тарчĕ. Нумай вăхăт иртрĕ-и — хапха умĕнче Антон тесе чĕннĕ сас илтĕнсе кайрĕ. Ку Ванюк пулчĕ. Юлташĕ патне чупса çитрĕ те пашкана ер-

нĕскер тем каласа ăнлантарма пикенчĕ. Анчах Антон та, аслашшĕ те ăна ăнланмарĕç.

— Çăл çătать! Çĕр çătать! — çине-çинех пĕлтерчĕ Ванюк.

— Мĕн, мĕн? Илтĕнмест, — терĕ çӳлте ларакан Антон.

Ванюк вите тăррине хăпарса кайрĕ. Тепĕр хут каласа пама пикенчĕ.

— Çил-тăвăл ăçтан тухнине пĕлтĕмĕр, — ăнлантарчĕ вăл каллех. Унтан ачасемпе мĕн пулса иртнине васкаса каласа пачĕ. Ку калава Антон аслашшĕ те илтрĕ. Кхм-кхм! ӳсĕркелерĕ итленĕçем. Сасартăк Антон тем аса илнĕ пек пулчĕ.

— Вăхăт çитрĕ апла, — терĕ шухăшлăн. Тем пĕлет вăл тейĕн.

— Мĕн вăхăчĕ çитрĕ? — ним те ăнланмарĕ ача.

— Тавăру вăхăчĕ. Ăна тахçантанпах кĕтеççĕ. — Хальхинче ку сăмахсем тата вăрттăнрах илтĕнчĕç. Ачана нумаях пулмасть Çтаппан çĕр çине чул пăрахса хăратни çитмерĕ, Антон сăмахĕсем çӳçентерсе ячĕç. — Çĕр планета вăл тем пысăкăш кристалл, — малалла тăсрĕ сăмахне хулари тусĕ. — Çитменнине, питĕ хăвăрт шутласа илме пултаракан машина, хăйне евĕр компьютер. Куна наука лайăх çирĕплетсе парать. Çĕр кашни япалана, пулăма астуса тăрать те кирлĕ чухне пĕтĕмпех аса илтерет. Çăл тавра тухнă çил-тăвăл та хăйне евĕр астутарни пулма кирлĕ.

— Кхм-кхм! — калаçăва хутшăнчĕ Антон

аслашшӗ. — Ҫӗре, чӑн та, кӳрентерме юрамасть. Эпӗ акӑ ҫӗр чавас умӗн кӗлтӑватӑп, ҫӗре хускатма хӑйнӑшӑн унран каҫару ыйтатӑп. Ҫӗре чунпа ӑнланас пулать. Вӑл сассӑр кӑшкӑрать, анчах ӑна никам та илтмест.

— Тӗрӗс, питӗ тӗрӗс калатӑр, асатте! Ҫӗр ҫине сурма юрамасть! Хулари ҫӗр авӑ сывлаймасӑр выртать. Ӑна йӑлтах асфальтпа хупланӑ. Ҫавӑнпа вӑл йӑлт ҫуркаланса-таткаланса пӗтнӗ. Ҫавӑнпа хула ҫыннисене тусанпа чыхӑнтарать ҫӗр. Асфальтне вара, асфальтне йӑлт сурса-вараласа пӗтереҫҫӗ-ҫке. Пӑхма намӑс. Ҫӗрӗ мӗнле чӑтать-ши?

— Хулара мӗнле — пӗлместӗп те, пирӗн ялта вара таса. Ҫапла-и, Михха мучи? — мухтанам пекки турӗ Ванюк.

— Тасарах ӗнтӗ, ҫавӑнпа канма кунта килетӗп те. Ялта уҫӑ. Лӑпкӑ. Шӑп. Тин сунӑ сӗт мӗне тӑрать. Ман Машка мӗнле пурӑнать унта, асатте?

— Чиперех. Ӗне кӗтӳ кӗртиччен нумай юлмарӗ, чӑт кӑштах. Пит ӗҫес килсен акӑ сивӗтнӗ сӗт пур, час илсе тухатӑп.

— Илсе тух-ха апла. Ӑш хыпрӗ. Ку вите тӑррине эпир Ванюкпа час витсе пӗтеретпӗр.

Ват ҫын кӑштӑртатса килне кӗрсе кайрӗ. Ҫамрӑксем юлнӑ хӑмасене ҫапма пикенчӗҫ. Шап та шап тутараҫҫӗ. Хӑмисем сарлака та, ӗҫ хӑвӑрт пырать. Аллисем ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсем шухӑша путнӑ. Пӗри те сӑмах чӗнмест.

— Пӗлетӗн-и, тусӑм, Ҫӗр ҫапла шутлама, туйма пултарать пулсан, тен, ӑна урӑхларах пӗтӗмлетӳ тума хистемелле? Вӑл пире тӑвӑлпа

мар, юратупа тавăртăр? — тинех сăмахне пуçларĕ Ванюк.

— Шутлав машинине мĕнле ĕç хушатăн, çавна пурнăçлать. Енчен те Çĕр планета хăйне майлă компьютер пулсан, апла вăл мĕн тумаллине йăлт ăнланать. Кăтартса çеç парас пулать.

— Мĕнле сăмахпа каласа кăтартма пулатьши ăна?

— Куна пĕлместĕп вара. Компьютер хăйне валли çырнă программăсене çеç ăнланать. Çĕрĕн хăйĕн чĕлхи те пур пулĕ?

— Пур, пур! Мĕнле çук пултăр? — калаçăва тепĕр хут хутшăнчĕ тин çеç пĕр курка сĕт йăтса тухнă мучи. — Эпĕ çĕрпе кашни кунах калаçатăп-иç! Вăл мана ăнланать. — Мучи çамкине пĕркелентерчĕ. Шап-шур çӳçĕ çил вĕрнипе арпашăнса пĕтнĕ. — Акă паян та эпĕ ăна мĕн каларăм, пĕлетĕр-и?

— Мĕ-ĕн?! — ыйтрĕç харăссăн çамрăксем.

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте çĕрпе калаçакана курни хăй тĕлĕнтермĕш. Тен, вăл çĕр чĕлхине пĕлекен пĕртен-пĕр çын? Михха мучи çĕрпе калаçма пултарнинчен пуринчен ытла мăнукĕ тĕлĕнчĕ.

— Кала-ха апла пĕр-икĕ сăмах. Эпир те итлесе пăхар.

— Мĕнех. Акă итлĕр. — Мучи чĕркуçленсе ларчĕ, куркари сĕтне çĕр çине кăшт тумлатрĕ. — Тавах сана, тăван çĕр, пире çуратнăшăн, анне пек пăхса ӳстернĕшĕн. Яланах пулăхлă пул, çăкăр-тăварсăр ан хăвар. Эпир вара сана хисеплĕпĕр, юратăпăр, мĕн кирлине йăлт

парăпăр. — Ватă çын виçĕ хутчен çĕре пуç çапрĕ те куркари сĕте тутанса пăхрĕ. Ун хыççăн куркана вите тăрринче çак асамлă ĕçе сăнаса ларакансене тăсса пачĕ. — Ĕçĕр эсир те.

— Асатте, эсĕ мĕн, çак сăмахсене çĕр ăнланчĕ тетĕн-и? — тесе сĕте сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçрĕ Антон. — Çĕр вăл çын мар, компьютер. Сăмах май, эпир те ăнлансах пĕтерейменрĕмĕр. Мĕн вăл çĕр ыйтни?

— Çĕр апачĕ. Урăх мĕн пултăр. Акă эпĕ кĕлĕ умĕн сĕт тумлатса патăм, çĕр пулăхлă та тулăхлă пултăр тесе ăна кашни кунах шăваратăп, çуркунне ана çине лавĕ-лавĕпех тислĕк кăларатăп. Çĕр çакна питĕ лайăх ăнланать.

— Тислĕк хывнине ăнланма пулать пульха. Кунта çĕр çаврăнăшĕ пурнăçланса пырать: мĕн чухлĕ илнине каялла тавăрса паратăр. Анчах та кĕлĕ сăмахĕсем мĕне пĕлтереççĕ? — Ача шухăша путрĕ. Ванюкпа Михха мучи те чĕнмерĕç. Картишĕнче шăп. — Акă мĕн! — кăшкăрсах ячĕ Антон. — Сăмахĕсем вĕсем çĕр моделĕ вĕт! Çĕр çаврăнăш моделĕ. Çын чăн малтан çĕре сăмах каласа евĕрлет. Асăрхарăр-и, кĕлĕре тыр-пул пуçтарса илни кăна мар, чӳк туса тавăрса пани те пур. Чӳкĕ, çăкăр-тăвар хывни — символ кăна. Тĕрĕссипе, тислĕк хуни — çĕре тăранмалăх апат пани. Çавна евĕрлесе парать те кĕлĕ. Ăнт!

Кун пек ăнлантарса пани пурне те килĕшрĕ. Капла туни çĕре çаратни мар ĕнтĕ.

Халё авă унта та кунта катастрофа пулни пирки тăтăшах пёлтерессё. Çёр çилленет. Выçă вăл. Мён пуррине йăлт туртса илессё те çиййёнчен тата лач сурса хураççё. Куна çын кăна мар, çёр те чăтаймасть. Çакна систерсе вăхăт çитрё тесе каларё те Антон. Хулара çав пётес вăхăт çитни курăмлăрах пуль çав.

Икё çамрăк малалла вите тăрринче ёçлерё. Шухăшёсем инçе вёçеççё. Антон Çёр-компьютерпа мёнле ёçлемелли пирки, Ванюк вара Çёртен çёнёрен çăтмах тума ыйтса пăхасшăн.

— Енчен те çёрпе тёрёс усă курсан эпир Çёр çинче çăтмах туса хума пултараятпăр-и? — пёлтерчё вăл вată çынна биологи учителён ёмётне. — Пурнăç йывăççине те тепёр хут тавăрса парас килет ман тăван халăхăма.

— Ненай, — терё мучи. — Çăтмах вăхăчёсем иртсе кайрёç пуль. Пурнăç йывăççи тенёрен, Самать патёнчи уйра халё те пёр хурама ларать. Çавă ёнтё вăл пурнăç йывăççи! Анчах ун патне халь тин никам та пырса кёлё каламасть, чўк тумасть. Ватă вăл, çапах ăна никам та пырса тёкёнмест, касмасть. Апла халăхра пурнăç йывăççи текен ăнлав упранса юлнах. Çăтмахё вара... Çăтмах вăл ёçлесен кăна пулать. Ёçлес пулать. Вара тин сётел ури авăнмалăх апат-çимёç туса илёпёр. Тавралăх та татах та илемленё.

— Ку тёрёс пуль, анчах та Çёр планета хăй те çав çăтмах çулне шырать пулё. Ёлёкавал, çын хăй ухмахлăхёпе пётём техникипе пырса кёриччен, çут çанталăк ирёклёрех

сывланӑ. Халӗ те сывласшӑн. Ҫакна ӑнланса илтӗмӗр эпир, эппин, пире пулӑшатех.

— Тем пекехчӗ. Анчах ҫав вӑхӑт пӗрех ырӑ сӑмах каласа ёҫлемесӗр ҫитеес ҫук. Ҫавӑнпа та...

— Ҫавӑнпа эпӗ те ҫав кӗлле каласа пӑхатӑп, — терӗ вите тӑрринчен сиксе аннӑ Ванюк. — Антон эс хирӗҫ мар-и?

Акӑ икӗ каччӑ ҫӗр ҫине чӗркуҫленсе ларчӗҫ те кӗлтӑваҫҫӗ. Мӗн калаҫҫӗ — паллӑ мар. Антон компьютерпа сӑмахланӑ пек калаҫать пуль, Ванюк пурнӑҫ йывӑҫҫи ыйтать пуль. Ватти те кӗлтӑвать. Вӑл ҫамрӑксене сывлӑх ыйтать, нумай пурӑнччӑр тет. Мӑнукӗсем ҫапла тавҫӑруллӑ, ырӑ кӑмӑллӑ пулнишӗн савӑнать мучи. Ванюка та тӑван мӑнукӗ вырӑннех йышӑнать. Ара, мӗн пӗчӗкрен Антонпа пӗрле вӑл. Хулари тусне ял пурнӑҫне хӑнӑхтарчӗ. Халь Антон тем тума та пӗлет. Ҫурт лартас ӗҫре те малта. Растворне ҫӑрать, кирпӗч хурать. Утӑ вӑхӑчӗ ҫитсен вара ниҫта кайса кӗме пӗлмест. Уттине ҫулать, тавӑрса типӗтет, шакӑр типнӗскере вите тӑррине кӗртет. Кӗтӳ черечӗ ҫитсен — унта та каять. Машка сӗтне юратать те кӗтӳрен килнӗ ӗнене пӗр михӗ симӗс курӑк ҫулса парать. Антон туман ӗҫ ҫук, алли пырать ун. Кӑмӑлӗ те ырӑ. Ҫавӑнпа та ватӑ ҫын кун пек ҫамрӑксем тӑван ҫӗре нихҫан та сутмӗҫ, ыттисене те пӗтерме памӗҫ тесе савӑнать.

Акӑ вӗсем кӗлтуса пӗтерчӗҫ те пӳрте кӗрсе кайрӗҫ. Тем самантран Ванюк кӗнеке йатса тухрӗ. Уҫкаласа пӑхнӑ май килнелле ҫул

тытрĕ. Тепĕртакран Антон та кил картине тухрĕ. Кунта никам та çук. Вăл сип-симĕс курăк çине выртрĕ те тӳпенелле тинкерчĕ. Канлĕ халь ăна çĕр ытамĕнче. Хула ачи тăван çĕрне тупрĕ. Унран вăй илет вăл.

## Протоценоз

Кĕтмен çил-тăвăл хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Шкул ачисем çĕнĕ катана выльăх ватасран тесе хурала çӳрерĕç, шкулти йăрансем çинче пахча çимĕç ӳстерчĕç. Вĕсемпе пĕрле Антон та пулчĕ. Яланах тăваттăн çӳрерĕç тантăшсем: Антон, Ванюк, Çтаппан тата Нинук. Икĕ çырма пуçне темиçе хутчен шыва кĕме кайса килчĕç, анчах тек нихăшĕ те Тĕпсĕр çăл патне пырса пăхмарĕ — хăрарĕç. Эльпуçĕнче те Мишерти пек тăвăллă çумăр тухнă тенине илтсен вара чăтаймарĕç, çăлкуç патне кайса килме шут тытрĕç. Пĕр сас кăлармасăр, шиклĕн кăна ура пускаласа пычĕç çамрăксем çав асамлă вырăн еннелле.

Тĕпсĕр çăлкуç вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Вăл малтан мĕнле пулнă çаплипех тăрса юлнă. Хум вылятса выртакан таса та тарăн кӳлĕ вырăнне куçа пăл-пăл-л туса тăракан шыв юххи тăрăнчĕ. Ĕлĕкхи пекех юшкăнланса кайнă. Ванюк мĕн астăвасса çаплаччĕ вăл. Йĕри-тавра, куна чăн малтан Антон асăрхарĕ, сип-симĕс курăк шăтса тухнă. Çитменнине, нихçан курманни!

— Мĕнле япала ку? — тĕлĕнчĕ хула ачи. — Эпĕ кун пек курăка палламастăп.

Калас пулать, Мишер ачисем таврара ӳсекен кашни куръка пӗлеҫҫӗ. Сахал мар куръкла вылянӑ. Кашни ача тӗрлӗ курӑк татса килет те — пӗрин вӗсен ячӗсене тӗрӗс каласа тухмалла. Кашни пӗлмен ятшӑн пӗкӗ аврипе шӗвӗр патака ҫӗр ӑшне ҫапса кӗртеҫҫӗ. Курӑк ячӗсене пӗлменнисен — вӑл ҫӗрпе танах пулать. Ҫав ҫӗр ӑшнех кӗрсе кайнӑ шӗшлӗне шӑлпа туртса кӑлармалла. Ӑт, пӗрре мар ӑна туртса кӑларма тивнӗ Антонӑн. Ун чухне ҫӗрӗ ҫӑвара кӗрет. Ҫавӑнпа та ҫӗр тутине ача питӗ лайӑх пӗлет. Анчах тин асӑрханӑ курӑка вӑл халиччен курман.

— Чӑн та, — Нинук курӑка сӑмси патнех илсе пырса шӑршларӗ. — Ай-уй! Пит тутлӑ шӑршлӑ ку, ҫемҫе тата.

Ачасем пурте халиччен курман курӑка татса шӑршласа пӑхрӗҫ. Ванюк ҫыртса тӗрӗслерӗ. Тути те уҫӑ. Ҫтаппан ҫеҫ урипе таптарӗ.

— Тупнӑ курӑк... Курман-им? Ун пекки ав тем чухлех шӑтса тухнӑ.

— Ан тив! — терӗ Нинук. — Ку ахальли мар. Ку — сиплӗ курӑк. Вӑл тин ҫеҫ шӑтса тухнӑ пулас. Виҫӗм кун эпир хуралра тӑнӑччӗ — кун пеккине асӑрхаманччӗ.

— Акӑ мӗн, — аса илчӗ Антон, — пирӗн ял кӗтӗвӗ кунтах ҫӳрет, ҫавӑнпа Машка тӑранса киле пуҫларӗ. Пахчари курӑка ҫулса парсан та ҫимест. Сӗчӗ тата тутлӑланчӗ пек.

— Тулай Иванӗ ӗнесем халь питӗ тӑранса килеҫҫӗ тесе мухтанать тет, — хушса каларӗ Нинук. — Эпӗ лайӑх кӗтӳҫӗ, уншӑн

мана хушса тӳлемелле тесе калать-мӗн. Кӗтӗве катана кӗртме пӑрахнӑ-ха вӑл. Тен, ҫак курӑка ҫисе тӑранаҫҫӗ выльӑхсем?

— Ха-ха-ха! — юри кулам пекки турӗ Ҫтаппан. — Тен, ку сирӗн Аслӑ ҫаран пулать. Шӑвармасӑрах ешерсе кайӗ. Ӗнисем те ҫимесӗрех тутӑ пулӗҫ. Акма та, ҫулма та, типӗтме те кирлӗ мар — хӑй тӗллӗнех ӳсет. Ха-ха-ха!

— Чӑнах, хӑй тӗллӗнех! — ҫӗр ҫумне пӗшкӗнчӗ Ванюк. — Пӑхӑр-ха, пӑхӑр, эпир калаҫса тӑнӑ вӑхӑтра вӑл пӗр шит чухлӗ ӳснӗ те. — Каччӑ ҫӗнӗ курӑка татса малтанхипе танлаштарчӗ. Чӑн та, куҫ кӗрет ӳснӗ.

Аптраса ӳкнӗ ачасем шӑп тӑчӗҫ. Ванюк хӑй каланӑ кӗлӗ сӑмахӗсене аса илчӗ. Вӑл Антонпа тата Михха мучипе пӗрле кӗлтунӑ чухне ҫӗртен хӑвӑрт ӳсекен курӑк пама ыйтнӑччӗ. Вӑрттӑн, шалти саспа каланӑччӗ. Ара, ҫӑтмахри курӑк вӑл хӑй тӗллӗнех пӗр вӗҫӗмсӗр ӳсет-иҫ!

Антон пуҫӗнче вара ҫӗр ҫаврӑнӑшӗн моделӗ ҫаврӑнчӗ. Ҫак юшкӑнран килмест-и ку пулӑм? Юшкӑн вӑл питӗ пулӑхлӑ. Авалхи чӑваш несӗлӗсем ҫырма икӗ пуҫӗнче пурӑннӑ чухне ҫакӑн пек юшкӑнлӑ ҫӗр ҫинче тыр-пул туса илнӗ тет. «Ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ, ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ!» — вӗлтлетрӗ ача пуҫӗнче шухӑш.

Нинук илем пирки шутларӗ. Эх, ку курӑк ярса илсен епле илемленсе каять пуль Сӑхӑт ҫырми. Халӗ вӑл кӗтӳ иртмессерен тусанпа мӑкӑрланса тӑрать. Типӗ, ҫара, чӑнкӑ ҫырма...

Йывăç та лартса пăхнă унта. Каймасть. Ку курăк, тен...

Çтаппан та питĕ тĕлĕннĕ. Чĕрĕ мар текен çĕр каллех тем çуратса пачĕ. Анчах вăл илеме туймарĕ, пач урăххи пирки шутларĕ. Çакă пĕтĕмпех чăн пулсан ăна хăй аллине епле çавăрса илме пулать-ши терĕ. Курăкĕ питĕ хăвăрт ӳсет пулсан пысăк кĕтӳ те кĕртсе яма пулать кунта. Курăкĕ ӳссех тăрĕ, ĕнисем мăнтăрлансах пырĕç... Çтаппан вĕсене сутса укçа тăвĕ. Лайăх ĕмĕт ку!

— Акă мĕн! — терĕ вăл. — Эпĕ малашне кĕтӳçĕ пулатăп. Нумай-нумай ĕнене çак курăкпа тăрантарса ĕрчетĕп те пасарта сутса укçа тăвăп. Ман ĕçе урăх никам та ан кĕрĕштĕр. Эпĕ хамах.

Ку сăмахсем ачасене култарса ячĕç. Мĕн хуçи? Малтан ку пулăмăн сăлтавне шыраса тупас пулать. Тен, вăл пĕрре те ырра мар. Тен, усала?

— Кунта, чăн та, темле вăрттăнлăх пурах, — терĕ Ванюк. — Курăк çăтмахри пек ӳсет. Акă эпир ĕмĕтленсе тăнă вăхăтра вăл тата та çӳллĕ ӳснĕ. — Каччă тепĕр ывăç курăк татса танлаштарса пăхрĕ. Чăнах та, ӳснĕ.

— Апла ку ыранччен пирĕн çӳллĕш ӳсет, — тавçăрчĕ хула ачи. — Вара мĕн тумалла тет унпа? Тен, чăн та, Çтаппан калашле, кĕтӳ кĕртмелле... Сĕтлĕ пулатпăр.

— Ан тĕкĕнĕр, ӳстĕр! — хирĕçлерĕ хĕр. — Кунта авалхи мезозойри пек тем çӳллĕш курăк ӳстĕр!

— Ёнесем динозаврсем евӗр ҫӳреччӗр! — аталантарчӗ ун шухӑшне Ҫтаппан.

Куна илтсен пурте ахӑлтатса кулса ячӗҫ. Атьӑр ҫӑлкуҫ шывне ӗҫсе пӑхар, тен, эпир те Улӑп пек ӳссе кайӑпӑр теҫҫӗ.

Ӳсни курӑнмарӗ, анчах чунӗсемпе чӑн Улӑпсем пулса тӑчӗҫ вӗсем. Хӑйсене хӑватлӑн туяҫҫӗ. Ара, кашнин хӑйӗн ӗмӗчӗ-ҫке-ха. Ӗмӗтрен хӑватли урӑх мӗн пултӑр?

Каҫхине ӗнесем каллех тӑранса килчӗҫ. Тӑвӑл хыҫҫӑн Икӗ ҫырма пуҫӗнче курӑк епле ешерсе кайни ҫинчен ялта халӗ пурте пӗлеҫҫӗ. Ҫумӑр лайӑх лӳшкенӗ хыҫҫӑн ҫапла хӑвӑрт ӳсет терӗҫ те, ял халӑхӗ тутлӑ ыйха путрӗ.

Хӗветӗр Хилипчӑн кӑна ыйхӑ килмерӗ. Мӗн пулса иртнине ачасем чӑн малтан ашшӗ-амӑшне мар, биологи учительне каласа панӑ. Хӑй курман пулин те вӗренекенсем калани тӳрех учитель куҫӗ умне тухса тӑчӗ.

Икӗ ҫырма пуҫӗ... Вӑл вырӑн ӗлӗкренпех асамлӑхӗпе палӑрса тӑнӑ. Ахальтен мар пуль чӑвашсем ялсене икӗ ҫырма пуҫне пырса лартнӑ. Масарӗсем те икӗ ҫырма пуҫӗнче. Авалхи шумерсенченех тухнӑ пулас ку йӑла-йӗрке. Вӗсем те икӗ ҫырма пуҫӗнче пурӑннӑ пулать. Ку — пӗрре. Тепре — ҫав вырӑн питӗ юшкӑнлӑ пулнӑ. Унта тыр-пул туса илме, выльӑх ӗрчетме меллӗ. Тӗпсӗр ҫӑл Эль кӳллипе, Хура тинӗспе, тен, Вӑта тинӗспе те ҫыхӑннӑ тени те питӗ интереслӗ. Авалхи икӗ ҫырмаллӑ вырӑна пур ҫӗрте те курасси, унта

авалхи пек пурнасси... Вăл вырăн çăтмах пек пулнă. Пĕр пилĕк пин çул каялла унта пурăннă чăвашсем çав вырăна апла ниепле те манса каяймаççĕ пулать.

Çак кĕтмен шухăш çывăрма выртнă учителе кравать çинчен тăратрĕ. Халех кайса пăхас терĕ вăл çав вырăна. Çуллахи каç кĕске, унта çитнĕ çĕре тул çутăлать те. Учитель тăхăнчĕ те урама тухрĕ.

Ванюкăн та ыйхă килмерĕ çав каç. Ун хăйĕн шухăш-ĕмĕчĕ. Вăл çав çăлри шыва ĕçнĕ хыççăн хăйне лайăх туя пуçларĕ. Кирек мĕнле ĕçе те пурнăçлассăн туйăнать ăна. Çырмари юшкăна таврари уйсене хывса тухсан тыр-пул тухăçне ӳстерме пулать. Ав еплерех ӳсет унта курăк. Ир енне вăл Ванюк çӳллĕш те пулчĕ пулĕ. Ăна часрах çулса пăрахмалла та силос тумалла. Вара ĕнесем хĕлле те сĕт лайăх антарĕç... Типĕтсе хурсан та аван пулмалла... Юшкăнĕ ăçтан-ши? Ытла сиплĕ-çке хăй!

Антон та çывăраймарĕ. Вăл та ыттисем пекех кĕтмен çил-тăвăл тупсăмне шырарĕ. Çавăн чухлĕ шыв куç пек пĕчĕк çăлран тапса тухни, таврари уйсене вăйлă çумăр çутарса шăварни тĕлĕнтерчĕ ăна. Шыв ниçтан та мар, çĕр тĕпĕнченех тухнă. Апла çав шыва Çĕр чăмăрĕ хăех панă. Таçтан, Атлантика енчен, килмен ĕнтĕ вăл! Килнĕ пулсан Мишере çитиччен нумай-нумай çĕрте çунă пулĕччĕ...

Нинукăн та ыйхи кĕске пулчĕ. Çывăрса кайнăччĕ ĕнтĕ вăл. Тĕлĕк куратчĕ. Çтаппан-

па Ванюк хĕршĕн тӳпелешсе кайнă пек. Нинук çакна кӳлĕ хĕрринче темшĕн питĕ савăнса пăхса тăрать. Уншăн кĕрешеççĕ-çке! Çав вăхăтра, вăйăран вăкăр тухать теççĕ, сасартăк икĕ каччă Тĕпсĕр кӳлле ӳкрĕç те пăл-пăл туса тăракан авăра путрĕç. Хĕр хăраса вăранчĕ. Ванюка темле инкек кĕтессĕн туйăнчĕ ăна.

Çтаппан та çĕрĕпех çав кӳлĕ тавра çӳрерĕ. Çакăнта питĕ пысăк укçа тума пулассăн туйăнчĕ ăна. Кирек мĕнле пулсан та унăн çак кӳлле алла илмелле, ун патне никама та пыртармалла мар. Вара Çтаппан ялти пуян пулĕ...

Тул çутăлса çитрĕ. Çĕнĕ кун пуçланасса чăтăмсăррăн кĕтекенсем пурте Тĕпсĕр çăлкуç патне çул тытрĕç. Чăн малтан унта учитель çитсе тăчĕ. Таврара, чăн та, сип-симĕс. Кун чухлĕ курăк кунта Хĕветĕр Хилипчă нихăçан та курман. Çăлкуçĕ вара улшăнман пек. Яланхиллех лăпкăн тапса выртать. Учитель курăка татса пӳрнипе йăваласа пăхрĕ. Вăрăмах та мар вăл. Çĕр хута ӳсмен те пек. Ара, каçхине хĕвел çути çук вĕт, фотосинтез вара хĕвел çутисĕр пыраймасть.

Биологи учителĕ курăка тăпăлтарса илсе целлофан пакета хучĕ. Унтан çăлран тапса тăракан юшкăна тепĕр пакета тултарчĕ. Шывне пĕчĕк кĕленче савăта ячĕ. Тĕпчемелле.

Çак ĕçсемпе аппаланнă вăхăтра Ванюк вĕçтерсе çитрĕ. Ун хыççăнах — ыттисем те. Кашниех Хĕветĕр Хилипчă мĕн каласса кĕтеççĕ. Анчах лешĕ интересли нимех те пĕлтереймерĕ. Ачасем те таврара ним улшăн-

нине сисмерӗҫ, ҫавӑнпа учитель сӗннипе шкулалла ҫул тытрӗҫ. Унта лаборатори пур.

Вӗсем курӑнми пулсанах кӳлӗ хӗрринчи пӗр ҫӗр тӗмески хускалчӗ. Курӑк чашӑл-л ҫӗкленсе илчӗ. Ара, хӗвел тухнӑ мар-и? Хӗвел тухсан пурнӑҫ килет! Вӑхӑт нумай та иртмерӗ, ҫав тӗмеске шартлаттарса ҫурӑлнӑ пек сасӑ кӑларчӗ, унтан татах ҫӗр ҫийӗн асамат кӗперӗ евӗр илемлӗ ҫавра тӗм курӑнса кайрӗ. Анчах куна никам та курмарӗ...

Ҫав вӑхӑтра учительпе ачасем шкул лабораторинче тӗпчев ӗҫӗ ирттерчӗҫ. Хӗветӗр Хилипчӑ курӑка шыв банкине лартрӗ, шывне пипеткӑпа окуляр айне тумлатрӗ те микроскоппа пӑхма пикенчӗ. Ҫук, ахаль шыв мар ку. Унта хӑйне евӗр «ҫапӑҫу» пырать. Шыв тумламӗнче — кӑткӑс молекулӑсем. Пӗрисем ӳссе пайланса пыраҫҫӗ, теприсем вӗсене тапӑнаҫҫӗ те ҫӑтса ҫисе яраҫҫӗ. Ҫак тупӑшу хӑйне евӗр пӗр ҫавра пек курӑнать. Куҫ умӗнче асамлӑ кустӑрма ҫаврӑнать тейӗн. Ҫук, пӗрре ҫеҫ мар, пин-пин кустӑрма. «Пурнӑҫ ҫаври! — пырса кӗчӗ ӑсчах пуҫне пӗр шухӑш. — Акӑ ӑҫта вӑл пурнӑҫ ҫаври!»

Хумханнипе Хӗветӗр Хилипчӑ чике сухалне ҫине-ҫине сӑтӑркаларӗ. Алли чӗтрерӗ унӑн, тути мӑк-мӑк тукаларӗ.

— Кунта... кунта, — терӗ вӑл, — пурнӑҫ пур. Акӑ пӑхӑр-ха!

Ачасем черетпе микроскоппа пӑха пуҫларӗҫ. Ахлатса тӗлӗнни, уйлатни кӑна илтӗнсе тӑчӗ лабораторире пӗр вӑхӑт.

— Мĕн ку? — ыйтрĕç пурте харăссăн.

Никам та ним те шарламарĕ. Шăп. Çав вăхăтра хĕвел пайăрки пӳлĕме майĕпен шуса кĕчĕ те микроскоп çине ӳкрĕ. Хĕвел çинчи тумлам тĕрлĕ тĕспе ялкăшма тытăнчĕ.

— Ку авалхи ценоз, протоценоз ку! — студент чухне вĕреннине аса илчĕ учитель. — Çĕр çинче йĕркеленнĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ япаласен çаврăнăшне эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, вĕреннĕ: шыв, сывлăш, апат çаврăнăшĕ... Çавăн йышши çаврана куратпăр эпир. Вăл тахçанах, пĕр-икĕ миллиард çул каялла, пуçланса кайниех. Ку тарана çитиччен мĕнле упранса юлма пултарнă-ши? Эволюци вырăнта тăмасть-çке. Халь ăна эпир тăпрапа ӳсен-тăран тата чĕр чун хушшинче йĕркеленнĕ çыхăнура куратпăр. Апат циклĕ тетпĕр. Çут çанталăкра кашни чĕрĕ чун тепринпе апатланса пурăнать.

— Кунта та, шыв тумламĕнче, пĕр молекула теприне çиет вĕт! — ахăрса кулса ячĕ Çтаппан. Çак пулăм ăна питĕ килĕшрĕ курăнать.

Ачасем ун çине кăн пăхрĕç. Нинук çилленерех те сăнарĕ. Ара, кунта ним кулмалли те çук. Авалхи пурнăç сĕмĕ пирте упранса юлнах пуль. Çавна сисрĕç çамрăксем. Çакна туйса илчĕ те учитель.

— Эпир урăх нимпе те мар, протоокеанăн пурнăçĕпе тĕл пултăмăр. Икĕ-виçĕ миллиард çул каялла Çĕр чăмăрĕ çинче çапларах шыв пулнă теççĕ. Çав шывра чи пирвайхи пурнăç пуçланса кайнă. Эпир молекула тенисем,

тӗрӗссипе, молекулӑсем те мар, вӗсем — чи пирвайхи организмсем, чи-чи пӗчӗк клеткӑсем!

— Куракӗ ку вара ӑҫтан? — ыйтрӗҫ ачасем. — Ӗлӗк кун пек кураӑк пулман ӗнтӗ.

— Куракӗ, — банкӑри пӗр ывӑҫ куракӑ аллa илсе хӗвел ҫинче ҫавӑркаларӗ учитель, — куракӗ ку хамӑр вӑхӑтриех. Хулари газонсенче акса ӳстерекенни ку. Шур ути пекрехскер.

— Пылчӑкӗ вара мӗн?

— Пылчӑкне час пӑхатпӑр, — терӗ ӑсчах. Чӑнах та, биологи учителӗ ачасене чӑн ӑсчах пек курӑнать. Питӗ хавхаланса кайнӑскер ҫутӑ сӑнлӑ, хура куҫӗсем ҫиҫеҫҫӗ кӑна.

Акӑ вӑл пылчӑк тумламне тӗпчеме пуҫларӗ. Пӳлӗмре паҫӑрхи пекех шӑп. Ванюк, ахаль те тӑсланкӑскер, тӳп-тӳрӗ хытса тӑнипе тата ҫӳллӗ курӑнать. Антон пуҫне пӗкнӗ. Вӑл лутрарах, капла тата пӗчӗк пек туйӑнать. Ҫтаппан, ҫавра куҫлӑскер, куҫне чарса пӑрахнӑ — шӑши тытма тухнӑ тӑмана тейӗн, кӗҫех кама та пулин ҫӑтса ярассӑн тӑрать. Нинук, хӗвел сӑнлӑ пике, питӗ хавaслӑ, мӗн пулать-ха тесе кӗтет.

— Акӑ, — терӗ учитель, — ку пылчӑк — фермент йышши япала, энзим. Халь курӑк мӗншӗн питӗ хӑвӑрт ӳснине ним те мар ӑнлантарса пама пулать. Ку пылчӑк — курӑкшӑн чи лайӑх апат, урӑхла каласан тислӗк.

— А-а-а! — ӑнкарса илчӗҫ шкул ачисем. — Авӑ еплерех аталанса пынӑ сӗм авалхи пурнӑҫ!

— Апла эпир ку тислӗкпе усӑ курсан питӗ

тухăçлă тыр-пул туса илме пултаратпăр, — терĕ Çтаппан. Ун куç умне питĕ пысăк хуçалăх тухса тăчĕ. Ешерсе ӳсекен курăка çисе самăрланса кайнă ĕнесем, кашласа ларакан тыр-пул...

— Тĕпсĕр кӳлĕ тавра эпир чăн-чăн çăтмах туса хурăпăр, — ĕмĕтлене пуçларĕ Ванюк. — Унта, тен, кайран пурнăç йывăççи те шăтса ӳсĕ!

— Çĕр чăмăрĕнче авалхи океанăн шывĕ упранса юлнă пулас, — тĕшмĕртрĕ Антон. — Çĕр хăй те çапла шыв тума пултарать-и тен...

— Çĕр пире хăй кăмăлне кăтартрĕ те авă. Ан хирĕçĕр терĕ. Вара сирĕн ялта та çăтмах туса хума пулать терĕ. Çĕр пирĕнтен çĕр хут ăслă, хăйне пăрахманшăн пире çĕр тĕрлĕ ырлăх кӳрет.

— Ай, епле лайăх ачасем эсир, савăнтаратăр хăвăрăн вăтă учителĕре. Эсир калани пурте тĕрĕс пуль, анчах та ĕмĕтсем пурнăçланччăр тесен, ах, мĕн чухлĕ ĕçлеме тивет. Çут çанталăк пире шанăç кӳчĕ. Çав шанăçа тӳрре кăларасчĕ. Эпĕ сисетĕп, ку пуçламăш кăна. Тĕпсĕр кӳлĕ тенĕрен, ăна ватăсем пире валли упраса хăварма пултарнă-çке, курса тăрăр, тата тем те пĕр кăтартĕ-ха вăл. Хатĕр пулăр.

Ватă учитель калани пурне те шухăша ячĕ. Чăн та, мĕн илсе килĕ ку пулăм? Куна никам та пĕлмест. Анчах çамрăклăх тени аптăраса тăрать-и вара? Пĕр ушкăн ача канашласа илчĕ те кăпăр çĕкленсе лабораторирен тухса кайрĕ. Учитель вĕсене чарма шутла-

марĕ. Кайччăрах терĕ. Унта, Тĕпсĕр çăлкуç патĕнче, чăнласах тата тем пулса иртессĕн туйăнчĕ ăна та.

## Пурнăç йывăççи

Ачасем шкул лабораторинче ĕçленĕ вăхăтра, чăн та, Тĕпсĕр кӳлĕ тавра тĕлĕнтермĕш пулса иртрĕ. Çĕр тĕмески тенĕскер халĕ юмахри пек йывăç пулса тăчĕ. Курăкĕ ӳсес вырăнне туратланчĕ, пуç кăларма хатĕрленчĕ. Пурнăç кунта вĕресе тăчĕ. Ачасем çитнĕ çĕре, пĕр иккĕленмесĕр калама пулать, Икĕ çырма пусĕнче çăтмах вырăн пулса тăчĕ. Пурнăç йывăççи ӳсет. Адампа Ева çеç курăнмаççĕ. Чимĕр, ан васкăр-ха, тен, вĕсем те пулĕç. Малалла мĕн пулассине никам та пĕлмест. Мишер ялĕ çине çăтмах хăй йăтăнса анчĕ. Çăтмах чăваш ялне суйласа илнĕ иккен...

Суйласа илекенсем татах тупăннă. Икĕ çырма пусĕнче питĕ хитре йывăç ӳссе ларнине чăн малтан Тулай Иванĕ курнă. Ĕне кĕтӳ çитерсе çӳренĕ чухнех асăрханă ăна. Унăн та çав йывăçа хăйĕн аллине ярса илес шухăш çуралнă. Пĕр вăрра вĕреннĕ çын вăрлама пăрахаймасть теççĕ çав. Ачасем лабораторире пуç ватса ларнă чухне асамат кĕперĕ пек йăлтăртаттарса тăракан йывăç патне вăрттăн кăна йăпшăнса пынă та ун çине пурттине кач! лартнă. Мĕнле лартнă, çапла хытса кайнă. Ачасем пырса çитнĕ çĕре вăл чутах вилсе кайман.

Ăна шалкăм çапнă. Куçĕпе выляткаласа тăрать хăй, тути тем калать пек, анчах сасси тухмасть.

Ку йывăç милĕклĕх хурăн мар çав, кунта асамлăх пур. Пуртă каснă тĕлтен симĕс сĕткен юхать, патне пыма çук шăршă çапать. Ку мĕн тери хăрушă пулнине чăн малтан Ванюк ăнланса илчĕ.

— Патне ан пырăр! — терĕ вăл. — Ку йывăç наркăмăш кăларать пулас. Хăйне сиен кӳресрен сыхлать тата хăйне хăех сиплет. Пуртă çĕвви акă хупланнăпа пĕрех.

— Иван пиччене шалкăм çапнă, — шеллерĕ хăйĕн тăванне Нинук. — Çăл шывĕпе сапса пăхар мар-и. Çав шыв сиплĕ теççĕ.

Нинук ыттисем мĕн каласса кĕтмесĕрех айлăмри çăл патне чупса анса кайрĕ.

— Карттуспа йăтса кил, — хăй карттусне ывăтса пачĕ Çтаппан. Вăл та çăл хăватне ĕненет пулас.

Карттус тулли шыва малтан Тулай Иванне ĕçтерчĕç. Вăл шыва йăлтах тăкса кĕпине йĕпетсе пĕтерчĕ. Юлашкине Ванюк йывăç суранĕ çине сапрĕ. Шывĕ, чăн та, сиплĕ. Ял кĕтӳçĕ çăмăллăн сывласа ячĕ. Йывăç суранĕ куç умĕнче тӳрленчĕ. Çĕвви те палăрми пулчĕ.

— Юмахри чĕрĕ шыв пулĕ ку? — тĕлĕнчĕ çакна çăвар карса пăхса тăракан Антон. Хулара ӳснĕскер, вăл ун-кун япаласене пит ĕненсех каймасть, тĕшмĕш тет. Анчах хăй куçĕпе курни ăна тĕлĕнтерсех ячĕ.

— Йывăçăн сĕткенĕ вара — вил шыв! Чу-

тах вӗлерсе пӑрахатчӗ вӗт мана! — кӑшкӑрса ячӗ чун кӗнӗ Тулай Иванӗ.

— Эс вилнӗшӗн никам та хурланас ҫукчӗ! — ӗрлешрӗ Ҫтаппан.

— Ҫилленме кирлӗ мар, — мирлештересшӗн тӑрӑшрӗ Нинук. — Ку йывӑҫ, Ҫӗр пирӗн кашни хусканӑва курса, сыхласа тӑрать. Тен, вӑл ҫын мӗн каланине те ӑнланать, сӑмахпа калаймасть ҫеҫ. Эпир вара, ҫӗре чунсӑр тесе шутлаканскерсем, ним те ӑнланмастпӑр. Ҫавна пулах ӑна сиен кӳретпӗр.

— Сиен кӳрес текенсем тупӑнсах пыраҫҫӗ тата! — тарӑхрӗ Ванюк. — Хурӑнлӑха сыхланӑ чухнехи пек сыхлама пуҫламалла мар-и ку йывӑҫа?

Хурала тухас текенсем нумай пулчӗҫ. Ҫавӑнпа та ачасем шӑпа ячӗҫ. Шӑпи кама тухрӗ тетӗр? Паллӑ, Ванюкпа Нинука суйласа илчӗ шӑпа. Чылай вӑхӑт шӳтлекелесе калаҫса тӑнӑ хыҫҫӑн ачасем килӗсене саланас терӗҫ. Кӑшт уксахлакан Тулай Иванне те пӑрахса хӑвармарӗҫ. Ванюкпа Нинук каҫхи апат ҫинӗ хыҫҫӑнах ҫырма пуҫӗнче тӗл пулма калаҫса татӑлчӗҫ. Ҫтаппан ҫав калаҫу вӑхӑтӗнче вӗсене сивӗ куҫпа ӑсатрӗ, анчах куна ҫамрӑксем сисмерӗҫ.

Икӗ ҫырма пуҫне Ванюк каҫхи шуҫӑм сӳниччченех пырса ҫитрӗ. Нинук ҫук-ха. Амӑшне пулӑшать пуль. Хӗр ачан килте ӗҫ нумай. Ӗне те сумалла, яшка та пӗҫермелле, хӑйне те илем кӗртмелле...

Хӗре кӗтнӗ май йывӑҫа тимлӗ сӑнарӗ ача, хайхискер юман пек курӑнса кайрӗ. Анчах

ку урӑхла юман. Ун ҫулҫи кӑвак! «Кӑвак юман вӗт ку!» — пырса кӗчӗ Ванюк пуҫне шухӑш. Пӗр халапра вуланӑччӗ ун пирки. Тахҫан авал ҫӗр ҫинче кӑвак юмансем ӳснӗ тет. Ҫав юмансем чӑваш халӑхне упраса пурӑннӑ пулать. Анчах тӑшмансем йывӑҫ вӑйне сиснӗ те ӑна йӑлт касса пӗтернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн халӑх хӑвачӗ чакма тытӑннӑ. Йывӑҫсене пуҫҫапма пӑрахнӑ вӗсем. Пуҫҫапма-и, йӑлт касса пӗтернӗ.

Ватӑсем каланӑ тӑрӑх, Икӗ ҫырма пуҫӗнче ӗлӗк вӑрман кашласа ларнӑ. Халь акӑ ҫапҫара. Пурнӑҫ йывӑҫҫисӗр пуҫне кунта урӑх пӗр йывӑҫ та ӳсмест.

Ҫапла шухӑшласа ларакан ача хӗр пырса ларнине те сисмерӗ. Нинук выляса тенӗ пек кӑлт тӗксен кӑна шухӑш ытамӗнчен хӑтӑлчӗ.

Нинук шур кӗпе тӑхӑннӑ. Хӑйӗнчен тутлӑ шӑршӑ килет. Хаваслӑн пӑхса ларчӗ Ванюк Нинук ҫине. Пӗчӗк кӑна хӗр ача самантрах илемлӗ хӗр пулса тӑнӑ.

Нинук пӗр кана шарламасӑр ларчӗ.

— Ванюк, эсӗ вӗренсе тухсан ӑҫта каяс тетӗн? — кӗмӗл саслӑн янӑрарӗ каҫхи шӑплӑхра ун сасси.

— Ялтах юлатӑп, мана нимле хула та кирлӗ мар.

— Вӗренес теместӗн-и вара эсӗ?

— Пурнӑҫ хӑех вӗрентет. Кирлӗ пулсан акӑ пурнӑҫ йывӑҫҫинчен ыйтӑпӑр. Вӑл, Библи тӑрӑх, ырӑпа усал кӑна мар, пӗлӳ йывӑҫҫи те!

— Пулӗ те! Ева Адама ҫав йывӑҫ ҫинче ӳсекен пан улмине ҫитернӗ пулать халап тӑ-

рăх, — хĕр ача сиксе тăчĕ те пурнăç йывăççи тавра çаврăнкалама тытăнчĕ. — Халапĕ тĕрĕс пулсан ку йывăçăн та çимĕç пулмалла...

— Ăна Адама çитерсен мĕн пулать тет? — Ванюк кулса ячĕ. Хĕре хăваласа çитсе ыталаса илчĕ.

Çав вăхăтра çӳллĕ курăк хушшипе Çтаппан йăпшăнса пынине те курмарĕç вĕсем. Вăл вара Ванюк хĕре чуптума тănă вăхăтра сиксе тухрĕ. Каччăпа хĕр хăранипе пĕр-пĕринчен уйрăлчĕç.

— Мĕн туса çӳретĕн эсĕ кунта? — тĕлĕнчĕ Нинук. — Кама сыхлатăн?

— Сире сыхлатăп.

— Тупăннă сыхлавçă! — тутине пăрчĕ Нинук. — Кай!

Ванюк чĕнмерĕ. Хăй тарăхнине аран тытса чарчĕ. Çакна кура Çтаппан тата паттăрланчĕ.

— Хурала сирĕн мар, ман тухмаллаччĕ. Ку ман йывăç!

— Тепĕр хуçа тупăнчĕ. Пĕри пуртăпа касса яратчĕ... Эсĕ тата мĕн тăвасшăн?

— Касса яма эпĕ ухмах мар! Унăн çимĕçĕ те пур. Акă пăхăр. Ăна сутса укçа тума пулать.

Йывăç тăрринче, чăн та, тем йăлтăртатать пек. Каçхи шуçăм ăна хĕрлĕ тĕс кĕртнĕ. Илемлĕн, илĕртӳллĕн ялтăрать. Алă хăех ун патне туртăнать.

— Татса парас-и, Нинук? — терĕ Çтаппан.

Хĕр пуçне сĕлтрĕ. Каччă туратсем хушшипе çӳлелле вăр-вар хăпарса кайрĕ. Пĕрре

пăхсах курăнать: вăйлă ача. Йывăç тăрринчи çимĕçе татас тесе аллине тăсрĕ, анчах çитеймерĕ. Ним тума аптранипе тытрĕ те йывăç вуллине силлерĕ. Хĕрлĕн ялкăшса тăракан çимĕç çĕр çине пат! ўкрĕ.

— Татăлчĕ! — кăшкăрса ячĕ хĕр. Аллинче унăн çав çимĕç. Тăрăхласкер. Тутлă-тутлă шăршă килет. Нинук чăтаймарĕ, çатăрт! сыртса илчĕ. Унтан Ванюка тăсса пачĕ. Каччă иккĕленерех пăхкаласа тăчĕ-тăчĕ те тепĕр енчен шатăртаттарса çыртса илчĕ. Кăшт çеç тăрса юлнă çыртăка çавăркаласа пăхкаланă хыççăн çўллĕ курăк ăшнелле таçта çити вăшт ывăтса ячĕ.

— Эй, мана валли ăçта? — тени илтĕнчĕ йывăç тăрринчен. Çтаппан çакна каласа ĕлкĕрчĕ кăна — йывăçпа тем пулса иртрĕ. Вăл пĕчĕкленнĕçем пĕчĕкленсе пычĕ, тин çеç тем пысăкăш ўссе ларнăскер пĕтрĕ. Çухалчĕ. Ун тăрринчи Çтаппан ним пулман пек çĕр çинче тăрать халь.

— Мĕн ку? — тĕлĕнчĕç аптраса ўкнĕ ачасем. — Йывăç хăй çимĕçне пачĕ те çухалчĕ вĕт. Кактус пек. Вăл çеçкене ларнă хыççăн вилет теççĕ.

Çтаппан тарăхнипе карттусне хывса çĕр çине çавăрса çапрĕ.

— Сире пула! — тарăхрĕ вăл. — Пит кирлĕ пуль эсир мана? — Вăл палт çаврăнчĕ те ял еннелле таплаттарса утса кайрĕ.

Ванюкпа Нинук иккĕш çеç тăрса юлчĕç. Халь тин мĕне сыхламалла тет. Йывăç çухалчĕ. Курăкĕ те тек пит ўсмерĕ. Аптрани-

пе Нинукпа Ванюк пурнăç йывăççи пулнă вырăна çурăмпа çурăм пырса ларчĕç. Ларчĕç кăна, лăш пулчĕç чунĕсем.

Ванюк тĕнче тăрăх çаврăнса çӳренĕ хыççăн таврăннă пек туйрĕ хăйне. Пурнăç йывăççи мĕн иккенне те пĕлчĕ.

Пурнăç йывăççи вăл çĕрпе пĕлĕте çеç сыхăнтармасть, пĕтĕм тĕнчене пĕр çĕре пĕтĕçтерсе тăрать. Хăй тавра вăл сывлăша, хĕвел çутипе çĕр ăшĕнчи пурлăха пухать те пурне те пурнăç парать. Çавăнпа ăна пурнăç йывăççи теççĕ!

Пурнăç йывăç тавра çаврăннине ăнланса илнĕ халăх ун патне пырса пуççапать. Çавăнпа мар-ши юман пĕтсен чăваш пĕтет тесе каланă пирĕн ватăсем. Чăвашĕ пĕтсен пĕтĕм тĕнче пĕтет. Ара, йывăç пурнăçне ăнланса пурăнакан пĕртен-пĕр халăх пулнă пулĕ вăл, чăваш халăхĕ! Ахальтен-им ачасем Сăхăт çырми тăрăх йывăç лартса ӳстерессшĕн. Ахальтен-им кăвак хуппи пек ялтăрса çĕкленчĕ тĕнче йывăççи.

Нинук та хăй тивĕçне аван пĕлет. Пирĕн халăх вăйлă пултăр тесен чыслă та ăслă ачасем кирлĕ. Пĕтĕм тĕнчерен çăтмах туса хума пултаракан вăйлă йĕкĕтсемпе сăпайлă хĕр упраç кирлĕ. Нинук та çитĕнсе çитсен нумай-нумай ача çуратĕ... Çапла шутласа илчĕ те хĕр тата хытă хĕрелсе кайрĕ. Юрать çурăмпа çурăм ларнă та, Ванюк тантăшĕ пăлханса кайнине курмарĕ.

Ванюкăн хăйĕн шухăшĕ пулчĕ. Шкултан вĕренсе тухсан çĕнĕ йăх пуçласа ярĕ. Нинук

ӑна нумай-нумай ача ҫуратса парӗ. Ачисем пурте маттур пулӗҫ. Ҫук, пӗри те тӑван килтен таҫта тухса тарса пӗтмӗ. Тӗнче аслӑ та, Мишер ялӗ пӗрре ҫех. Тепӗр тесен, кирек ӑҫта кайсан та, ӑсӗсене ҫивӗчлетсе каяллах, тӑван ялах, ҫаврӑнса ҫитӗҫ. Ял та ватӑ ҫын пек тӗмсӗлсе суккӑрланса лармӗ. Урам ача-пӑча сассинчен татӑлмӗ...

Ҫапла ӗмӗтленсе ларчӗҫ Ванюкпа Нинук.

— Ванюк! — каччӑ енне ҫаврӑнчӗ хӗр ача.

— Нинук! — хӗрпе харӑс тенӗ пек кӑшкӑрса ячӗ каччӑ.

Иккӗшӗ те чӗркуҫленсе куҫа-куҫӑн тӑчӗҫ. Чӗтрекен тутисем хӑйсем тӗллӗнех пӗрлешрӗҫ. Ҫӗр кӑвапи хӑй пӗрлештерчӗ тейӗн. Савӑк та иккен пӗр ҫын, пӗр чун, пӗр кӗлетке пулса тӑма! Нинук халь хӑйне Ванюк пек туять. Вӑл, хӗр ача пулсан та, ун пекех вӑйлӑ, ун пекех ӑслӑ. Ӑна мӗн кирлине йӑлт пӗлет. Уншӑн вӑл тем тума та хатӗр.

Ванюк та хӑйне урӑхла ҫын пек курать. Нинука вӑл хӑйӗнчен ытларах юратать.

Ятран чӗннисӗр пуҫне урӑх пӗр сӑмах та каламарӗҫ ҫамрӑксем. Пурпӗрех пӗр-пӗрне ӑнланчӗҫ. Ҫав самантра пӗтӗм ҫут ҫанталӑк та, шӑп тӑнӑскер, сасартӑк пӗр харӑссӑн юрласа ячӗ. Ку вӑл тӑри юрри пулчӗ. Ирхи шуҫӑм ҫапнӑ уҫлӑхра тинкерсе пӑхсан та куҫа курӑнман тӑрисем касса кайса савӑнаҫҫӗ. Тӗнче авалхи чӑваш тӗрри пек тӗрӗлтетсе тӑрать. Пӗтӗм сывлӑш чӗтренет тейӗн! Ҫав чӗрӗ сывлӑш ӑша кӗрет, чуна ҫӗклет.

Сасартӑк ялта автансем шарлаттарса авӑт-

са ячӗҫ. Ку тӗнче ӑраннине пӗлтерчӗ. Ҫамрӑксем те сасартӑк тутлӑ ыйхӑран ӑраннӑ пек пулчӗҫ, шарт сикрӗҫ. Ялт ҫеҫ сиксе тӑчӗҫ ҫӗр ҫинчен. Ун-кун пӑхкаларӗҫ. Тӑна кӗрсе пынӑҫем ҫап-ҫара выртакан Сӑхӑт ҫырмине, Икӗ ҫырма пусӗнчи пӗчӗк катана тин асӑрхарӗҫ. Ҫырма тӑрӑх шап-шур тӗтре явкаланса юхать. Тӗпсӗр кӳлӗ тӗлӗнче пушшех те ҫӑра пек. Тем явӑнать унта. Чӗнет пек. Ванюкпа Нинук пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те, эпир нимрен те хӑрамастпӑр тенӗ евӗр, алӑран-алӑ тытӑнса ҫав шурӑ ҫӑвар еннелле утса кайрӗҫ.

Тӗтре сирӗлсенех ирхи шуҫӑм ӳкнӗ ҫӑл пичӗ ялтӑраса кайрӗ. Шӑнкӑр-шӑнкӑр юхса выртать ҫӑл шывӗ. Пӑл-пӑл! тапса тӑрать чӗри. Ҫӗр каҫа хурал тӑрса ӑш хыпнӑ пулӗ ҫав, ачасем хараӑссӑн ӳпне выртсах ҫӑлкуҫран тап-таса сиплӗ шыв ӗҫрӗҫ. Чӗрӗ шыв. Ӗҫрӗҫ те, чунӗсем лӑштах пулчӗҫ. Халь мӗн тумаллине те аван пӗлеҫҫӗ вӗсем. Чӑн малтан ҫак Тӗпсӗр кӳлӗ юшкӑнне кӑларса пӗтӗм уйсене, ҫырма-ҫатрана тӑкса тухас пулать. Юшкӑнпа тӑрантарнӑ ҫӗр ҫине кирек мӗн ларт — пӗтӗмпех ӳсме тивӗҫлӗ. Акӑ еплерех ашкӑрать пулӑхлӑ ҫӗр ҫинчи курӑк. Ҫӗр хута шур ути тата ӳснӗ. Ӑна ҫулса илсе типӗтме те пулать. Кун пирки ваттисемпе калаҫса пӑхас пулать.

Ҫак шухӑшсемпе каччӑпа хӗр ялалла уттарчӗҫ. Ванюкпа Нинук шур акӑшсем пек ярӑнса утса пыраҫҫӗ. Юнашарах тӑри юрри илтӗнет. Пӗр кӗтмен ҫӗртен пуҫ ҫийӗн кияк!

тесе текерлĕк вĕçсе иртет. Вăшт-вăшт-вăшт! илтĕнет çунат сасси.

Хĕвел хăпарать. Сăхăт çыранĕнчен Икĕ çырма пуçĕ чăнах та çăтмах пекех курăнать.

— Ванюк, — чĕнчĕ тусне хĕр. — Ялта çăтмах туса хурсан эсĕ мана мĕн илсе парăн?

— Мĕн кирлĕ-ха сана?

— Чаплă машина.

— Ха-ха-ха! — кулса ячĕ каччă. — Машинпа мĕн тăван?

— Вăшлаттарса ярăнса çӳретĕп, — çак ĕмĕт хĕр чĕрине кăтăкларĕ.

— Ан калаç! Эпир машина илсе мухтанса çӳреме çуралман.

— Çтаппанăн пур-çке!

— Ăна ашшĕ илсе панă. Хăй укçипе илмен.

— Ну, хамăр укçапа илсен...

— Çук, юрамасть. Хамăра валли тин пирĕн ним те тума юрамасть. Мĕн туни йăлт çĕр валли пултăр!

Хĕр ача чĕнмерĕ. Тутине тăп тытнă та тем шутлать. Кам пĕлет, мĕн пирки канăçсăрланать хĕр чĕри? Тен, ун патша майри пулас килет? Ярăнтарса кăна пырать акă. Анчах сисĕнет: каччăпа хĕр юнашар пыраççĕ пулин те, уттисем вĕсен расна.

Урисем икĕ çамрăка юлташĕн килĕ тĕлне, Михха мучи патне, илсе çитерчĕç. Антон çывăрса тăнă-ши? Ши-ик! шăхăрчĕ Ванюк. Кхмкхм! илтĕнчĕ хирĕç.

— Çывăрать-ха, вилнĕ пек çывăрать, ан вăратăр, — мăкăртаткаласа тухрĕ картишĕн-

чен Михха мучи. Сухалне шухăша кайса сăтăркаларĕ, чĕлĕмне паклаттарчĕ. — Çĕрĕпех тем аппаланса ларчĕ. Çĕр-аннепе калаçмалли аппарат тăватăп тет-и? Çĕрпе пĕр чĕлхе тупасшăн имĕш. Айван ача.

— Айван мар. Антон ăшĕнче вут çунать, çути çĕр çине ӳкет, — пĕр кĕтмен çĕртен каласа хучĕ Ванюк. Тусĕ хутне кĕрес терĕ.

— Ёлĕк çĕр те макăратчĕ теççĕ ялти ватăсем, — Ванюкпа пĕр шухăшлă пулчĕ Нинук. — Анне ман халĕ те каçхине çĕр мĕн калаçнине тухса итлет. Анчах эсир кун çинчен никама та каласа ан парăр, кулса вилĕç.

— Кулмалли кунта ним те çук. Айван тесе эпĕ ăна та, сире те кӳрентерес темерĕм. Кам çĕре юрататать — тахçанах ун чĕлхипе калаçать. Сан аннӳ Марье аппа кăмăлĕпе те питĕ йăваш та, ыттисенчен лайăхрах илтет пуль çĕр мĕн каланине.

— Эпĕ те пĕлетĕп пек, — персе ячĕ Ванюк. — Такам каласа пачĕ, хам та ăнланмастăп. Тен, пурнăç йывăççи пĕлтерчĕ куна. — Ванюк Нинук çине пăхрĕ.

— Эпĕ те тем пĕлетĕп пек, — терĕ хĕр каччă патне туртăнса.

— Мĕн, мĕн пĕлетĕр вара эсир, апăршасем? — лĕхлетрĕ мучи.

— Акă мĕн! Пурнăç йывăççи каларĕ, чĕлĕм туртма юрамасть терĕ, — сасартăк персе ячĕ сăмсине пăркаласа тăракан ача. Ара, çиле майлă вĕçен табак тĕтĕмĕ ун сăмсине кăна кăтăкламасть, куçне те çиет. Çавна чăтаймарĕ курăнать.

Куна илтсен пурте кулса ячӗҫ. Питӗ кирлӗ пулӗ темле йывӑҫа мучи туртнипе туртманни!

— Эпӗ табак туртнине ӑҫтан пӗлтӗр-ха вӑл, сан пурнӑҫ йывӑҫҫи?

— Мӗнле пӗлмест пултӑр? Хӑвӑрах ҫӗр те калаҫать терӗр-иҫ! Ман шутпа, ҫӗр эпир халӗ мӗн калаҫса тӑнине те илтет. Илтет кӑна мар, калаҫӑва та хутшӑнать. Анчах эпир ӑна, мӑнтарӑнсем, илтместпӗр, вӑл кирек мӗн каласан та ӑнланмастпӑр.

Кун пек калани вара никама та култармарӗ. Шухӑша ячӗ. Чӑн та, енчен те ҫӗр хӑй хальлӗн пурӑнма пултаракан чӗрӗ организм пулсан мӗн-ма вара ун хӑйӗн ӳчӗ ҫинче мӗн пулса иртнине тӗрӗслесе тӑмалла мар тет? Вӑл хуҫа вӗт!

Ачасем пӗр вӑхӑт шӑп тӑчӗҫ. Паҫӑрхи тӑрисем кӑна пӗр чарӑнми тӑрӑлтатрӗҫ. Мучие те тем пулчӗ. Пӳрнине пӗҫерте-пӗҫертех чӗлӗмне сӳнтерме тытӑнчӗ.

— Пурнӑҫ йывӑҫҫи тата мӗн калать? — интересленчӗ ватӑ ҫын.

— Эрех ӗҫме юрамасть тет. Акӑ мӗн! — хастарланчӗ ача. — Пӗтӗм пӑтӑрмах ҫавӑнтан тухать. Ҫын эрех ӗҫсен ҫӗр те ҫынпа пӗрле ӳсӗрӗлет тет. Пӗтӗм ӳсен-тӑран анкӑминкӗленсе каять.

— Мӗн-мӗн-мӗн? — терӗ чӑнласах анкӑминкӗленсе кайнӑ мучи. Вӑл, калас пулать, тепӗр чухне эрехне те яркалать. Ватӑ ҫын аванмарланса кайрӗ. Ача ҫапла каланинчен те мар. Сисрӗ Михха ҫӗр те, шыв та, йывӑҫ

та — пурте вёсем ҫын мӗн тунине сӑнаса пӑхса тӑнине, хӑйсене сиен кӳрекенсене сивленине.

— Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ теҫҫӗ-иха? — калаҫӑва хутшӑнчӗ Нинук.

— Мӗн ӗҫмелле тет вара? — тарӑхрӗ мучи. — Кирек мӗнле ӗҫе пурнӑҫласан та, уявра та пирӗн халӑх хӑйӗн савӑнӑҫне эрех ӗҫсе палӑртать. Ку вӑл халӑх йӑли-йӗрки.

— Халӑхӑн тени ҫут ҫанталӑкӑн тенине пӗлтермест, — хӗрсех тавлашрӗ Ванюк. — Эпир савӑнса тӑнӑшӑн мӗн-ма ҫӗрӗн-шывӑн хурланса выртмалла тет. Ҫын та, тепӗр тесен, ҫут ҫанталӑкӑн пӗр пайӗ. Апла унӑн та ҫӗр пек туйӑмлӑ пулмалла. Ун пек савӑнмалла, ун пек хурланмалла.

— Мӗнле хурланса савӑнать вара вӑл?

— Пулса, тӑранса, чечекленсе ҫитсен савӑнать пек. Ҫын та ҫаплах вӗт. Ӗҫ тусан, япалана илемлетсе ҫитерсен чун савӑнать. Тем ҫитмесен хурланать. Ӗҫе ӑна вӗҫне ҫитермелле, ҫапла калать пурнӑҫ йывӑҫҫи.

— Пурнӑҫ йывӑҫҫи, пурнӑҫ йывӑҫҫи! Эпир те унран ӗлӗк тем те пӗр ыйтса, анчах вӑл пире ун пек-кун пек сӑмахсем ним те каламан, — мӑкӑртатрӗ халь чӗлӗмсӗр, уяв черккисӗр тӑрса юлнӑ ҫын. — Ӗҫлесе савӑнмалла тетӗр-и эсир?

— Ӗҫле-ӗҫле ҫи тенӗ ӗлӗк. Ӗҫлесе ҫитерсен ҫинӗ, ҫитермесен выҫӑ ларнӑ. Апла савӑнӑҫӗпе хурлӑхӗ те ҫав ӗҫе ҫитернипе ҫитерменнинче. Каларӑмӑр, ҫитерсе пырсан эпир телейлӗ. Ҫитермесен... Акӑ мӗн! — хавхалан-

сах кайрӗ ҫамрӑк ӑсчах. — Эпир эрех ӗҫсе кайнин сӑлтавӗ — ӗҫе вӗҫне ҫитерме, тӑрлама пӗлменнинче!

— Чӑн та, кӑна эпӗ хам та асӑрханӑ, — килӗшрӗ унпа мучи. — Ӗлӗкрех эпир питӗ тӗплӗ ӗҫлеттӗмӗр, эрехне те ӗҫместӗмӗр. Уяв-сенче те сӑра кӑна ӗҫнӗ. Халӗ вара ӗҫ сапаланса кайрӗ, алӑ мӗн пырса тытать — йӑлт юрӑхсӑра тухать. Ҫавна пулах ӗҫ савӑнӑҫӗсӗр тӑрса юлнӑ та, ҫитменнине ҫитерес тесех ӗнтӗ эрех ӗҫетпӗр. Вара сӑлтавсӑрах савӑннӑ пек пулатпӑр.

— Туман ӗҫ тӑман кӑларать, — терӗ хӗр ача. — Эпӗ те ӑнлантӑм! Эрехпе супнӑ ҫын ӗҫне те тумасть, вӑхӑт иртсен мухмӑрланать те... пушшех те хурланнипе татах ӗҫет, каллех савӑннӑ пек пулать. Кунран-кун ҫапла пурӑнса ҫӗре кӗрет. Хӑй те ҫук, ун ӗҫне те никам та малалла тӑсмасть.

— Ҫавах та савӑнмасӑр та пурӑнма ҫук вӗт-ха, — парӑнмарӗ мучи.

— Ӗҫ вӗҫленине юрласа-ташласа, ырӑ сӑмах каласа, ҫынпа пӗрле ларса, ҫут ҫантталӑк панӑ ҫимӗҫе ҫисе-ӗҫсе паллӑ тумалла. Ҫавӑ кӑна! — ҫирӗплетрӗ хӑй шухӑшне Ванюк.

Пурте шухӑша кайрӗҫ. Шӑп. Вӑхӑтлӑха та пулин пуплеме чарӑннӑ ҫынсен хӑлхине тӑри юрри шӑранса кӗчӗ. Вӑштӑр-вӑштӑр ҫил вӗсен пӗвӗсене ачашларӗ. Хӗвел ӑшши ҫупӑрларӗ. Лайӑх. Лайӑх пулмасӑр! Ӗҫ тусан кӑна мар, тӗрӗс шухӑша тӗрӗс сӑмахпа палӑртсан та савӑнать ҫын.

Ванюкпа Нинукăн та, Михха мучин те чунёнче лăпкă. Халь вёсем пурнăç тупсăмне тупрёç. Пурнăç авăрне те акă çут çанталăка мёнле кирлё, çапла çавăрттарса ярёç те... ял кăна мар, пётём тёнче çăтмахланса кайё...

— Мён эсир кунта пит шухăша путса тăратăр? — шарт сиктерчё çав вăхăтра Антон сасси.

— Мён-ха, эпир çёр сассине тăнлатпăр, — хуравларё ним калама аптранă Ванюк.

— Çёр сассине? — сисчёвленсе кайрё хула ачи. — Ку питё интереслё. Кашни япалан хăйён сасси пур. Калăпăр, çуртăн та хăйён калаçăвё. Ăна ăнланма пёлмелле. Вăранса кайрăм та ирпе тăнласа выртатăп. Шăп. Çав шăплăхра тем янăрать пек. Лăпкăн, канлён янăрать пек. Юрă тесен юрă мар. Темле сасă.

— Хёрт-сурт юрлать пуль, — кулса ячё Нинук. — Анне калать: хёрт-сурт кёнчеле арлама тухса ларсан юрлать тет.

— Тетён хӳри кёске тет. Кунта хёрт-сурт мар. Кунта япали хăй янăрать. Кашни япалан, çуртăн та, хăйён чётренёвё. Кашни япала хумлă. Çав хумсем хăлхана кёреççё те. Ăн тăри юрри епле хумлăн-хумлăн килсе çапăнать. — Ача пуçне каçăртсах кăвак тӳпенелле пăхрё. Çав вăхăтра ун пичё, ахаль те тăрăхласкер, тата тăрăхланчё.

— Çёр-аннемёрён те апла хăйён хумё пулма кирлё! — тусне пулăшма васкарё Ванюк. — Эс техникăна питё лайăх пёлен, тен, вёсене, çав хумсене, тупса палăртма пултарăн.

— Палăртма пулать паллах. Анчах мĕнле хумсем-ши вĕсем?

— Çил-тăвăл тухас умĕн питĕ шăхăрчĕ вăл, çав хум, — çил пек шăхăрма пăхрĕ Нинук.

— Çил тетĕн-и? Çил вăл сывлăш куçни çеç. Çĕр сасси вара çĕр ăшĕнче мĕн пулса иртнипе çыхăнса тăмалла.

— Мĕн пулса иртнине эсĕ шыраса тупатăнах вĕт! — хавхалантарма тăрăшрĕ Антона Нинук.

Пĕр вăхăт каллех пурте шăп пулчĕç. Тем тĕрлĕ ыйту пирки пуç ватаканскерсем анрасах кайрĕç. Пурнăç йывăççи те кунта, Тĕпсĕр çăлкуç та, çил-тăвăлĕ, çĕрпе çыхăннă чăваш пурнăçĕ... Ăçтан пурне те татса парăн...

— Эпир, Михха мучи, сирĕнпе канашлама килтĕмĕр-çке-ха, — пат татрĕ шăплăха Ванюк. — Эпир кунта Нинукпа шутларăмăр-шутларăмăр та Тĕпсĕр кӳлĕри юшкăна кăларса хамăр уй-хирсене, çырма-çатрасене тăкса тухас терĕмĕр. Çав юшкăн вĕт-ха кӳлĕ тавра тăкăннă та тăвăлта... Курăк ăнт мĕнле хăвăрт ӳсет. Çапла тусан, тен, пирĕн ялта та чăн çăтмах пуçланĕ.

— Çăтмах? Мĕн çăтмахĕ! — кулса ячĕ мучи. — Çăтмах пирки чиркӳ çыннисенчен ыйтмалла. Кунта ман пĕлӳ çитмест.

— Çук, çăтмахĕ пулать-и, пулмасть-и, юшкăна кăларма пулăшу кирлĕ. Шкул ачисен вăйĕ çителĕксĕр. Ял халăхĕ мĕн калатьши тетпĕр. Эсир вара, чи ватти, ял старости. Эсир мĕнле калатăр, çапла пулать.

— Пур-ҫке вӑл ҫапла агротехника мелӗ. Сапропель теҫҫӗ-и-ха? Юшкӑн ёнтӗ. Тепӗр чухне вӑл кӳлӗсенче пухӑнса каять те ӳсентӑран валли питӗ пахалӑхлӑ япала пулса тӑрать.

— Мӗншӗн ыйтас мар, — шухӑша кайрӗ ватӑ ҫын. — Ял пухӑвне ыранах пухатпӑр. Халӑх мӗн калать.

— Тата тепӗр япала.

— Мӗн тата?

— Пурнӑҫ йывӑҫҫи ҫухалчӗ вӗт.

— Ҫухалчӗ! — пурте харӑссӑн кӑшкӑрса ячӗҫ. — Мӗнле майпа? Мӗншӗн? Сире сыхлама хӑварнӑ вӗт-ха!

Нинукпа Ванюк хӑйсемпе пулса иртнӗ пӑтӑрмахсем пирки каласа пачӗҫ. Анчах мӗншӗн ҫухалнине никам та ӑнланмарӗ.

— Тен, биологи учителӗ Хӗветӗр Хилипчӑ пӗлет? — тӗшмӗртрӗ Нинук. Хӑй вӑл биологие пит юратать те, — учителӗ те пурне те пӗлет тесе шутлать.

Ку шухӑшпа пурте килӗшрӗҫ. Ачасем ушкӑнпа ун патне кайма тухрӗҫ. Михха пичче пырас темерӗ. Ун хӑйӗн шухӑшӗ. Ҫав чӗлӗмпе черкке ырӑнне мӗн шыраса тупмалла-ши тет вӑл.

Ачасем кайсанах пӳрте кӗчӗ те чей лартса ячӗ. Яппунсен чей культури питӗ вӑйлӑ аталаннӑ теҫҫӗ. Вӗсем чей ӗҫсех ӑша кантараҫҫӗ. Чӑвашсем вара... Енчен те эрех-сӑра вырӑнне чей майлӑрах сиплӗ шыв хатӗрлеме вӗренсе ҫитсен мӗнле лайӑх пулнӑ пулӗччӗ. Таса шыв тейӗпӗр. Таса шыв? Ара,

Тёпсёр çăлкуçри шыва ёçсен вăй кёрет теççё мар-и-ха? Çав кӳлё патне часовня туса лартас та пачăшкăна кёлтуса тасаттарас. Ёç хыççăн та, уявра та çав шыва ёçсе сăмах калас, унпа хăналаннине чи пысăк чыс тес. Шывран таси, унран хакли çук теççё. Халăх ку сăмахсене тахçанах каланă. Шута илменни кăна.

Савăнса кайнă мучи чёлёмне туртса кăларчё. Туртса ярас тенёччё. Асилех кайрё. Ара, туртма хушман вёт! Мучи туртас вырăнне сывлăша тарăннăн сывласа илчё. «Ара, — терё вăл яланхилле, — табак вырăнне таса, сиплё сывлăшпа сывлама вёренес пулать. Сывлăш вăл гимнастика теççё-и-ха!»

Çак сăмахсемпе Михха мучи урама тухрё, унти сывлăш тивёçтермерё ăна. Пахчана кёчё. Кунта сиплёрех те тутлăрах пек. Тарăннăн сывласа илчё. Тутлă-тутлă пулса кайрё. Татах та татах сывларё. Пуçё çаврăнсах кайрё. Ку чёлём туртнинчен те лайăхрах пек туйăнчё. Акă ăçта пурнăç тупсăмё! Кашни килте таса та сиплё сывлăш пахчисем кирлё. Ватă çын пуçёнче çак шухăш ытларах та ытларах тёвёленчё. Ыран пухура юшкăн кăларасси çинчен çеç мар, халăх пурнăçё пирки те сăмах хускатас. Урăхла юрамасть. Юрамасть кун пек пурăнма. Кăçал çур çулта кăна автан авăтман яла вун тăваттăн ăсанчёç. Мишерсем кун пек нихçан тăкăнман теççё. Мён пулчё? Эрех ёçсе вилеççё. Ёçне тăваканё те çук. Пёрлешӳллё хуçалăх саланса пырать. Шăп çак вăхăтра

тапранчĕç ачасем. Яла мĕнле упраса хăварасси пирки калаçаççĕ. Çамрăк пулсан та ăслă. Çут çанталăкĕ те кӳренсе çитрĕ пулас. Мучи тинтерех кăна юсаса çитернĕ вите тăррине пăхса илчĕ. Юрать Антон килсе пулăшрĕ. Пĕччен пурăнаканскер мĕнех тăваятчĕ.

Михха мучи кăш-каш гимнастика турĕ те пӳрте кĕрсе кайрĕ. Тепĕртакран шыв йăтмалли пысăках та мар бидон йăтса тухрĕ. Пӳрт умĕнче тепĕр хут чарăнса тем сăмахĕ каларĕ те чике сухалне çил çинче вĕçтерсе Икĕ çырма пуçĕ еннелле таплаттарчĕ.

Ачасем шкула кĕпĕрленсе кĕнĕ чухне биологи учителĕ микроскоп умĕнче ларатчĕ. Вăл та çĕр çывăрман пулас. Куçĕ хĕрелнĕ. Сăнран ĕшеннĕ пек курăнать. Вĕренекенĕсене курсан хавасланса кайрĕ. Ачасем ăна хăйсен шухăш-ĕмĕтне каласа пачĕç. Учитель юшкăн кăларас ĕçе ырларĕ. Хăй тĕпчевĕпе паллаштарчĕ.

— Ку шыври микроорганизмсем питĕ хăвăрт аталанаççĕ. Малтанрах курнисем пĕр икĕ-виçĕ миллиард çул каярах пурăннă пулсан, халь çеç микроскоп айĕнче сăнанисем пĕр миллиард çул каярарахрисем. Питĕ аталаннă! Кун пек пулсан нумай та вăхăт иртмĕ — Çĕр çине çĕнĕ чĕр чунсем килĕç. Мĕне пĕлтерет ку? Эпĕ нимĕн те ăнланмастăп.

— Ку вĕт, мĕн вĕт... — терĕ Ванюк. — Çăл пиртен урăх çын туса хурасшăн. Хальхисене йышăнасшăн мар вăл. Çĕнĕ эволюци

пуçлать. Çăла чулпа çапнăран çапла пулчĕ ĕнтĕ ку.

— Çăл çеç мар, çĕр хăй тарăхса кайнă. Вăл пирĕн кашни хусканăва курать, туять. Çĕр çине çӳп-çап пăрахма юрамасть. Сурмалла мар. Çĕр чăмăрĕ — калама çук хăватлă шутлав машини.

— Чăн та çапла пулсан ку пирĕншĕн, этемлĕхшĕн, калама çук пысăк хăрушлăх, — шикленсе ӳкрĕ Ванюк. — Эпир ăна пач кирлĕ мар пек килсе тухать. Юман пĕтсен чăваш пĕтет тесе ахальтен каламан пуль. Пурнăç йывăççи те пĕтрĕ вĕт. Мĕн сăлтава пула куç умĕнчех сывлăшра ирĕлсе кайрĕ?

— Кун пекки пулать. Пур япала та пĕтет. Йывăç кăна мар, çын та вилет, — лăплантарчĕ учитель. — Хăш-пĕр пулăсем те вăлча сапаççĕ те вилеççĕ. Хăраса ӳкме кирлĕ мар. Тен, кам пĕлет, пурнăç йывăççи тепре шăтса тухĕ.

— Ку та пирĕнтен кăна килме пултарать. Эпир малашне те сĕмсĕррĕн йăлт таптаса пырсан тĕнче йывăççи кăна мар, çын хăй те пĕтет.

* * *

Михха мучи, Тĕпсĕр çăлкуçĕ умне çитнĕскер, шыв çине тĕлĕнсе пăхса ларчĕ. Вăл, чăн та, чĕрĕ чун пек курăнать. Шыв çийĕн çутă хум вылять, тĕпĕнчен чĕре пек пăл-пăл тапса тăрать. Мучи кĕлтума хатĕрленчĕ. Кăшт шухăшласа ларнă хыççăн шыв умне ӳксе пуççапрĕ. «Ырлăх-сывлăх парсамччĕ, — илтĕн-

чĕ мăкăртатни, — ĕç хыççăн ĕçсе ăша кантармалăх, уявра сыпса савăнмалăх пар, таса шывăм. Эпĕ çăлкуçран кăшт ăсса илнĕшĕн каçар, сана уншăн ĕçпе тавăрса парăп. Часах юшкăна кăларса тĕрлĕ тĕслĕ курăк ӳстерĕпĕр, çăлри сиплĕ шывпа шăварăпăр. Айăп ан ту, сип пар, пил пар пурăнма».

Çак сăмахсемпе ватă çын çăла ӳпĕнсе пĕр сыпкăм шыв ĕçрĕ, питне çурĕ, унтан таса та çап-çут шыва бидона тултарчĕ.

Шыв çийĕ çав вăхăтра вĕттĕн-вĕттĕн хумханса илчĕ. Йăлтăр-ялтăр çиçрĕ хум тăрри. Тăрисен юрри тата хытăрах янăрарĕ. Ку сăмахсем çут çанталăка килĕшрĕç пулас. Мучие хăйне те питĕ канлĕ пулса кайрĕ. Вăй кĕчĕ пек ăна. Татах ĕçес тесе шыв çине ӳпĕнчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ: çăлкуç тĕпĕнчен ун çине палламан çын пăхса илчĕ. Хура сухаллă хăй, сăн-пичĕпе çамрăк. Тахçан таçта курнă пек ăна. Тӳрех ăнкарса та илеймерĕ мучи ку вăл хăй пулнине. Çамрăкрах чухне шăпах çаплаччĕ вĕт-ха!

Шыв ĕçесси пулмарĕ. Шухăша кайнă мучи сиплĕ шыв тултарнă бидонне çĕклерĕ те килĕ еннелле çăмăллăн кăна утса кайрĕ. «Акă вăл чĕрĕ шыв, — мĕлтлетрĕ ун пуçĕнче. — Эпир ку таранччен вил шыв ĕçсе пурăннă вĕт. Ку вара чĕрри, çан-çурăмпа сăн-пите çамрăклантараканни, вăй кĕртекенни! Эрех мар, сăра та мар, чĕр шыв кирлĕ пире!» Чарăнса тăчĕ Михха мучи. Хăй çине пăхса илчĕ те ахăлтатса кулса ячĕ. Ял еннелле çил пек вĕçтерчĕ вăл. «Чĕрĕ шыв! Чĕрĕ шыв!» — илтĕнчĕ хыçра.

### Халăх вăйĕ

Пуху кун пек кĕрлесе тăрасса никам та кĕтмен. Лавкка умĕнчи лапамра çĕре яхăн çын пуçтараннă. Хĕрарăмсем уйрăмрах тăраççĕ: ваттисем — тепĕр çĕрте. Çамрăксем çукпа пĕрех. Ачасем биологи учителĕ тавра пуçтарăнса тăнă.

Михха мучи пухăва шăп та лăп калаçса килĕшнĕ вăхăтра уçрĕ.

— Юлашки вăхăтра, — пуçларĕ вăл хăй сăмахне, — ял пĕтес патнех çитрĕ. Мĕн туса пурăнать ял халăхĕ — калама хĕн. Сăмахран акă, шкул хупăнас хăрушлăх сиксе тухрĕ. Ялта пĕр вăтăр ача пур-и шкула каяканни? Вĕсем те, аслăраххисем, Ташкиле çӳреççĕ. Кун пек пулсан шкул тепĕр вун çултан хупăнать. Кăçалхи çур çулта вун тăватă çынна çăва çине ăсатрăмăр. Кун чухлĕн нихçан та вилмен пирĕн ялта. Çуралнисем вара икĕ ача. Хăвăрах танлаштарса пăхăр. Тепĕр алă çултан апла ял та пĕтет. Мишер тахçантанпах чаплă та хăватлă ял пулнă. Халĕ вара? Акман-вырман çĕрсем тем чул. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх пĕтсе пырать. Фермăсем пушă лараççĕ. Ялта ватăсем кăна тăрса юлчĕç. Мĕн тесе хăваласа кăларса ятăр ачăрсене тăван килĕрсенчен? Мĕн, ют çĕрте кăна укçа çапма пулать терĕр-и? Укçа тесе ял çапла юхăнса вырттăр-и? Мухтавлă Мишер ялĕ çĕр çинчен çухалтăр тетĕр-и?

Михха мучи пĕр кана шăпланчĕ. Ял халăхĕ кĕр кĕрлесе кайрĕ.

— Çĕр-аннемĕр те кун пек лару-тăрăва чăтайми пулчĕ пулас, — тухса тăчĕ маларах Хĕветĕр Хилипчă. — Иртнĕ çил-тăвăла пурте астăватăр. Сăхăт çырминчи пулă çухалчĕ. Уйра путене авăтма пăрахрĕ. Кураксем те йăва çавăрмаççĕ-çке, иçмасса. Вырьăх-чĕрлĕх пĕтсе кайрĕ. Тыр-пул та халĕ ĕлĕкхи мар. Гектартан çирĕм центнер илсен савăнса тăратпăр. Ку тухăç çителĕксĕр. Çавăнпа чухăн пурăнатпăр мар-и?

Халăх тата хытăрах кĕрлесе кайрĕ.

— Мĕн тумалла тет вара? — илтĕнчĕ унтан та кунтан.

— Акă мĕн! — пуху варрине сиксе тухрĕ Ванюк. — Çырмасене, уйсене юшкăн кăлармалла. Тислĕк вырăнне пултăр. Юшкăнĕ Тĕпсĕр кӳлĕре чылай. Тата ахальли те мар. Çил-тăвăл хыççăн вăл ăçта ӳкнĕ, çавăнта курăк питĕ хăвăрт ӳсет. Кӳлĕ хĕрне йывăç та ӳссе ларнăччĕ... Анчах вăл теме пула пĕтрĕ. Енчен те ял халăхĕ юшкăн кăларас ĕçе хутшăнсан ял тавра, çырмасенче те курăк ешерме пуçлĕ. Вара тин выльăх шучĕ ӳсĕ. Тыр-пул та тухăçлă пулĕ.

Шкул ачи çапла хĕрӳллĕн калаçни ял халăхне тĕлĕнтерсе ячĕ. Кулакансем те тупăнчĕç.

— Мĕн Тĕпсĕр кӳлли пултăр? — шăл йĕчĕ Тулай Иванĕ. — Курăс хутмалăх та çук. Юшкăнĕ те унта пĕр çăпала ăсса илмелĕх çеç пухăнать.

Куна илтнĕ халăх шавласа кайрĕ, ахăрса кулса ячĕ.

— Юшкăнне кăларма пулĕ-ха, ăна сапропель теççĕ, — лăпкăн тăсрĕ ача шухăшне ял агрономĕ, пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçи Галина Ивановна. — Анчах удобренисемсĕр те май килмест. Вĕсем вара хаклă. Илме укçа çук. Сухалама, акма-вырма техника çитмест. Вĕсем те кивелсе çитнĕ. Мĕн тумалла?

Калас пулать, Галина Ивановна Петрова халăх тахçанах ĕçлеме пăрахнипе питĕ тарăхса çитнĕ. Анчах хальхинче халăх умĕнче вăл хăй кăмăлне пĕрре те палăртмарĕ.

Ӳкĕтлесе те пăхнă вăл — усси пулман. Çамрăксем ялтан тарма тытăнчĕç. Хуçалăх ертӳçисем те, вĕсем умлăн-хыçлăн улшăнса пычĕç, тухса кайрĕç. Вара ку ĕçе Галина Ивановна хăй аллине илчĕ.

— Ку пĕтен тĕнчене çĕнĕрен пуçласа ярас пулать. Акă мĕн! — хĕрӳленчĕ Ванюк. — Тĕпсĕр кӳлĕ хăй çапла калать.

Пĕр лăпланнă халăх тепре кулса ячĕ.

— Пурнăç йывăççи хăй çапла каларĕ! — тек пытарса тăмарĕ, хăйсемпе мĕн пулса иртнине Ванюк йалт каласа пачĕ.

Ку калав халăха хумхантарса ячĕ. Хăшĕ-пĕрисем ачана хăваласа яма та хатĕр пулчĕç.

— Кай кунтан! — хăмсарчĕ ăна Тулай Иванĕ. Хăйне вăрăпа тытнăшăнах кураймасть тем. — Тупăннă кунта пĕлӳçĕ! Сансăрах пĕлеççĕ. Акă агроном мĕн калать! — Çак сăмахсемпе ачана тĕрте-тĕртех халăх хушшине кĕртсе ячĕ.

Аптраса ӳкнĕ Ванюк хирĕçлеймерĕ. Çтаппан çавăнпа усă курса ун карттусне куç та-

ранах пусса лартрĕ. Лĕх-лĕх-лĕх кулчĕ хăй.

— Тăхтăр-ха, тăхтăр, — ача хутне кĕчĕ учитель. — Кунта ним кулмалли те çук. Çут çанталăка ăна итлеме пĕлес пулать. Йывăç та тем те пĕр каласа кăтартма пултарать. Вăл япăх ӳсет тĕк — апла çĕрĕ начар. Çĕре лайăхлатас пулать. Çавă кăна. Юшкăнĕ те чăнах та ахальли мар пулас.

Хĕветĕр Хилипчă халăха хăй тĕпчевĕпе паллаштарчĕ. Юшкăнĕ те, шывĕ те чăн та чĕрĕ япаласем-мĕн. Вĕсемпе усă курма пĕлсен аван пулĕччĕ.

Халăх пĕрех иккĕленчĕ.

— Эпĕ те пĕлетĕп, — илтĕнчĕ Нинук сасси. — Эпир туса илекен тыр-пула, пĕтĕм çимĕçе хăй хальлĕн ӳсме вĕрентес пулать. Çапла каларĕ мана та пурнăç йывăççи.

— Мĕнле-мĕнле? — аптраса ӳкрĕ агроном. — Кун пеккине илтмен.

Кун пеккине пухăва пуçтарăннă хĕрарăмсем те илтмен. Нинука пит сăнаса пăхаççĕ.

— Кашни ӳсен-тăран пĕр-пĕрне пулăшса, хӳтĕлесе тăрать. Çемьери пек. Калăпăр, эпĕ те аннене пулăшатăп, анне те мана астутарсах тăрать. Çут çанталăкра пур япала та пĕр-пĕринпе пулăшуллă çыхăнса тăрать. Вăрман, пурте пĕлетпĕр, хăй тĕллĕнех ӳсет. Çаранра та тем тĕрлĕ курăк та пур. Ахальтен мар ку. Пирĕн те çапла тума ăс çитересчĕ. Вара акмасăр-тумасăр тырă вырса илĕпĕр.

Ку пушшех те савăнтарса ячĕ халăха. Хальхинче хĕрарăмсем те кулса ячĕç. Ай, ку Марье аппа хĕр ачи тем те пĕлет теççĕ. Ни-

нук вара вăтанса кайрĕ. Вĕлт çеç çаврăнса ачасем патне, Ванюкпа юнашар, пырса тăчĕ.

— Эпĕ малтанлăха сăнав участокĕ туса пăхма сĕнесшĕн, — хăй шухăшне тăсрĕ биологи учителĕ. — Шкулти йăрансем ытла та пĕчĕккĕ. Эсир пире пĕр вунă гектар çĕр уйăрса парсан эпир ăна хамăрах пăхса тăрăпăр. Техникăпа пулăшма тивет паллах.

Учитель калани халăха ӳкĕте кĕртрĕ. Тулай Иванĕ те кулма пăрахрĕ. Агроном та пулăшма хатĕр. Халăх Икĕ çырма пусĕнчен пуçласа Самать таран ахалех выртакан çĕре сăнавлăх уйăрса пама килĕшрĕ. Юшкăнне турттарма та çывăх. Тен, ĕç ăнса пырсан шыв пăрăхĕсем те хума май килĕ. Çапла шутларĕç. Апла, пĕтмен-ха Мишер халăхĕ. Акă тепре çĕкленсе илĕç те тĕнчипех çăтмах туса хурĕç.

Тепĕр кунне пурте юшкăн кăларма тухрĕç. Кашниех витре йăтнă. Ара, ял ĕçченĕ вăл мĕн тумаллине каламасăрах пĕлет. Машинăпа унта пыраймастăн. Шурлăхлă. Экскаватор та кĕреймест. Витрепе вара сăрта йăтма пулать. Машини те самосвал йышши кирлĕ. Шăпах çавна панă та хуçалăх ертӳçи.

Халăх пухăнсан Михха мучи мала тухса тăчĕ те çăл умне чĕркуçленсе ларчĕ. Пуç тайса тем мăкăртатма тытăнчĕ. «Каçар пире, — терĕ пулас ăрăмçă, — эпир сана усал тума килмен. Пулăшу ыйтатпăр. Юшкăн пар. Шыв пар. Ахаль тумăпăр. Тыр-пул ăнса пулсан сана та тăрантăпăр. Мĕн чухлĕ илсен те тĕппи сан ан курăнтăр». Çак сăмахсемпе

мучи ӳксе пуççапрĕ те ывăçпа шыв ăсса илсе пĕр-икĕ сыпкăм ĕçрĕ. Юшкăнĕпе питне сĕрчĕ.

Тĕпсĕр çăлкуçа çакă килĕшрĕ пулас. Шыв çиййĕн вĕттĕн-вĕттĕн хумсем çĕкленчĕç. Хĕвел çути хум тăррисенче пин-пин çутă çутрĕ. Çут çанталăк та ыр сунать тейĕн. Ватă çын хыççăн учитель сĕннипе пурте шыв ĕçсе пылчăкпа сĕрĕнчĕç. Халь тин айккинчен пăхсан ку кулăшла та курăнать пуль, анчах ун чухне пĕри те куласси пирки шутламарĕ. Ан тив, халь вĕсем тăван çĕрпе вараланнă. Халăх вăраннă.

Акă Михха мучипе Хĕветĕр Хилипчă вĕрентсе пынипе Самать енчи уйра пылчăк купи хыççăн пылчăк купи ӳссе ларма тытăнчĕ. Салатма кирлĕ мар теççĕ. Çумăр çусан çĕре хăех сăрхăнса анса каять. Çумасан шăваратпăр. Акасса учитель малтанлăха курăк кăна акса пăхасшăн.

Çак ĕçе аякран пăхса тăрсан халăх пушар сӳнтерме пуçтарăннă тейĕн. Çынсем черетленсе тăнă та алăри витресене пĕрин аллинчен теприне парса тăраççĕ. Ĕç хăвăрт пулса пырать. Савăнăçлă пурте. Кун пек пĕрле кар тăрса ĕçленине астумасть ял халăхĕ. Ваттисем кăна ĕлĕкчĕ те ĕлĕкчĕ текелеççĕ. Çамрăксем пуçра çавра çĕлĕкчĕ тесе шӳтлеççĕ.

Ку нимене пурте тухрĕç. Тулай Иванĕпе Çтаппан çеç курăнмарĕç. Ахăртнех, вĕсем ку ĕçе ĕненмерĕç.

Халăх сурать — кӳлĕ пулать теççĕ. Пĕр кунра юшкăна турттарса та хучĕç. Тĕпсĕр

кӳлĕ вара мĕнле пулнă, çаплипех юлчĕ. Юшкăнĕ те пĕтмерĕ, шывĕ те хухмарĕ. Çăлкуç чĕри ĕлĕкхи пекех пăл-пăл тапса тăрать. Апла вăл чăнласах тĕпсĕр! Кашни пĕлет, ку чĕрĕ шывсăр тек пурăнма май çук. Çут çанталăк çынна хăй аллине тăсса пачĕ. Чĕрине те уçрĕ. Хăйне усал тунисене те манса кайрĕ. Ара, çын ун ачи-иç! Халь ун пепкисем мĕн хăтланнине амăшĕ пек кăмăллăн пăхса выртрĕ çĕр.

## Хăрушă ĕç

Тепĕр кунне ир-ирех, хĕвел тухиччен ех, вăранса кайрĕ Ванюк. Шăм-шак тем сурать пек. Ĕнер кунĕпех ĕçленĕ-çке. Ку çеç те марха. Ун чĕри сасартăк канăçсăрланса ӳкрĕ, инкек пулассăнах туйăнать. Ача вырăн çинчен хăвăрт кăна сиксе тăчĕ те тумланса урама тухрĕ. Тем çитмест ăна. Тен, тăри юрри? Тăрисем юрламаççĕ-çке! Тӳпе шăп. Сӳ-ӳ туса çӳçенсе кайрĕ ача. Ырра мар ку. Ванюк хăй те сисмерĕ, Тĕпсĕр çăлкуç еннелле тапса сикрĕ. Темскер пулнах унта! Çĕмрен пек вĕçтерсе чупса çитрĕ вăл кӳлĕ хĕрне. Унта, çапла, инкек!

Такам çăлкуçа тем пысăкăш чул пăрахса хупласа хунă. Шарт сикрĕ ача чĕри. Çилтăвăл тухсан тем курса ларăпăр! Хăвăртрах! Ванюк çăл кутнех чупса пычĕ те чула илсе пăрахма тăчĕ. Ăçта унта? Тем пысăкăшскер хускалмарĕ те. Кун пек йывăр чула пĕччен йăтаяс çук. Вăл çăла пусăрласах хунă. Шывĕ

те тухмасть. Çук, кун пек юрамасть. Ача тепĕр хут тапаçланса пăхрĕ. Хальхинче çĕклесе мар, шутарса пăхас терĕ. Чул, чăн та, хускалчĕ. Аялта пылчăклă-ха та, шутарма та пулать. Татах, татах мекĕрленчĕ ача. Çăл уçăлсах çитнĕччĕ ĕнтĕ. Шывĕ те юха пуçланăччĕ. Çав вăхăтра ăшра тем талт туса татăлса кайрĕ. Ача самантрах сывлăшсăр пулса ларчĕ. Хускалаймасть те. Кăвапа тĕлĕнче питĕ-питĕ хытă ыратать.

Ку пĕтĕмпех пĕр кĕтмен çĕртен пулса иртрĕ те, Ванюк аптранипе ним тума пĕлмерĕ. Кăвапа тĕлĕнче ыратни хускалма та памасть. Шыв шăнкăртатса юхни кăна кăшт лăплантарать каччăна. Çăлкуç ĕлĕкхи пекех пăл-пăл тутарса тапать. Таврара шăп.

Çав вăхăтра хĕвел Сăхăт çырми енчен тухрĕ те, пайăркисем шыв çийĕн выляма пуçларĕç. Халь тин пурте йĕркеллĕ пек. Анчах пĕрех тем çитмест. Тавралăх ытла та шăп. Шăнкăр-шăнкăр! шыв юхни кăна илтĕнет. Унччен те пулмарĕ — тăрисем пĕр харăссăн юрласа ячĕç. Ванюк тин кăмăллăн кулса илчĕ. Пулчĕ терĕ вăл. Халь тин Тĕпсĕр кӳлĕ çилленес çук. Ял çийĕн те çил-тăвăл çĕкленмĕ...

Унăн куçĕ умне пĕтнĕ ял ӳкерчĕкĕ сиксе тухрĕ. Сиксе тухрĕ те мĕлке пек çухалчĕ. Тек ун пекки пулмĕ! Ача шухăшĕпе пĕр пулса çăлкуç та тек ун пекки пулмĕ тенĕ пекех варкăш çил кăларса унăн çӳçĕсене вĕçтерсе илчĕ. Чуна ку пушшех те лăплантарчĕ. Тав тунă пекех пулчĕ.

Михха мучи ҫав вăхăтра ҫăл патне ҫул тытнăччĕ. Чĕрĕ шыв ăсса килем-ха терĕ вăл. Ҫав сăра-эрех вырăнне халăх Тĕпсĕр ҫăлкуҫ шывне ĕҫме тытăнсан тем пекехчĕ тесе ĕмĕтленчĕ. Чĕрĕ шыв темрен те хăватлăрах пек. Вăй кĕртет кăна мар, чуна та хăватлантарать. Хальхи ҫамрăксем атту шыв вырăнне «урнă ĕне сĕтне» ĕҫме пуҫларĕҫ вĕт.

Чăнкăр-чăнкăр! илтĕнчĕ шăпланнă тавралăхра. «Тем ун пек пулакан марччĕ-ске ирпе, — тесе шутларĕ мучи. — Ҫанталăк улшăнать-и». Ҫав вăхăтра ҫӳлте-ҫӳлте, куҫ курман ҫĕрте, тăрисем каҫса кайса юрласа ячĕҫ. Михха мучие ку питĕ килĕшет. Апла пĕтĕмпех йĕркеллех пулать тет.

Йĕркеллех те мар ҫав. Ҫăл ҫумĕнче ахлатса выртакан ачана курсан вăл хыпăнса ӳкрĕ, ку шурлăхлă ҫĕре тем пысăкăш чул ăҫтан килсе выртнинчен тĕлĕнчĕ. Халь тин Ванюк каласа ăнлантарса пани те ҫырлахтармарĕ старостăна. Витрине ҫăл кутне пăрахса хăварсах ял еннелле чупрĕ. Хăвăртрах «васкавлă пулăшу» чĕнсе илес те чула ҫăл хĕрринчен тата аяккарах шутарса хурас терĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, яла «васкавлă пулăшу» машини ҫитрĕ, тухтăрсем Ванюка больницăна илсе кайрĕҫ. Кăвапи татăлнă ун.

Усал хыпар утпа ҫӳрет теҫҫĕ. Тепĕртакранах ял халăхĕ Тĕпсĕр кӳлĕ патне пухăнчĕ. Вăйпитти арҫынсем чула самантрах аяккарах шутарса хучĕҫ. Ҫук, таҫта илсе каймарĕҫ, ҫакăнтах пултăр терĕҫ. Халь тин ҫăл кутне пыма ҫăмăлрах пулĕ, пылчăк та ҫăрăлмĕ.

Чула кам килсе хуни пирки те калаçрĕç. Анчах аларан ярса тытман та — кама пӳрне тĕллесе кăтартăн.

Шавлакаласа тăнă хыççăн халăх саланчĕ. Кашнин килте хăйĕн ĕçĕ пур, кунта пуç ватса тăнипе вăл малалла каяс çук. Саланнисенчен пĕри те чул çине темле сас паллисем çырса хунине асăрхамарĕ.

Шкул ачисем Ванюк патне больницăна кайма шут тытрĕç. Пуричен ытла Антон пăшăрханчĕ. Больница, калас пулать, Икĕ çырма пусĕнчен чылай аякра, ялтан пĕр вунă çухрăмри район центрĕнче, вырнаçнă. Автобус кĕтсе тăриччен вĕсем çуран утас терĕç.

Акă пĕр ушкăн ача калаçкаласа çул тăрăх таплаттарса пырать.

— Эх, мĕн тума пынă-ши вăл çав чул патне? — пăшăрханчĕ Нинук. — Кайран та, çын пухăнсан, илсе пăрахма пулнă вĕт-ха ăна.

— Паттăра тухасшăн пулнă пулĕ, — ним пулман пек каласа хучĕ Çтаппан. Утнă чухне хăй пĕрмаях хĕр çумнерех пыма тăрăшрĕ, ун çине куç хӳрипе те пулин пăха-пăха илчĕ. Çакна Нинук та сисрĕ.

— Тăхтаса тăма май килмен пуль, — хӳтĕлерĕ тусне Антон, — мĕншĕн тесен çĕр çилленсе кайма пултарнă. Вара каллех ял çине тăвăл килсе çапатчĕ. Ванюк çавна пĕле тăркач васканă та. Тăхтаса тăма юраман.

— Кам килсе хунă-ши чулне? Ăна пĕччен çын йăтаяс çук, — каллех тĕпчерĕ Нинук.

— Кирек кам пулсан та вăл питĕ хура

чунлӑ ҫын. Тепӗр тесен, чулӗ ҫав ҫӑлран инҫе те мар Икӗ ҫырма пусӗнче выртатчӗ мар-и-ха? Ёлӗк унта Киремет йывӑҫҫи пулнӑ теҫҫӗ. Авалхи чӑвашсен ҫӑви те ҫавӑнтах пулнӑ тет, — пӗлтерчӗ тем те пӗлекен Антон.

— Тетӗн хӳри кӗске тет. Ӑҫтан пӗлетӗн вара ку япаласене? Эсӗ ял ачи те мар вӗт-ха, — утнӑ ҫӗртех ура хурам пекки турӗ Ҫтаппан.

— Асатте каласа парать мана. Вӑл тем те пӗлет. Чӑваш халӑхӗ ҫав Киремет йывӑҫҫине касса янӑшӑн пӗтет тет. Ҫав йывӑҫ питӗ хитре пулнӑ тет. Кӑвак юман майлӑ пулнӑ тет.

— Ха-ха-ха! — кулса ячӗ Ҫтаппан, урипе тапа-тапа тусана Антон ҫинелле ячӗ. Тем ҫиллентерет ӑна. Анчах мӗн иккенне хӑй те пӗлмест. — Кӑвак юман мӗнне кам пӗлет, кам курнӑ?

— Ҫав эпир курнӑ пурнӑҫ йывӑҫҫиех пулман-ши вӑл? — тӗшмӗртрӗ Нинук. — Вӑл та питӗ хитреччӗ. Асамат кӗперӗ пек ялтӑраса тӑратчӗ. Ҫухалчӗ. Касса ярасран хӑрарӗ пулинех. Тулай Иванӗ те ун тавра явӑнса ҫӳретчӗ мар-и-ха, — тахҫан хурӑн катине сыхланине аса илчӗ хӗр ача. — Унран тем те кӗтме пулать. Эсӗ те ҫав йывӑҫ таврах явкаланса ҫӳреттӗн. Улмине те эсех татрӑн.

— Эпӗ мӗн, ман сире пулӑшас килчӗ. Улми вара мана тивӗҫмерӗ те, — кӳренем пекки турӗ Ҫтаппан.

— Сан валли те пулман вӑл апла. Ан пӑшӑрхан.

Ачасем пӗр кана чӗнмесӗр утрӗҫ. Кӗҫех

вёсем шкултан вёренсе тухёҫ те пурнăҫ ҫулёпе малалла утса кайёҫ. Мёнле пулё ёнтё вăл. Кашнин хăйён шухăшё. Антон шутлав машини ҫинчен ёмётленет. Нинук Ванюка хёрхенет. Ҫтаппанăн вара пёр вăрттăн шухăш тёвёленет пуҫёнче. Вăл шкул пётерсенех хулана вёренме каясшăн. «Эх, — тет ăшёнче, — Нинук та пёрле пулсанччё...»

Кашнин хăйён шухăшё...

— Итле-ха, — Ҫтаппан Нинука хăй патне туртса илчё, — кăшт юлса утар-ха. Ман санпа калаҫмалли пур. — Темле питё чеен пăхкалать вăл.

— Мён тата! Васкамалла пирён.

— Халь тин сан васкамалли ҫук. Вăл чирлё. Акă ура ҫине те тăраймё. Грыжа ун. Сиплесе ярсан та, хăвах пёлетён, каллех ҫав тёлтех тепре тухать. Йывăр япала ҫёклеме юрамасть. Ялта та вăл пурăнаймё. Кунта йывăр ёҫлемелле.

— Мёнле хăятăн эсё ҫапла калаҫма! — аллипе хăмсарчё хёр. — Эпир ялтах ҫăтмах тăватпăр тенё.

— Ха! — кулам пекки турё каччă. — Ялта никам та ку таранччен ҫăтмах кăна мар, ырă пурнăҫ та тăвайман. Ял вăл тамăк. Кунта эсё резина атăпа фуфайкăсăр пуҫне урăх ним те кураймăн. Ха!

— Ялта укҫаллă пулма ҫук-им вара?

— Ҫук! Мёншён тесен ял хула аллинче. Унăн хулари ҫынсене тăрантса пурăнмалла. Хуларисем вара ёҫлемесёрех ҫиеҫҫё. Тутлă ҫиеҫҫё тата!

— Ан тыттар. Ĕçлемесĕр мĕнле çийĕн?

— Мĕнле-мĕнле? Пасарта сутă туса, акă мĕнле.

Хĕр ача чĕнмерĕ. Кун пек каланине вăл хăй те пĕрре кăна мар илтнĕ-ха. Амăшĕ те ăна килте ан юл тет. Ман пек пылчăк çăрса ан пурăн тет. Кашни амăшĕ хăй ачине ырă сунать, лайăхрах пултăр тет.

— Атя пĕрле каяр хулана. Мĕн тăван халь çав чăлах Ванюкпа? Эпир хулара çăтмах туса хурăпăр. Эпĕ сана качча илĕп. Тух мана качча!

— Кĕтсех тăр! — мăнаçланчĕ хĕр. Анчах ун чĕринче çĕлен явăнать тейĕн. Хула. Ялтăртататать кăна. Ун хăйĕн хваттерĕ, тем чул чаплă тумтир, машина... Амăшĕн пек ялти пĕр пĕчĕк пӳрт мар ĕнтĕ. Çапла мĕскĕн пек пурăнса ирттерме çуралман Нинук, чăн та. Ванюк та... Ванюк çине тек шанма юрамасть. Усси пулас çук.

— Ну мĕнле? — хистерĕ каччă.

Хĕр чĕнмерĕ. Вăл иккĕленчĕ. Кун пек юратăва сутнă пек пулать вĕт-ха. Тепĕр тесен... Юрату вăл лайăх, анчах кашни кун çиес килет. Çитет серте яшки çисе пурăнса. Ялта ытлăн-çитлĕн аш-пăш та лекмест. Амăшĕн пенсипе малалла нумай кайăн-и?

— Юрать, — килĕшрĕ хĕр шăл витĕр. — Анчах качча илес пирки ан та ĕмĕтлен. Малтан пирĕн вĕренсе тухмалла-ха.

Маларах утса кайнă Антон вĕсем мĕн калаçнине тăнламарĕ. Унăн хăвăртрах тусĕ патне çитес килчĕ. Тем пулнă ĕнтĕ унпа. Мих-

ха мучи кăвапи татăлнă терӗ. Мӗн япала вăл? Антон пуçне çӗклесе пăхрӗ. Çӳлте тăрисем тăрăлтаттараççӗ. Вӗсем ачасен пуçӗсем çинчен каймаççӗ. Ялта та çапла каçса кайса тăрăлтаттаратчӗç. Кайăксен юррипе пырса кӗчӗç те вӗсем хула майлăрах йӗркеленӗ район центрне. Пырса кӗчӗç те — тăри юрри те вӗçленчӗ.

Больницăра выртакан Ванюк та канăçне çухатрӗ. Операци тумалла теççӗ. Грыжа. Йывăр çӗклеме юраман çав. Хăрамаллиех ним те çук тесе лăплантараççӗ тухтăрсем. Çапах ача чӗри вырăнта мар. Вăл Тӗпсӗр çăлкуçпа çыхăннă ял шăпи пирки шутлать. Пурнăç йывăççи те куç умӗнчех. Çут çанталăкпа пӗр чӗлхе тупма вӗренсе çитсен кăна телейлӗ пулма пултарассăн туйăнать ăна. Çавăнта кăна çăлăнăç. Акă, сăмахран, çӗр çине ан сур тейӗпӗр. Çакна тытса пырсанах çын лайăх енне улшăнса каяссăн туйăнать. Чăн та, хăвна кун кăтартнă Çӗр-аннемӗр çине мӗнле çапла сурса хума хал çитет-ха çынсен? Паллă, пăхăнтарас тесе тăваççӗ кăна. Çынна та пăхăнтарас тесен мӗнле те пулин япăхлатса кăтартма тытăнаççӗ. Айван та вăл, ухмах та, мӗскӗн те... Вара çав çынпа тем те тума юрать пек пулса тухать. Ара, эсӗ унран аслăрах та, ăслăрах та. Апла ăна пӗтерме сан ирӗк пур.

Кун пек шухăшсем ача пуçӗнче халиччен нихçан та çуралман. Ванюк хăйӗнчен хăй тӗлӗнсе выртать. Пурнăç йывăççин çимӗçне çини пулăшать тем! Тем те пӗлет вăл халь.

Ялта тĕп-тĕрĕс ака çаврăнăшне йĕркелесе ярсанах çĕр лайăхланма пултарасса та чухлать. Мĕн хыççăн мĕн акмаллине те тавçăрать çак пĕчĕк агроном. Ӳсен-тăрансен пурнăçне те, вĕсене мĕнле тăрантармаллине те чухлать пек. Çĕре çулран-çул лайăхлатса пырсан кăна тыр-пул тухăçĕ ӳсет. Ун пек пултăр тесен выльăх нумай тытмалла, уя тислĕк кăлармалла. Выльăхĕ пултăр тесен курăк акмалла. Пулчĕ те. Çĕр çаврăнăшĕ хăй тĕллĕнех çаврăнса йĕркеленсе каять, çавăнпа та хальхи хуçалăх ертӳçине Ванюк ăнланмасть. Мĕншĕн вăл ĕне фермине пĕтерчĕ-ха? Тем, ахальтен мар ку!

Çавăн пек шухăшсемпе аташса выртакан ача патне тантăшĕсем кĕрсе тăрсан Ванюк савăнсах кайрĕ. Халĕ вăл пĕччен мар. Нинук та кунтах! Юлташĕсем тем те пĕр ыйтса пĕлеççĕ Ванюкран, хăйсен пурнăçĕ пирки те хавхаланса каласа пăраççĕ. Операцирен хăрамалла мар теççĕ. Ванюк ахаль те хăрамасть. Часах акă ял çĕнелсе кайĕ те...

— Акă мĕн! Эпĕ кунта больницăра чылай шутласа выртрăм та чăн малтан ĕне фермине тепĕр хут хута ямалла терĕм. Выльăхчĕрлĕхсĕр май килмест.

— Фу! — терĕ пĕр кĕтмен çĕртен Нинук. — Вара пирĕн фермăра ĕçлемелле пулать-и? Таса мар, пархатарсăр ĕç. Эпĕ вара хулана вĕренме каятăп.

— Манăн та ĕне хӳрине пăрса çӳрес килмест. Тулай Иванĕ пур вĕт, çитет. Çитмесен эс пулăшатăн, — лĕхĕлтетсе кулса ячĕ

Çтаппан. — Эпир Нинукпа хулана каятпăр.

— Апла иккен. Эпĕ вара хуларан яла килетĕп. Кунта ĕç мăй таран. Пуринчен ытла çĕрпе, ӳсен-тăранпа пĕр чĕлхе тупма вĕренмелле. Вĕсене ăнланса илсен кăна пурнăç маллалла кайĕ тетĕп. Эсир çак ырлăхран тарса каясшăн-и?

— Мĕн ырлăхĕ вара кунта? Укçа тума май çук. Укçасăр халь мĕн пурнăçĕ? Хĕрсен те кунта мĕн туса пурăнмалла тет? Ĕлĕкхи пек, çĕтĕк фуфайка тăхăнса çӳремелле тетĕр-и?

— Çук вара! Кирек мĕн калăр та, эпĕ фуфайка тăхăнса çӳрес çук. Хула хĕрĕсенчен мĕнрен япăх эпир? Вĕсен асфальт тăрăх чаплă туфлисемпе шаклаттарса çӳремелле те, пирĕн вара резина атăпа пылчăк çăрмалла...

— Ун пек каламастăнччĕ-çке эсĕ, мĕн пулнă сана? Эсĕ мар-и-ха вăл ялта та çăтмах туса хуратпăр текенни?

— Мĕн çăтмахĕ! Акă мĕнле шар куртăн ху. Эсĕ тек ху та ялта ĕçлеймĕн. Кăвапи татăлнă çын вăй хурса ĕçлеймест ĕнтĕ вăл. Санран мĕн усси тет халь?

— Ă-ă! Акă мĕнле иккен кунта лару-тăру, — сасартăках ăнланса илчĕ Ванюк. — Апла эсĕ тек ялта пурăнас тесе шутламастăн...

— Çук. Çын асапланса мар, ырлăх курса пурăнма çуралнă. Хĕрарăм валли вара ялта нимле хăтлăх та çук. Анне те ялта ан юл тет. Ман пек кунта пылчăк çăрса ан пурăн тет.

— Мĕнех, — сасартăк кичемленсе кайрĕ

Ванюк. — Хăвăн ирĕкÿ. Телейлĕ пул. Хулара унта телее асфальт çинех сарса хунă тет.

Ыттисем чĕнмерĕç. Çтаппан кăна тутине сарса пăрахнă. Кун пек килсе тухасса вăл хăй те кĕтмен пулас. Хĕр тени хăех ун аллине кĕрсе ÿкрĕ вĕт!

— Тĕрĕс калан, Нинук! Эсир кунта кирек мĕнле çăтмах туса хурас тесе тăрăшсан та эпир ялта юлмастпăр. Çăтмах тенине ăна хулара тахçанах туса хунă. Ялта халь ухмахсем кăна пурăнаççĕ.

— Эсир вара, мĕн, çăкăрсăр-тăварсăр тăрса юласран та хăрамастăр-и? — ыйтрĕ вĕсенчен Антон. — Çăкăр тени асфальт çинче ÿсмест вĕт вăл.

— Укçа пулсан таçта та ÿсет, — пур кăмăлтан ахăлтатрĕ Çтаппан.

Нинук та ку шухăшпа килĕшрĕ.

Кун пек калаçни Ванюк кăмăлне хуççах пăрахрĕ. Аманни çитмест. Инкек çине синкек тенĕ пек, чĕрене те амантаççĕ мар-и. Кам тетĕр? Ун юратнă хĕрĕ, савнă Нинук. Ах, çав хĕр тени! Епле чее вăл. Кăшт кăна аманчĕ каччă, çавăнтах пăрахма хатĕр.

Ванюк куçĕ умне чеен кăна пăхса тăракан Нинук сиксе тухрĕ. Аллинче — пан улми хăйĕн, акă вăл çимĕçе çыртса илчĕ те ăна тăсса пачĕ. Шатăрт! çыртса илчĕ каччă. Унтан вăшт ывăтса ячĕ. «Авă мĕн, — тавçăрса илчĕ Ванюк. — Нинук хĕр пулса çитнĕ те хăй шăпи пирки шутлать. Ялта юлсан ăна часах сÿнессĕн туйăнать. Хулара вара вăй илсе тата хитреленсе каяс пек. Тĕрĕсех те пуль ку».

Куна Ванюк та ăнланать. Унăн вара ялтах юлмалла, ялтах çăтмах туса хумалла. Çав пурнăç йывăççине тепĕр хут ӳстерсе çитĕнтерсен аванччĕ те. Çук пуль. Çĕтрĕ пулинех вăл.

— Мĕнех, — ассăн сывласа илчĕ аманнă ача. — Çулу такăр пултăр. Яла килес-тăвас пулсан кĕрсе тухма манса ан кай. Хулара ху патша майри пек мĕнле пурăннине хăть мухтанса каласа парăн.

— Апла пулсан чипер юл, — терĕ те хĕр вăрт çаврăнса тухса кайрĕ. Ун хыççăн Çтаппан тапса сикрĕ. Пĕр сăмах та каламарĕ.

Палатăра пĕр вăхăт шăплăх хуçаланчĕ.

— Ан кулян, тусăм, — татрĕ шăплăха Антон. — Хĕр тени шанчăксăр вăл. Хĕр чухне хĕрĕх теççĕ-и-ха? Туслăх вара ĕмĕрлĕхе.

Çак сăмахсемпе Антон Ванюка пырса ыталарĕ. Икĕ тус чылайччен ларчĕç. Медсестра пырса операцие хатĕрленмелле темен пулсан, тен, татах та ларатчĕç пулĕ. Антон Ванюка ырлăх-сывлăх сунса, тепĕр кунне килме шантарса больницăран тухса кайрĕ.

## Юрату асапĕ

Инкек çине синкек тесе ахальтен каламаççĕ. Ванюк пуçĕ çине умлăн-хыçлăн йăтăнса аннă пăтăрмахсем каччăна анратсах пăрахрĕç. Унăн юратнă хĕрĕ пурнăç хыттăнрах килсе çапсанах ăна пăрахса хулана тухса каясшăн. Вĕренмелле, тĕрĕс. Вĕренмесĕр май килмест. Анчах мĕншĕн вĕренес тени хулапа кăна çыхăннă-ха?

Асапланакан каччă куçĕ умне савнă хĕрĕпе пĕрле пулнă самантсем сиксе тухрĕç. Мĕнле хаклă вĕсем халь! Акă Ванюкпа Нинук каçхи çутăра çăтмах евĕр курăнакан Сăхăт çырминче уçăлса çӳреççĕ. Хăçан пулса иртнĕ ку? Нумай та вăхăт иртменччĕ-çкеха! Халĕ вара тахçан-тахçан пулса иртнĕ пекех туйăнать. Ун чухне вĕсем тăххăрмĕш класра вĕренетчĕç. Пĕчĕк ача пекех пулнă çав, вăтаннă. Пĕр-пĕрне ыталас вырăнне çырмари хурăнсене ыталаса çӳретчĕç.

Каччă йăл кулса илчĕ. Çав туслăхра калама çук тасалăх, пĕтĕм тĕнчене юратмалăх пысăк туйăм палăрса тăратчĕ. Хурăнсем халь тин каччăпа хĕре кĕтсе илеймĕç ĕнтĕ.

Ванюк чĕри ыратса кайрĕ. Каччă хăйĕнчен хăй тĕлĕнсе выртать. Макăрать мар-и-ха вăл? Вĕри куççулĕ, пĕрремĕш юрату куççулĕ, пит çăмартийĕ тăрăх юхса анать. Ăна та асăрхамасть мĕскĕн, мĕншĕн тесен унăн халĕ кăвапи кăна мар, чĕри те ыратать.

Ун чухне, хальхи пек астăвать, çав çуллахи каç çап-çутăччĕ. Тулли уйăх çути айĕнче пĕтĕм тĕнче кĕмĕл тĕслĕн ялтăртататчĕ. Нинук пичĕ çав кĕмĕл çутăра шап-шурă курăнатчĕ. Каччă ун çине ытарайми пăхатчĕ. Вăтаннипе пуль хĕр хурăн айнерех кĕрсе тăма тăрăшатчĕ. Пĕр хурăнне икĕ енчен ыталаса тăнă чухне мар-и-ха вĕсем ялтах пурăнас, ял вырăнĕнче çăтмах туса хурас тесе калаçрĕç. Ун чухне Ванюк пуçĕнче Нинукпа пĕрле пурăнмалли çурт проекчĕ те çуралнăччĕ.

Тĕлĕнмелле проект. Çурт тени çут çанталăкран уйрăлса тăмалла мар. Вăл йывăç пек ÿсмелле. Çав йывăç айĕнче пурăнма шутланă та Мишер çамрăкĕсем. Йывăçпа пĕрлех ÿссе ватăлма шут тытнă. Ачисем валли те çуралнă-çуралманах пурăнмалăх йывăç лартма шухăшланă. Пÿрт стенисене те çÿллех мар ÿсекен йывăçсенченех тума май пур вĕт-ха. Калăпăр, ват юман айĕнче шĕшкĕпе çăка пит лайăх пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Ку проекта Ванюк шÿтлесе кăна шутласа кăларнăччĕ. Ара, ун чухне «Тарзан» ятлă кино курнăччĕ. Акă епле çуралчĕ идея! Вăл çеç те мар. Халь тин ăнланать каччă: çут çанталăкра пĕр япалана та тивме юрамасть. Йывăç касни вара чи пысăк çылăх шутланать. Йывăç та чĕрĕ чунах вĕт-ха! Пурнăç йывăççи! Мĕнле чунпа ăна касса вута ярăн. Апла чи кирли, чăн малтан тумалли ĕç вăл — çут çанталăка сиен кÿресрен сыхласси!

Çак ансат шухăш Ванюка хавхалантарса ячĕ. Мĕн ыратни манăçа тухрĕ.

Çапла анраса выртакан каччă палатине çав вăхăтра хирургпа пĕрле медсестрасем пырса кĕчĕç, ăна, малтанрах каласа хунă пек, операци тума илсе кайрĕç.

Операци мĕнле иртнине Ванюк астумарĕ, çывăрттарса ярсан вăл, тĕлĕкре ĕнтĕ, Тĕпсĕр çăлкуç патне çитсе ÿкрĕ. Арçын ача, Михха мучи пек, çăлран пулăшу ыйтрĕ кăна — шыв питĕ вăйлă тапса тухрĕ те Ванюка йăлтах хупласа хучĕ. Икĕ çырма пуçĕнче тем пысăкăш

кӳлĕ. Ҫав кӳлĕре ҫара пакка ача ҫăмăллăн кăна ишсе ҫӳрет. Пулă тейĕн. Хаваслă хăй. Ишрĕ-ишрĕ те кăшкăрса ячĕ. Ҫак саспа вăранса кайрĕ. Вăл палатăра выртать иккен. Кăвапа тĕлĕнче халĕ те ыратать.

— Ан хăра, — лăплантарчĕ ăна хирург, — ыратни иртсе кайĕ. Паллах, малашне йывăр ҫĕклеме юрамасть.

Йывăр ҫĕклеме юрамасть пулсан ялта мĕнле пурăнмалла тет-ха, чăн та аса килет Нинук калани. Ҫĕр ĕҫĕ йывăр, вăл — паттăрлăх. Кам ҫĕр ĕҫĕпе пурăнать, ҫавă чăн паттăр та чи таса ҫын. «Таса ҫын! Таса ҫын! Таса ҫĕр!» — явăнчĕ чирлĕ ача пуҫĕнче тĕрлĕ шухăш. Енчен те, чăн та, ҫĕр ҫине ҫӳп-ҫап пăрахмасан, сурмасан... ăна ача пек таса уп-раса тăрсан ҫын хăй те чунпа тасалса, вăйлан-са каяссăн туйăнать. Мĕн ҫитмест ҫынна?

Чăн малтан тасалăх ҫитмест. Унтан вара хитрелĕх, чăнлăх, ырăлăх... Анчах пĕрремĕшĕ вăл — тасалăх. Ҫав тасалăха ҫухатма пуҫ-ланă Ванюк хăй те! Акă Нинука кĕвĕҫет, ял-тан каяс тенĕшĕн питлет. Хĕр ачана хăйне мĕн кирлине суйласа илме памасть. Юра-татăн пулсан савнă ҫын валли тем те тума хатĕр пулмалла! Тĕнче аслă. Ял кăна мар илĕр-тет Ванюка. Вăл та, тен, космонавт пулса ҫăл-тăрсем патне вĕҫсе кайĕччĕ. Ҫук, ҫут ҫанта-лăк ăна хăй суйласа илнĕ. Ун аллипе хăйне ырă тăвасшăн. Хăйне кăна мар, пĕтĕм ял ха-лăхне, пĕтĕм тĕнчене ҫăласшăн.

Ҫакăн пек шухăшсем ăҫтан тата мĕншĕн пырса кĕнине те ăнланмарĕ Ванюк. Вун ҫич-

чёре кӑна вёт-ха вӑл! Ҫапла ҫамрӑк пуҫпах тёнче шӑпине хӑй ҫине илесшён. Халь тин вӑл пуриншён те яваплӑ пек туять хӑйне. Нинукшӑн та! Кайтӑрах! Пурнӑҫ акӑ ӑна хӑех каялла тӑван ялне ҫавӑрса килё. Пурнӑҫ ҫаври ҫапла вӑл. Эсё ӑҫта кирлёрех — ҫав тёлех ҫавӑрса илсе ҫитерет.

Ҫак шухӑшсемпе лӑпланса Ванюк каллех ҫывӑрса кайрё. Тёлёкне ҫавнах курчё. Вӑл каллех Тёпсёр кӳлёре шыва кёрет пек. Шывё тӑрна куҫё пек таса, хумёсем — кёмёл. Пулӑ пек ярӑнса ишсе пырать ача. Канлё ӑна, кӑмӑллӑ, сиплё...

Сасартӑк темле сасӑсем илтёнсе кайрёҫ. Таҫта ҫапӑҫу пырать тейён. Ванюк шывра та мар иккен. Вӑл тимёр хёҫ йӑтнӑ, Кирек ятлӑ юлташёпе кӑна тӑрса юлнӑ... Ыттисем, пёрле ҫапӑҫнисем, тахҫанах ҫёре кёнё. Акӑ халё вёсене те тӑшмансем хупӑрласа илнё. Икё ҫырма пусёнчех пек ку. Анчах аялта тем пысӑкӑш шыв. Тинёс тейён. Ҫавӑнпа та вёсем халь тин ниҫта та кайса кёреймёҫ, ҫакӑнтах ҫапӑҫса вилмелле пулать. Ванюк та Ванюк мар халь. Ячё ун, тёлёнмелле те, — Самать. Ҫапла, ҫапла! Ҫакӑ Икё ҫырма пуҫё ҫумёнчи вырӑна мишерсем халё те Самать теҫҫё. Упраса хӑварнӑ пулать пархатарлӑ ял халӑхё ҫак хаяр ҫапӑҫура пуҫне хунӑ ҫын ятне. Халӑхшӑн пуҫне хунӑ ҫынна никам та манас ҫук.

Хём кӑларса чанк-чанк! янӑраҫҫё пӑлат хёҫсем. Самать ӑста вӑйпут. Ҫёршер ҫапӑҫура туптанӑ хӑйён ӑсталӑхне. Халё те ӑна ни-

кам та ҫёнтерейменĕ. Самате тăван ҫĕр хăй пулăшса тăрать. Самать вăйлă, Самать хăватлă!

Анчах ҫав вăхăтра ăна хыҫалтан такам пырса ҫапрĕ. Ҫаврăнса пăхрĕ те вăйпут хыҫалта хăйĕн юлташĕ Кирек тăнине курах кайрĕ. Вăл ҫĕкленĕ пулать ун ҫине хĕҫ, ун ҫилли амантрĕ чĕрене. Кирек тăшмана парăнса хăй пурнăҫне ҫăлас тенĕ.

Ҫак самантра вилес патне ҫитнĕ Самать хăй те пачах урăх ҫын пулнине ăнланса илчĕ. Вăл Ванюк! Ăна амантаканĕ — Ҫтаппан!

Питĕ хăраса вăранса кайрĕ Ванюк ку ыйхăран. Вăл больницăрах выртать. Хырăмĕ те паҫăрхи пекех ыратать. Тен, паҫăрхинчен те хытăрах. Чăнах та, такам хĕҫпе чикнĕ тейĕн кăвапа тĕлĕнче. Анчах ача шăп выртать. Тĕлĕкрен тĕлĕнет. Ҫăлкуҫа чул пăрахса пусарса хураканĕ никам та мар — Ҫтаппан. Пулăшаканĕ те пулнă — вăл та хамăр ял ҫынниех. Тулай Иванĕ. Ҫавсем кустарса антарнă та Икĕ ҫырма пусĕнчи тем пысăкăш чула ҫăл ҫине. Вĕсем кăна курăнмарĕҫ Самать уйне юшкăн кăларнă чухне. Ҫтаппан Нинука илĕртсе хулана илсе каяс тени те ахаль мар. Куҫ умĕнчех ҫĕлен пек авкаланса пурнăҫ йывăҫҫи ҫине хăпарса кайни те. Ун чухне те вăл Ванюкпа Нинука сыхласа ҫӳренĕ. Намăссăр, кĕҫҫе пит! Ҫĕлен!

Шак-шак-шак! илтĕнчĕ ҫав вăхăтра алăка шаккани. Кĕме ирĕк панине кĕтмесĕрех алăк уҫăлса кайрĕ те, пӳлĕме пĕр бидон шыв йăтнă Михха мучи кĕрсе тăчĕ.

— Эпĕ сан валли сиплĕ шыв илсе кил-

тём, — терĕ вăл. — Акă Тĕпсĕр çăлкуç шывне ĕçсе пăх-ха. Час чĕрĕлетĕн. Эпĕ чирлекелерĕм те иртнĕ эрнере çак шыва ĕçрĕм, халĕ хама вăй-халлă туятăп.

Мучи, пăхсах паллă, çамрăкланнă пек курăнать. Сухалĕ те ытла кăвак теейменĕн. Куçĕ çамрăкăнни пек чалтăртаттарса пăхать. Ача килĕшессине кĕтсе тăмарĕ мучи, тумбочка çинчи пĕр стакана шыв тултарса пачĕ. Шыв ĕçсен лăш пулчĕ чирлĕ çын ăш-чикки.

— Акă операци тунă вырăна та сĕрер-ха. Эпĕ пĕр ывăç юшкăн илсе килтĕм çав çăлран. Вăл та сиплĕ пек туйăнчĕ. — Ырă çын алли çыпăçуллă. Вăр-вар сĕрсе ячĕ кăвапа тĕлне çав Самать уйне кăларнă сарă юшкăна. — Ан шиклен. Пулăшать. Врачсене ан кала. Хирĕçлеме пултараççĕ.

— Тав, — теме çеç хал çитерчĕ ача. Шывпа юшкăн сиплĕ пулнине хăй те ĕненет. Пĕрре кăна мар ӳпне выртса ĕçнĕ вăл Тĕпсĕр çăлкуç шывне. Тӳрех вăй илнĕ пек пулнă. Кăшт ларса каннă та ним пулман пекех малалла талпăннă. Икĕ çырма пуçĕнче йывăçсем лартса тултарнăччĕ те ун чухне, выльăхсене кĕртмен. Çавăн чухнех Ванюк ешĕл хурăнсене сыхлама тухсан хăйĕн ĕни валли пĕр михĕ курăк татса кĕретчĕ. Вăрман курăкĕ сиплĕ тетчĕ. Ĕнине те вăл хăех сăватчĕ. Пĕчченех пурăнать халь Ванюк. Амăшĕ чирлĕччĕ. Ашшĕ ун яла килсе те курăнмастчĕ. Халĕ акă амăшĕ те çук. Вăл вилнĕренпе чылай вăхăт иртрĕ. Çавăнпа та Ванюк хăйне питĕ тăлăххăн туять. Ялтан унăн та тепĕр чух та-

ҫта ҫити тухса каяс килет. Анчах амăшĕ тăван киле ан пăрах тени тытса тăрать. Ҫав сăмаха халь тин каланă пек аса илет те каллех вăй кĕрет. Ара, амăшĕ чĕртнĕ вучаха епле сӳнтерĕн-ха!

Тулли курăк миххине йăтни аса килчĕ Ванюка. Халĕ ялта пурте люцерна акса ӳстереҫҫĕ те хĕл каҫмалăх выльăх апачĕ ҫителĕклех хатĕрлеҫҫĕ. Шыв ĕҫнĕ хыҫҫăн вĕлт кăна ҫĕклесе илетчĕ ҫав миххе Ванюк.

Вĕлт ҫĕкленсе ларчĕ операци хыҫҫăн выртакан ача. Хăйне темле вăйлă пек туйрĕ.

Кĕпе аркине ҫĕклесе пăхрĕ те кăвапа тĕлĕнче нимле ҫĕвĕ те курмарĕ. Операци тунă хыҫҫăн ҫĕвĕ пекки те пулин пулмаллах вĕтха! Мучи те тĕлĕнчĕ. Хыпашласах пăхрĕ. «Ара, чĕрĕ шыв ĕҫĕ вĕт ку»! — терĕ. Мучи Ванюка тепĕр стакан шыв тултарса пачĕ. Чирлĕ ҫын юмахри пек туять хăйне. Вырăн ҫинчен тăрса ларчĕ. Иккĕшĕ те савăннипе ахăлтатса кулса ячĕҫ.

Ҫав вăхăтра палатăна хирург пырса кĕчĕ. Ванюка курсан хăраса ӳкрĕ, ăна вăйпа тенĕ пек вырăн ҫине вырттарчĕ. Операци ҫĕввине пăхрĕ. Нимĕн те ăнланмарĕ. Кирек мĕнле пулсан та операци палли пулмалла пек-ҫке. Анчах вăл ҫук. Ҫапах та Ванюка больницăрах юлма ыйтрĕ.

Хирург тухса кайсан ватă ҫынпа ҫамрăк ача пĕр авăк шăп ларчĕҫ. Пуҫра тĕрлĕ шухăш явăнчĕ. Тĕпсĕр кӳлĕ тĕлĕнтерме пăрахмасть. Ку пĕрре. Тепри — Ванюк юратăвĕ. Сывалса ҫитнĕ ача пушшех те тунсăхлать. Халь

тесен халь сиксе тăрĕччĕ те тухса тарĕччĕ ку больницăран, çук, юрамасть. Сăмах панă. Ванюк халĕ хăйне пысăк çын пек туять. Ун умĕнче пысăк ĕçсем. Эх, Нинук юнашар пулнă пулсан-и?

— Акă мĕн шутласа тупрăм эпĕ, — шăплăха хуллен татрĕ мучи. — Чăваш килĕ сиплĕ сывлăшлă, чĕрĕ шывлă, çĕр кăвапаллă пулмалла.

— Анне ăшшиллĕ, хĕрӳ вучахлă, таса çĕрлĕ, — хушса хучĕ ача.

— Çемьеллĕ, юратуллă, нумай ачаллă... Çавăн чухне кăна телейлĕ пулĕ чăваш ачи, — ахăртнех, хулана тухса кайнă ывăлĕшĕн тунсăхласа каларĕ Михха мучи. Ватă çын та пĕччен юлнă, арăмĕ вилнĕ. Юрать-ха мăнукĕ Антон килкелесе каять.

Ванюк шухăшĕ çирĕпленсех çитрĕ. Ялтах, ялтах пурăнмалла ун! Ялтах телей тупмалла! Çăтмах тăвас тени пĕрре те айван шухăш мар. Сăмахран, акă ял урамĕ тăршшĕпе халиччен те чул сарман. Мĕне пĕлтерет ку? Миçе çул çак тăрăхра пурăнаççĕ мишерсем, миçе çул пылчăк çăраççĕ. Кашни çул пĕрер урам сарсан кашни ял тахçанах асфальтлă пулмалла. Мĕн туса пурăнать халăх?

Ял ватăлса кайрĕ тесе шутлать мучи. Çамрăксем ытти хуласене çĕклесе унта пурăнакансене лайăх пурнăç туса парас терĕç пулас. Килти ашшĕ-амăшĕ чăтать теççĕ. Тĕнчипе ĕçлет чăваш. Хăйне валли кăна нимĕн те тумасть. Пиншер çул иртнĕ — мĕн тунă?! Палли çук. Пур-çук çурчĕсем юхăнса кайнă,

çуралнă ачисем ӳссе саланса пĕтнĕ. Юта тухнă. Мучи çакна питĕ лайăх ăнланать. Мĕншĕн тарнине те ăнланать. Çын хăйне çуратнă çĕре пăрахнă. Пăрахнă çеç мар, çĕрпе çапăçма пуçланă.

Вĕсем патне Антон чупса кĕчĕ. Хыпăнчăк хăй. Çӳçĕ-пуçĕ арпашăнсах кайнă.

— Нинукпа Çтаппан ялтан тухса кайрĕç, — пĕлтерчĕ вăл пăшăрханса.

Ванюка ку хыпар чĕреренех пырса тиврĕ.

— Кайччăрах, вĕсемсĕрех тăвăпăр эпир хамăр пурнăçа. Кайран акă килсе курĕç те тĕлĕнсе кайĕç. Мишерте те çăтмах-çке теĕç, — мăнкăмăллăн калаçрĕ Ванюк. Хăй вара çав вăхăтра: «Чăт-чăт, тăван, чăт, тăван, пире чăтма тунă вĕт», — тесе юрларĕ. Мучипе мăнукĕ тĕлĕнсе ларчĕç. Вĕсен шучĕпе, халь Ванюкăн сиксе тăмаллаччĕ те Нинук хыççăн ыткăнмаллаччĕ. Чармаллаччĕ.

— Такам куç ӳкернĕ пулĕ Нинука, — тĕлĕнчĕ мучи.

— Пурнăç йывăççи мар пулĕ те, — тĕшмĕртрĕ Ванюк. Ун куçĕ умне каллех Нинук йывăç улмине çыртса илни тухса тăчĕ. Вăл пурнăç йывăççи кăна мар, ырăпа усала та вĕрентет. Ванюка вăл ырра вĕрентрĕ пулĕ, Нинука — усала... Ун пек те мар пулĕ. Ăшра камăн мĕн пулнă, çавă çиеле тухнă та. Çавна палăртнă та пан улми. Нивушлĕ вара Нинук малтанах пăсăк кăмăллă пулнă?

— Пăснă пулсан эпир вĕсене час тӳрлетĕпĕр. Пирĕн чĕрĕ шыв пур, — бидонĕ çине тĕллесе кăтартрĕ мучи.

— Чăн та, — килĕшрĕ ку шухăшпа Антон. — Эпĕ вĕсене Шупашкарта шыраса тупăп та çак сиплĕ шыва ĕçтерĕп. Ăна ĕçсенех чун тасалса, вăйланса каять. Таçта темле вилĕ шыв ĕçнĕ пулинех...

— Ĕçнĕ, чăнласах ĕçнĕ! — тавçăрса илчĕ мучи. — Çтаппан ашшĕ хуларан ешчĕкĕ-ешчĕкĕпе кĕленчесене тултарнă темле шыв илсе килет. Акă ăçта чăн сăлтавĕ!

— Çын чунĕ вара çапла шыв ĕçнипех улшăнма пултарать-и? — тĕлĕнчĕ Ванюк. — Шыв ĕçнипех улшăнмасть пулĕ ĕнтĕ...

— Хăв çине пăхса ил! — кулчĕ мучи. — Ав епле аванланса кайрăн. Чĕрĕ шыв ĕçрĕн те вăй илтĕн, вилĕ шыв ĕç — эсĕ те пĕтĕн.

— Чисти юмах! — аптраса ӳкрĕ Ванюк.

Ачасем кулса ячĕç. Ванюка çăмăл пулса кайрĕ. Нинук, тен, юратма та пăрахман ăна. Хĕр ачана, тен, илĕртнĕ кăна, тен, пăснă та...

Вĕсем патне врачсемпе медсестрасем пырса кĕчĕç. Ванюк çĕввине тĕпчерĕç. Ним те çук. Врачсене ку аптратсах пăрахрĕ. Ванюк сывах. Ăна киле яма тивет. Ачасене çакă кăна кирлĕ. Шăкăр-шакăр тухса кайрĕç больницăран. Мучи те, кайма тăнăскер, чарăнчĕ. Ăсатма тухнă тухтăрсене пĕрер курка шыв ярса пачĕ бидонран. Лешсем хирĕç пулмарĕç. Ĕçрĕç, хавасланса кайрĕç.

Çакна курса тăракан мучи те савăнчĕ. Тупрăм терĕ пулас ял пурнăçне чĕртсе тăратмалли меслет.

## Чул вăрттăнлăхĕ

Мучипе ачасем пĕр калаçса тăмасăрах Тĕпсĕр кӳлĕ патне çул тытрĕç. Çулĕ чылай вăрăм, тем сӳтсе явмалăх та вăхăт пур. Чи кăсăкки кунта çĕр чĕлхи пулчĕ. Антон шухăшĕпе, Çĕр-аннерен пулăшу ыйтмалла. Вăл йăлт ăнланать. Эпир вара ниепле те çĕр мĕн каланине ăнкараймастпăр. Çĕр-анне пире пурăнмалăх кирлĕ условисем туса парасшăн тăрăшать. Чăн та, пĕр шутласан, çĕр çинче яланах чĕрĕ организмсем пурăнмалăх пĕр пекрех температура, атмосфера, шыв пур. Вĕсем улшăнмаççĕ. Çĕр туртăмĕ те пĕр пекрех. Кил-çурта йĕркелесе тăнă пекех тытса пырать Çĕр-аннемĕр хăйĕн хуçалăхне. Хуçалăхĕ вара вăл вăрттăн япала, пурнăça кирлĕ газа, минералсене, шыва пĕрле çыхăнтарса тăрать. Чĕрĕ япаласен хăйсен çаврăнăшĕ. Çавăн йышши пурнăç çаврисем çинче тытăнса тăрать те тĕнче. Ăслав тени те çавах. Çĕр шутлав машини пек шутласа пурăнать. Мĕн таталнă, çаврана сыпать, çĕнĕрен пуçарса ярать. Çакăнта палăрать çĕр ăсĕ.

Тĕпсĕр кӳлĕ ачасене хаваслăн кĕтсе илчĕ. Кунта ним те улшăнман. Шыв çийĕн вĕт хумсем чупаççĕ. Пăл-пăл тапать çăлкуç чĕри. Пĕри те сăмах чĕнмесĕр çăл хĕрринчи шур чул çине пырса ларчĕç. Унран ăшă çапать. Тин çеç çăла пусăрласах пек тăнăскер халь ăна сыхласа вырттать тейĕн. Ванюк чул катрашкисене алăпа сăтăркаласа пăхрĕ. Тем пур ун çинче. Те çуркаланчăксем, те сас паллисем...

— Кунтарах пăхса илёр-ха, — сăмсипе тёксе тенё пек тем шырарё чул çинче Ванюк.

Пурте чул çинчен тăрса ун çине ўпёнсе пăхрёç. Чул пичё пёркеленчёклё, çыруллă.

— Сас паллисем вёт кусем! — тавçăрса илчё Антон. — Сăвăллă çыру! Питё авалхи. Пёр пилёк пин çул каярах усă курнă ку çырулăхпа. Месопотамире. Çавăнта шумерсем пурăннă теççё.

— Эсё ăçтан пёлетён? — тёлёнчё тусёнчен Ванюк.

Михха мучи шарламарё-ха.

— Вуланă. Сăмах май, эпё шумер чёлхи пирки нумай пёлетёп, китай чёлхине те чухлатăп. Килте унăн грамматики те пур ман.

— Мён çырнă-ши кунта, — калаçăва хутшăнчё мучи. Вăл та питё интересленсе кайрё пулас.

— Час вулатпăр, — хăпартланчё çамрăк тёпчевçё. — Кунта темле Таса çёр çинчен çырнă.

— Таса çёр! — харăссăн кăшкăрса ячёç Ванюкпа Михха мучи. Пёр-пёрин çине пăхса илчёç.

— «Эпир тахçан Икё çырма хушшинчи Таса çёр çинче пурăннă, — малалла вуларё Антон. — Çёр мён каланине итлесе пурнăçласа пынă. Анчах та каярахпа хăш-пёр çынсем çёртен кулма, ун çине сурма пуçларёç. Çёр чухăнланса кайрё. Эпир ăна пăрахрăмăр. Çёнё çёр шыраса çакă икё çырма пуçне килтёмёр. Кунта тёнче йывăççипе

Тӗпсӗр ҫӑлкуҫ тупрӑмӑр. Анчах тӑшмансем пире йӗркеллӗ пурӑнма памарӗҫ. Самать патша тӑрӑшнипе туса хунӑ патшалӑх саланса кайрӗ... Ҫӗклен те ҫӗнтер, пӗтсен те ан парӑн!..»

— Самать патша! Таса ҫӗр! Шумер патшалӑхӗ! Ӑҫтан? — тӗлӗнчӗҫ ачасем. Вӗсем хӑйсем ҫак патшалӑхпа ҫыхӑннине туйса илчӗҫ, чунӗсем ҫӳҫенчӗҫ, ирӗксӗрех пӗр-икӗ утӑм чакса тӑчӗҫ. Темле чул-ха вӑл? Тен, тухатнӑскер?

— Темле тӗнче йывӑҫҫи пирки сӑмах пырать кунта, пурнӑҫ турри тенӗ. — Ванюк куҫӗ умне тепӗр хут асамлӑ йывӑҫ тухса тӑчӗ. — Ҫак Икӗ ҫырма пуҫне шӑтса тухнӑ пурнӑҫ йывӑҫҫи ҫинчен мар пулӗ те ҫырни?

— Ҫавах пулӗ. Тӗпсӗр кӳлӗ пирки те, — ӑнланса илнӗ пек пулчӗ Антон. — Анчах мӗнле-ха вӗсем, шумерсем, Сӑхӑт хӗрне ҫитме пултарнӑ? Хӑйсене вӗсем супарсем тенӗ пулать.

— Супарсем? — анрасах кайрӗ Михха мучи. — Ара, Антон, эпир вӗт супарсен йӑхӗнчен!

— Илтмен. Мана каламан.

— Ара, мӗн каламалли. Мӗн ӗлӗкрен пире супарсем тенӗ. Аттене вӑрҫа илсе кайнӑ чухне вара аҫу сан мӗн ятлӑ тесе ыйтнӑ пулать те хушаматне ашшӗ ячӗпе Михайлов тесе ҫырса хунӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн эпир Михайловсене тухса кайнӑ, хамӑрӑн чӑн хушамата ҫухатнӑ. Чӑннипе Субаровсем пулмалла эпир. Акӑ мӗн.

— Тăхтăр-ха, тăхтăр! Чăн та! Нумаях та пулмасть пĕр Палестина ялне кăтартрĕç. Çав палестинсен ялĕн ячĕ — Субарей. Латинла çырса хунă. Хам куртăм, — хĕрсех кайрĕ Ванюк. — Пирĕн рат ячĕ-хушамачĕ-ши? Эпир те Иванов хушаматпа çӳретпĕр.

— Сирĕн ратнере Йемен ятлă çын пулнă теççĕ. Çавах ял масарĕн пуçĕ. Чи ватти, апла. Йеменевсем пулма кирлĕ эсир, — тĕшмĕртрĕ Михха мучи.

— Йемен тени çав Месопотами енче мар-и-ха вăл? Субарейĕ те çавăнта. Сăхăчĕ те... — пĕр-пĕрне пӳлсе каласа пыраççĕ ачасем.

— Таса çĕр тени вара мĕне пĕлтерет? — ыйтрĕ йăлт аптраса ӳкнĕ Ванюк. — Тахçан Чăвашра та çав ăнлав пулнă пулмалла.

— Пулмасăр, — ăнлантарчĕ мучи. — Эпĕ çамрăкрах чухне ку сăмахпа пĕрмаях усă курнă. Çĕртен-шывран таси çук тетчĕç. Çĕрпе-шывпа тупа тунă, вĕсене пуççапнă. Çĕре те, шыва та сурма хушман.

— Халĕ вара тавлашса тенĕ пек сураççĕ, — хушса хуларĕ Антон. — Ку пуринчен ытла хулара палăрать. Çурт умĕсене, асфальчĕсене йăлт сурса вараласа пĕтереççĕ. Çапах хăйсене эпир культурăллă теççĕ. Сураççĕ те çын çине тăрăххăн пăхса илеççĕ.

— Вара вĕсем, çав супарсем, çĕре сурса пĕтернĕ пулать-и? Ĕненме те çук, — тĕлĕнчĕ Ванюк.

— Сурни-мĕнĕ, ку сăнарласа калани çех пуль, халĕ унта, çав ĕлĕкхи вырăнсенче, чăн та, пуш хир хуçаланать. Тахçан тулăхлă

пулнă çĕр пĕтнĕ. Çыннисем те куçса кайнă. Тен, эпирех пуль, çав çĕре пĕтерекенсем. Кунта çитрĕмĕр те акă кунтине пĕтеретпĕр, — шухăша путрĕ Антон.

— Пĕтерместпĕр, — хĕрӳленчĕ Ванюк. — Эпир кунта чăнласах çăтмах тăватпăр. Мăн асаттесем Месопотамире тăвайманнине кунта тăватпăр. Тĕпсĕр кӳлĕ те пур пирĕн. Вăл пулăшать. Пурнăç йывăççи те...

— Темле çав... — иккĕленчĕ мучи. — Хăй хальлĕн ним те пулмасть пулĕ. Тав сăмахĕ кала ваттисем хăйсен шухăшне çак вăхăта çитерме пултарнăшăн. Вĕсен йăнăшне тепĕр хут тăвас марччĕ. Авалхи супарсем пире тăвată асамлă япала ярса панă. Çакă чул çыру. Унтах Таса çĕр вĕрентĕвĕн паллийĕсем сыхланса юлнă. Ку питĕ паха. Пурнăç е тĕнче йывăççи. Вăл çухалнă пулсан та пирĕн Ванюка ăс парса хăварма ĕлкĕрнĕ. Тен, вăл та пач пĕтмен пулĕ-ха. Тепĕр хут шăтса тухассăнах туйăнать. Тăваттăмĕшĕ вара — Тĕпсĕр кӳлĕ. Ун вăйне эпир куртăмăр ĕнтĕ. Усă курма вĕренсен, чăн та, пĕтĕм халăха çăтмах туса парăпăр.

Ку хăйне майлă пĕтĕмлетӳ пулчĕ пулĕ. Ванюкпа Антон, Михха мучи пĕр кана чул çине, Тĕпсĕр çăлкуç çине тимлесе пăхса тăчĕç-тăчĕç те каярахпа татах та ун-кун çаврăнкаласа пăхса ялалла уттарчĕç.

**Хула пӑтӑрмахӗ**

Çтаппанпа Нинук ялтан пӗрле тухса кайрӗç. Шупашкар çулӗ вӑрӑм, каймалӑх пур. Мӗн тесе тухса тарчӗ-ха Нинук хӑй çуралса ӳснӗ савнӑ ялтан? Кӑна вӑл хӑй те ӑнланмарӗ. Амӑшӗ малалла вӗренмелле тени те мар кунта. Ванюкӑн кӑвапи татӑлнинче те мар ку хӑтлану. Савнӑ каччине пӑрахсах тухса тарать вӗт хулана... Çук, хӗртен халь хистесе ыйтсан та ним те калаймӗ вӑл. Тен, чӑн сӑлтавӗ Çтаппанра? Нинук юнашар ларса пыракан каччӑ çине пӑхса илчӗ. Хитре ача Çтаппан. Унӑн хӑмӑр çавра куçӗсем таçта тинкереççӗ. Ахӑртнех, малашлӑха кураççӗ. Тин кӑна ялтаччӗ. Халӗ акӑ иккӗшӗ те кооперацие техникумне вӗренме каяççӗ. Суту-илӳре кӑна укçа тума пулать терӗ Çтаппан. Ку тӗрӗсех ӗнтӗ. Сутуçӑсем питӗ пуян. Вӗсем укçаллӑ. Укçа пулсан тем те илме пулать. Хӗр тени хитре япаласене юратать. Хура туфли, норка кӗрӗк, чаплӑ машина... Çавӑн йышши япаласене курсан Нинук чунӗ хӗпӗртеме пуçлать. Çав хитре япаласем ун аллинче пулассине вӑл тахçанах палӑртнӑ хӑй ӑшӗнче. Çапла пултӑр тесен хулана каймалла, укçа тума вӗренмелле. Ку — вӑрттӑн ӗмӗт. Тутлӑ ӗмӗт. Ӑна вӑл, тен, хӑй те ӑнланман. Анчах пурнӑç йывӑççин улмине çинӗ хыççӑн куçӗ яр уçӑлса кайрӗ. Ку тӗнчере пурте пӗр-пӗрне улталаççӗ. Уйрӑмах суту-илӳре.

— Çтаппан, — терӗ хӗр, — укçа нумай ӗçлесе илсен эсӗ мана мӗн илсе парӑн?

— Машина илсе парăп. «Мерседес».

— Ых! — савăнсах кайрĕ хĕр. — Эпĕ унпа яла ярăнса пырса кĕрĕп... Кашни тĕл пулан çын куçне тусан кĕрсе юлĕ.

— Ял тăрăх ярăнса çӳремелли япала мар вара вăл «мерседес» тени.

— Мĕн тени вара?

— Престиж тени.

Хĕрпе каччă пĕр кана шăпланчĕç. Салонра шăп. Çула тухнă çынсем пурте тенĕ пекех тĕлĕрсе кайнă.

Çтаппанпа Нинук Шупашкара чиперех çитрĕç. Вĕсене иккĕшне те общежитие вырнаçтарчĕç. Докуменчĕсем те йĕркеллĕ. Экзаменсене ăнăçлă тытсан, тен, вĕренме те кĕрĕç. Шкулта вĕсем начар мар вĕреннĕ. Учителсем те вĕсене мухтатчĕç.

* * *

Экзамен хыççăн экзамен тытрĕç. Ăнăçлă килсе тухрĕ. Иккĕшне те техникума пĕрремĕш курса вĕренме илчĕç.

Вăхăт иртрĕ. Нинук яла пĕрре те килсе курăнмарĕ. Намăс ăна. Тата Çтаппанĕ те юнашарах пулчĕ. Пĕрле вĕсем кашни каçах дискотекăсене, уявсене çӳрерĕç. Студент пурнăçĕ хаваслă. Тепĕр чух вĕренме вăхăт çитмест. Кашни каçах тем тĕрлĕ концерт, спектакль, тĕлпулу... Ĕлкĕрсе кăна пыр. Хĕр ача, кун пек чаплă пурнăçпа пурăнса курманскер, халь тин ĕне сăвассине те манса кайрĕ. Ун ĕçĕ — чаплă тум тăхăнса савăнма каясси. Рехет вăхăт çитрĕ. Ăт, çăтмах! Хĕр куна хăй те пĕлет.

Вăл пĕтĕм чунĕпе çакна кĕтсе пурăннă. Тавах Çтаппана. Енчен те укçа тума вĕренсе çитсен Нинук, тен, ăна качча та тухĕ.

Ĕмĕтленет, ĕмĕтленет хĕр. Пĕтĕм тĕнче юратать пек ăна. Кашни уйăхрах амăшĕнчен укçа ыйтса ярать. Укçа тени хулара шыв пек юхать, вĕрене çулçи пек вĕçет. Анчах Марье аппан ун чухлĕ укçа ăçтан пултăр?

Питĕ савăнса пурăннă çĕртенех Нинукăн укçи пĕтрĕ. Çтаппанран ыйтас — парас çук. Халĕ те кашнинчех хĕрĕн укçа çуккине кура каппайланма пăхать. Сĕмсĕрленет. Пĕринче ресторанта ларнăшăнах ăна чуптумалла терĕ. Ăт, йĕксĕк. Хĕре ресторана чĕннĕ те — тем тума та юрать тесе шутлать пулас. Тарăхать хĕр. Анчах ним те тăваймасть. Амăшĕ те, юлашки вăхăтра чирлесе кайнăскер, нимпе те пулăшаймасть. Ирĕксĕрех каллех Çтаппан çумĕнчех пулма тивет. Таçтан тупать лешĕ укçа.

Пĕрремĕш курс вĕренсе пĕтернĕ çĕре хĕр çука тăрса юлчĕ. Чăтайманнипе çуркунне Çтаппанран кивçен ыйтрĕ.

— Хе-хе-хе! — лĕхлетрĕ лешĕ. — Мана качча тух, вара ылтăн ăшĕнче пулăн. Унсăрăн выççа вилĕн. Эпĕ пĕлетĕп: эсĕ общежитишĕн те тӳлемен. Сана унтан часах хăваласа кăларса ярĕç. Вара ăçта пурăнăн?

— Ку сан ĕç мар, — тарăхрĕ хĕр. — Эсĕ мана халь пурăнмалăх кăна пар. Кайран тавăрăп.

— Кая юлсан каю шăтать. Эсĕ халех тавăрса пар, — çулăхрĕ хĕр çумне каччă.

— Кай! — çутăлтарса ячĕ Çтаппана Нинук. — Акă епле эсĕ! Йывăрлăха кĕрсе ӳкнипе усă курас терĕн-им? Кĕтсе илеймĕн.

— Ăçта кайса кĕрĕн вара эсĕ? Пĕрех манăн пулатăн!

— Çук, — терĕ хаярланса кайнă хĕр. Çакна курма килчĕ-и-ха вăл хулана? Çăтмах терĕ пулĕ. Акмасăрах, вырмасăрах çăкăр çиетĕп терĕ. Çук-мĕн! Кунта акă чăн кашкăрсем кăна тутă иккен! Çакна Нинук тин ăнланса илчĕ. — Çук! — терĕ хыттăн. — Эпĕ яла каятăп.

— Ха-ха-ха! — кулчĕ Çтаппан. — Халь тин сана аннӳ кăна мар, Ванюк та йышăнас çук. Эсĕ мĕнле пурăнни çинчен эпĕ йалтах çырса пĕлтертĕм. Кай, кай ĕне фермине. Тăхăн хăвăн фуфайкуна. Тен, каллех телейлĕ пулăн хăвăн выльăхусемпе. Ха! Сан пеккисене эпир кунта, хулара, миллион тупăпăр. Таси паха!

— Каятăп, — татса хучĕ хĕр, — заочно вĕренме куçатăп та каятăп. Сана вара куç ан куртăр! — çапла сăмахсемпе Нинук каччă пӳлĕмĕнчен вăртлаттарса тухса кайрĕ.

«Пулмарĕ. Ку хĕр ман алла çакланатех тенĕччĕ. Темле илĕртсен те парăнмарĕ, — тесе ăсатрĕ ăна куçĕсемпе каччă. — Эй, тепĕр тесен, хĕр сахал-им?» — Çак шухăш ăна лăплантарчĕ.

Нинук нумай кĕттермерĕ. Документсене заочно вĕрентекен пая куçарчĕ те яла тухса вĕçтерчĕ. Пĕтĕм чун-чĕрипе кĕтрĕ вăл амăшĕпе тĕл пуласса. Мĕнле пит-куçпа пырса

кĕрĕ чирлĕ амăшĕ патне çак таранччен çухалса çӳренĕ хĕр? Ванюк пирки шутлама та хăймасть. Каччă ăна манса кайнă пулĕ. Тата сутрĕ вĕт вăл Ванюка. Çтаппанпа улăштарчĕ. Ырă пурнăç тăватăп терĕ. Ямăт пурăнса ырă пурнăç ăçтан килтĕр?

Çапла шухăшсемпе пырса кĕчĕ Нинук яла. Амăшĕ вырăнпах выртать-мĕн. Хĕрĕ килнĕшĕн калама çук савăнса ӳкрĕ.

— Ах, мĕнле килме пĕлтĕн тульккӑш, хĕрĕм, — терĕ вăл шукăль тумланнăскер çине ытарайми пăхса. — Эпĕ виличчен çитрĕнех. Питĕ кĕлтурăм саншăн. Эсĕ каланă пурнăç йывăççинчен те пулăшу ыйтрăм, Турă Амăшĕнчен те... Акă эсĕ çитрĕн те. Халь вилсен те юрать. Сана урăх кураймастăп пулĕ тенĕччĕ. — Марье аппа йĕрсе ячĕ.

— Ан хурлан, анне! Халĕ эпĕ килтех пурăнăп. Заочно вĕренме куçрăм. Эсĕ те акă час сывалăн та, эпир иксĕмĕр пĕрле чиперех пурăнса кайăпăр. Ан кулян, — йăпатрĕ амăшне Нинук. Хăйне вăрçрĕ. Чăн та, мĕн сулланса çӳремеллеччĕ çав ямăт хулара. Çăтмах терĕ пулĕ. Çăтмах мар, тамăк пулчĕ. Çыннисем те унта сивĕ чунлă пек курăнчĕç хĕр ачана. Çтаппанĕ те, Çтаппанĕ те çав!..

Нинук ял хыпарĕсене ыйтса пĕлчĕ. Ванюксем курăк ӳстерсе силос хывнă та выльăх йышне пысăклатасшăн. Хĕлле тепĕр ферма тума пуçланă. Хуçалăх ертӳçи те, Галина Ивановна, хавхаланса кайнă. Кун пек пулсан республикипе мала тухатпăр тет. Ял чĕрĕлет.

## Хĕрарăм ĕмĕрĕ

Нинук яла килни çинчен Ванюк тепĕр куннех пĕлчĕ. Марье аппасен тĕлне чупса пырса кĕтсе илĕччĕ савнă хĕрне — тем чарать, пыраймарĕ каччă. Хĕр ултавĕ ун чĕрине кăшласа пĕтерĕччĕ-и — юлташĕсем юнашар пулчĕç, Михха мучи пулăшса пычĕ. Тата биологи учителĕ Хĕветĕр Хилипчă çĕр наукине малалла аталантарма ыйтни те пулăшрĕ, хуçăлса ӳкме памарĕ. Каччă тăван çĕр пурнăçĕпе кăна пурăнчĕ. Çитĕнӳсем хавхалантарчĕç. Самать уйне юшкăн кăларни нумай апат-çимĕç хатĕрлеме, выльăх шутне ӳстерме май пачĕ. Ял халăхĕ çăмăллăн сывласа ячĕ. Халĕ пурăнатпăр ĕнтĕ терĕç.

Марье аппа пирки те шутламан мар Ванюк. Нинук амăшĕ-çке вăл! Ватă хĕрарăм чирлесе ӳкни çинчен илтсен Нинуксем патне те каçнăччĕ. Сип пултăр тесе Тĕпсĕр çăлкуçри чĕрĕ шыва ĕçсе пăхма сĕннĕччĕ. Ăçта унта? Турра ĕненекенскер патне те пыртармарĕ. Тура пулăшать терĕ. Анчах пурнăç тени Турăран кăна мар, хăвăнтан та нумай килет. Пуринчен ытла çут çанталăк вăйĕнчен. Шывĕ, сывлăшĕ, çĕрĕ мĕнле — сывлăхĕ те çапла. Анчах Марье аппа çакна ăнланмасть курăнать. Ванюк ăсса килнĕ чĕрĕ шыва ĕçмерĕ. «Тен, хĕрĕ ӳкĕте кĕртĕ?» — çак шухăшпа тĕл пулма шутларĕ те Нинукпа каччă.

Каç енне ĕçрен таврăнсан Марье аппасен килĕ умне сак çине пырса ларчĕ. Кĕтӳ кĕртнĕ ĕнтĕ. Ял шăпланса пырать. Чăнкăр-чăнкăр

илтӗнет витре сасси картишӗнче. Апла часах Нинук шыв ӑсма тухмалла. Шыв колонки вӗсен килӗ умӗнчех. Чӗр-рик! туса уҫӑлса хупӑнчӗ пысӑках та мар хапха. Каччӑ умне икӗ витре йӑтнӑ Нинук уйӑх ҫинчи кӗвентеллӗ хӗр пек тухса тӑчӗ. Сак ҫинче ларакан каччӑна курсан пӗр чӗнмесӗр иртсе каяс терӗ.

— Нинук, тӑхта! — чарчӗ ӑна Ванюк. Каччӑ тем каласа хӑртас пек туйӑнчӗ. Ун вырӑнне лешӗ пачах урӑхла калаҫрӗ. — Эпӗ сана пӗрре те ҫилленместӗп. Кил-ха, лар. Калаҫмалли пур.

— Салам, Ванюк! — савӑнчӗ хӗр, кун пек килсе тухасса кӗтменскер. Хӑй ун ҫине питӗ сӑнаса пӑхрӗ. Ванюк сисӗнмеллех улшӑнса кайнӑ. Патваррӑн, кӗрнеклӗн курӑнать. Чӑнчӑн арҫын. Иментнипе ҫӳҫентерет. Епле хитре вӑл!

— Эпӗ мӗн... — тӑруках калас тенӗ сӑмаха калаймарӗ каччӑ. Ун умӗнче пирӗшти пек шап-шур тум тӑхӑннӑ чипер хӗр тӑрать. Нинук питӗ шукӑль тумланнӑ. Ялта ун пек ҫӳрекен ҫук. — Эпӗ сан аннӳ пирки калаҫасшӑнччӗ, — сӑмахне аран малалла тӑсрӗ каччӑ. Сывлӑш пӳлӗннипе тарӑннӑн сывласа илчӗ.

— Мӗн каласшӑнччӗ?

— Марье аппана ним те мар сыватма пулать.

— Мӗнле майпа?

— Эсӗ ку шыва колонкӑран мар, урӑх ҫӗртен ӑсса кил.

— Ăçтан?

— Икĕ çырма пуçĕнчен.

Ванюк ним ăнланмасăр пăхкаласа тăракан хĕре хăй епле сывални çинчен каласа пачĕ. Михха мучи хăйĕн чĕрĕ шывĕпе килсе пулăшман пулсан хăçанччен выртма тивĕççĕ больницăра. Куна илтнĕ Нинук хавасланса кайрĕ.

— Апла эсĕ сывалса çитнĕ? — терĕ вăл каччă çумне тĕршĕнсе. Аллинчи витрисем чăнкăр-чăнкăр турĕç. — Эпĕ сана юсанса пĕтеймĕн тесеччĕ.

— Çавăнпа тухса тартăн-им ялтан? Е Çтаппан илĕртрĕ?

— Вăл та, ку та... Каçар, Ванюк, сана сутнă пекех килсе тухрĕ.

— Аннў каçартăр. Сан пирки пăшăрхансах чирлесе ӳкрĕ пуль. Сыватас пулать.

— Эппин, кайрăмăр. Эсĕ мана шыв витрисене йăтса килме пулăшăн.

Икĕ çамрăк Икĕ çырма пуçнелле утрĕç. Вĕсем çитнĕ çĕре хĕвел те анма пуçларĕ. Ванюка хурăн катине каçхи хурала тухнă вăхăтсем аса килчĕç. Аса килмесĕр! Каччăпа хĕр Тĕпсĕр çăл патне çитрĕç кăна, шăпчăксем вĕсем килессе кĕтсе тăнă тейĕн, çакă асамлă тĕлпулăва саламласа малтанхи пекех харассăн юрласа ячĕç. Шăпчăк юрри чуна тыткăнлать мар-и? Кӳренни, кӳлешни йăлт манăçать.

Çăл умĕнче каччăпа хĕр пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе тăчĕç. Ăнсăрт уйрăлу вĕсен туйăмĕсене тата та хĕрӳлетрĕ. Акă вĕсем çăлкуç-

ран выртса шыв ёҫрёҫ, пичёсене сип пултăр тесе ҫурёҫ, витресене чёрё шыв тултарса килелле утрёҫ. Ҫамрăксем кайнине ҫăлкуҫ кăна курса юлчё. Вёттён-вёттён пёркелентерчё шыв хăй питне. Малалла мён пулать-ши терё пулинех.

Хёвел анчё. Марье аппа хёрё шыв ăсма тухса халё те таврăнманнишён пăшăрханчё. Хăй мёншён хёне кайнине те ăнланмарё вăл. Чиперех пурăнатчё. Нинук вёренсе тухсан, тен, хулана та пурăнма куҫăп тетчё. Ҫавăнпа пенси укҫине йăлтах хёрне парса тăчё. Хăй выҫăллă-тутăллă пурăнчё. Те ҫав юрамарё, те урăххи? Ёмёрёпех ҫёр ёҫёпе аппаланнă хёрарăм ватлăхра та пулин ёҫрен хăтăлатăп терё пуль. Юлашки вăхăтра вăл йывăр тесе ҫёр улми те лартма пăрахрё. Ёнине Нинук хулана кайсанах сутса ячё. Укҫи хёрне тумлантарма кайрё. Сурăхсем те ҫук халь унăн. Пёр-икё чăх кăна. Ҫёртен уйăрăлнă вёсем. Ҫёр тёрекёсёр тăрса юлнă ҫын самантрах вăйран каять.

Шăнкăлт! уҫăлса хупăнчё ҫав вăхăтра урам хапхи. Пӳрте икё витре шыв йăтнă хёрё кёрсе тăчё.

— Ăҫта ҫӳрерён ку таранччен? — хăй тарăхнине пытармарё хёрарăм. — Пёр курка шыв паринччё хăть!

— Тин ҫеҫ ăсса килтём, ёҫ! — витререн пёр курка шыв ăсса пачё Нинук.

— Тавах! Чун лăшах пулчё, — терё чирлё хёрарăм. — Кан эсё те, таҫта чупса ан ҫӳре.

— Анне, ман клуба каяс килет, — пёл-

терчӗ Нинук. Урамра тăрса юлнă Ванюк чă-тăмсăррăн кӗтнине вăл питӗ лайăх пӗлет. — Юлташсене те тахçанах курман. Каям-и? — хӗр амăшӗ çумне тӗршӗнчӗ, пуçӗнчен ачаш-ларӗ.

— Юрӗ, юрӗ, — хытарам пекки туса ка-ларӗ амăшӗ. — Нумай ан çӳре.

Хӗр килтен чупса тенӗ пек тухса кайрӗ. Каччăпа хӗр тахçан çӳренӗ сукмаксемпе те-пӗр хут утса кайрӗç. Урамра никам та çук. Вӗсене çӳлти тулли уйăх кăна сăнаса пырать. Каллех тӗл пулчӗç теет пек. Тахçанах тӗл пулман Ванюкпа Нинука халӗ калама çук савăк.

Çул ката еннелле выртать. Акă савнă вы-рăн. Шурă-шурă хурăнсем каччăпа хӗре пуç тайса кӗтсе илчӗç. Тек уйăрăлас çук кусем теççӗ çулçисем. Вăрăмланса кайнă турачӗсем явкаланса тăраççӗ. Нинук та акă, хулари хӗрсем пекех, çӳçне хулпуççийӗ çине салат-са янă. Çук, пӗрре те ӗлӗкхи чăваш хӗрӗ пек мар çав Нинук. Чисти майра. Çакна Ванюк та сисет. Килӗшет ăна хӗр çапла хăтланни.

Нинук та кӗрнекленсе кайнă Ванюкра малтан палăрман арçынлăха курса савăнать. Çтаппан сăнарӗ тек пӗрре те куç умне тух-масть. Акă ун Ванюкӗ! Чăн паттăр! Улăп пек тăрать.

Шăпчăксем хăйсен юррине юрлаççӗ. Тен, вӗсем çакăнта час-часах çӳренӗ каччăпа хӗре астăваççӗ те. Çут çанталăкăн та хăйӗн ăсӗ пур. Куна халь ял çыннисем те чухлама пуç-ларӗç. Михха мучи çине тăнипе пирус туртма

пăрахрĕç хăшĕ-пĕрисем. Мучи хăй чĕлĕмне тахçанах шкул музейне кайса панă. Эрехсăра ĕçесси те чакса пырать. Таçтан хăй тĕллĕнех кĕчĕ çав йăла — сĕтел çине графинпа чĕрĕ таса шыв кăларса лартасси. Пĕр стакан шыв ярса ĕçетĕн те — чун лăпланать. Чĕрĕ шыв ĕçме пуçланăранпа ялта пĕр çын та вилмен. Çынсен пичĕ-куçĕсем çуталса кайрĕç. Урамра та, уйра та юрă илтĕнме пуçларĕ.

Ванюк Нинук заочно вĕренме куçнине ырларĕ. Хăй те шкултан вĕренсе тухсанах ял хуçалăх академине Нинук пекех кĕрет мар майпа вĕренме кĕме ĕмĕтленет.

Марье аппа та ĕмĕтленчĕ. Шыв ĕçнĕ хыççăнах вăл хăйне лайăх туйса илчĕ. Хĕрĕ хуларан килни те савăнтарчĕ. Халь тин пурăнатпăр ĕнтĕ терĕ. Кăçал çĕр улми ытларах лартас пулать те ун укçипе ĕне илсе ярас тет хĕрарăм. Сĕт-çу тавраш кирлех. Пахчана та йĕркене кĕртмелле. Хăрнă улма йывăççисем вырăнне çĕннисене лартмалла, виктори ӳстерсен те аван... Çук, кун пек нихçан та ĕмĕтленмен Марье аппа. Мĕн пулчĕ ăна? Мĕн ĕлĕкрен ялта пурăнма шăпа пӳрнишĕн тарăхса тăнă вăл. Телевизорпа чаплă пурнăç курсанах вĕчĕрхенме пуçланă. Мĕншĕн ун ыттисенчен кая пулмалла? Вăл та кинори артистсем пекех хитре хĕрарăм! Анчах ун резина атăпа фуфайка тăхăнса, тутăр çыхса пылчăк çăрса çӳреме тивет. Телевизорпа кăтартакан сериалсем ун чунне çурсах яраççĕ. Хăйне пӳрмен пулсан та хĕрĕ хăть çапла чаплă пурнăçпа

пурӑнса куртӑр тет. Анчах мӗн ку? Шӑпах ҫапла тума пуҫларӗ кӑна — пурнӑҫ тата хытӑрах килсе ҫапрӗ: хӑйне чир ерчӗ. Хӗрӗ хуларан тарса килчӗ. Мӗнле йӑнӑш турӗ-ши ват ҫын? Ямӑт пурнӑҫа ӑмсанчӗ-ши? Кинори чаплӑ пурнӑҫа та тепри тунӑ-ҫке-ха! Марье аппапа хӗрӗ вара вӑй хумасӑр ҫав пурнӑҫа пырса кӗресшӗн. Чаплӑ ҫынсем те хӗн-хур витӗр тухнӑ пуль. Ӗҫленӗ, асапланнӑ. Эпӗ вилетӗп тесе выртман. Е тепри пек эпӗ пуян ҫынна качча каятӑп тесе айванланса ҫӳремен. Ӗҫленӗ те хӑйсене кирлӗ пурнӑҫа хӑйсемех туса хунӑ. Вӗсем тӑван ывӑлӗ-хӗрӗсене ют ҫын аллине парас темен. Эпир вара ҫуратнӑ-ҫуратман урӑх чӗлхе, урӑх йӑла-йӗркене вӗрентме пуҫлатпӑр та ачана ҫухататпӑр. Лайӑх пултӑр тетпӗр-ҫке!

Марье аппа хӑй ҫине пӑхса илчӗ, пӗртенпӗр хӗрне ютлатма тӑрӑшнине тин ӑнланса илчӗ вӑл.

Ялта та хӗрсем тытӑнса тӑмаҫҫӗ. Ял ютланать. Каччисем тӗнче касса ӗҫлесе ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем ялта ҫавӑн пек ӗҫлес пулсан кунта чаплӑ пурнӑҫ пуҫланмалла! Анчах пире килте ӗҫлеме памаҫҫӗ вӗт! Йӑлт тӗнче валли пултӑр теҫҫӗ. Кайран вара сирӗн нимӗн те ҫук тесе кулаҫҫӗ. Ҫапла мар-и-ха вара Марье аппан та? Тайӑлса кайнӑ пӗчӗк пӳрчӗ, ҫум курӑкпа витӗннӗ пахчи, выльӑх сассисӗр картишӗ... Марье аппа та тӑван килӗнчен тарма хатӗрленнӗ! Хӗрӗпе пӗрле. Анчах Тӗменре те тӳсе хуни ҫуккӑ теҫҫӗ.

Хаш сывларӗ хӗрарӑм. Ҫывӑраймарӗ вӑл.

Хĕрĕ килмесĕр епле çывăртăр ĕнтĕ. Чăваш амăшĕ вăл ачисене пит юрататъ. Пиртен лайăхрах пулччăр тет. Çавна пулах хăвалать те вĕсене ялтан. Урăх çĕрте мар, килтех лартасчĕ ун çын курман кермене! Эпир мĕн, майрасенчен кая-им?

Мĕн чухлĕ пураннă çак çĕр çинче — кун пекки нихçан та пуçа кĕмен. Мĕн пулчĕ-ши тĕлĕнет хĕрарăм. Хăйне вăл пĕрре те чирлĕ пек туймасть. Пуçĕнче тем тĕрлĕ ĕмĕт. Кĕлетки те ыратма пăрахрĕ. Ĕненмесĕр Марье аппа вырăн çинчен тăрса ларчĕ. Вăйĕ çукрах та, аран-аран çĕкленет. Çĕкленет вĕт! Хăйĕнчен хăй тĕлĕнет чирлĕ çын. Икĕ уйăх вăл вырăнпа выртатъ. Юрать кӳршĕсем пулăшкаласа пычĕç те — пурăнкаларĕ-ха. Çитет выртса!

Хĕрарăм тăрса ларчĕ. Ай, кĕтрет! Вăл чĕрĕлсе пыратъ. Майĕпен-майĕпен ура çине тăчĕ. Утса пăхрĕ. Урайĕнчех ларакан витререн пĕр курка шыв ăсса илсе ĕçрĕ. Тата çăмăл пулса кайрĕ. Пачах та чирлĕ мар пек. Вăй çеç çук. Вырăнпа выртса шăм-шак хытса ларнă. Пурпĕрех картишне тухас терĕ Марье аппа. Тахçанах тухман. Алăка яри уçса тухрĕ. Тулта уйăх çути кĕтсе илчĕ ăна.

Ванюкпа Нинук çав вăхăтра савнă хурăнĕ айĕнче тăчĕç. Амăшĕ пекех туйăнчĕ ку хурăн вĕсене. Ăна тем те каласа пама юрать. Йăлт ăнланать. Хурăн умĕнче икĕ çамрăк ĕмĕр пĕрле пулăпăр тесе тупа турĕç. Йывăç — чи çывăх кӳнтелен, нихçан та сутмĕ. Нинук та тек укçа астарăвĕ хыççăн каймĕ. Телее хăвăн

аллупа туптасан кăна алла илме пулать. Хатĕрри çук. Ултав кăна.

— Шыв пек çемçе, çил пек авăк, хĕвел пек ăшă, йывăç пек çирĕп пулăпăр, тăван çĕре, пĕр-пĕрне нихçан пăрахмăпăр, — терĕ хăйĕн телейне асап витĕр тупнă Ванюк. Нинукне вăл пĕрре те кӳренмест, йăнăш тунăшăн чун-чĕререн хĕрхенет ăна. Унăн чĕри аслă. Пурне те юратать Ванюк. Пулăшма та хатĕр. Чĕрĕ шыв ĕçсе вăй илнĕ çын таса. Апла пуринчен те вăйлăрах. Нимле йывăрлăхран та хăрамасть, парăнмасть. Самать патша пулăшать ăна. Хăйне каччă пĕрмай унпа юнашар курать. Часах çитет Ванюк паттăра пулăшма! «Чăт, Самать, ан парăн! Эпир çитсен тата вăйланса кайăн», — тет вăл ăшра.

— Апат пек тутлă, сăмах пек ăслă, ача пек телейлĕ, хĕрт-сурт пек ăшă пулар, — терĕ Нинук хурăна пуç тайса.

— Ялтах чаплă çурт лартса, картиш çавăрса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, нумай ача-пăча çуратса ӳстермелле пултăр, — ĕмĕтленчĕ Ванюк. — Эсĕ мана мĕн чухлĕ ача çуратса парăн-ха?

— Мĕн чухлĕ калăн, çавăн чухлĕ, — вăтанса калаçрĕ хĕр.

— Апла пĕр çĕр ача. Килĕшетĕн-и?

— Çĕр ача?! — кăлтăртаттарса кулса ячĕ Нинук. — Ай-уй! Мĕн-ма ун чухлех вара?

— Ялтан çĕре яхăн çын тухса кайнă. Çавсем выранне, — кулчĕ Ванюк та. — Вара эпир пурте пĕртăван, пĕр çемье пулса тăрăпăр.

— Халь тин, чăн та, эпир, мишерсем, пурте пĕртăвансем. Хурăн кати ӳстертĕмĕр, халăха чĕртсе ямалли меслет те тупрăмăр...

Икĕ çамрăк çын хурăна икĕ енчен ыталаса ярса илнĕ те пăшăлтатса тăраççĕ. Вĕсем мĕн калани никама та илтĕнмест. Йывăç кăна пĕлет. Анчах вĕсен вăрттăнлăхне вăл никама та каласа памĕ. Ку Ванюкпа Нинук вăрттăнлăхĕ.

## Кăвак хуппи

Мĕн хĕвел тухичченех çӳрерĕç каччăпа хĕр Икĕ çырма пуçĕнче. Ниепле те уйрăлаймарĕç пĕр-пĕринчен. Тĕпсĕр çăлкуç патĕнче çыруллă чул çинче ларатчĕç вĕсем, киле кайма тăнăскерсем. Хĕвел тухма хатĕрленсе çитнĕччĕ. Тăрисем хĕвел шевли çапнă кăвак тӳпере каçса кайса юрлаççĕ.

Сасартăк пĕтĕм тавралăх кăн-кăвак çутăпа ялтăрса тулса ларчĕ. Ăçта пăхатăн — пур çĕрте те пур япала та тап-таса кăвак тĕслĕ. Тӳпере тем пысăкăш кăн-кăвак çавра хĕвел ярăнса пырать. Ку пĕр кĕтмен çĕртен пулса иртрĕ те, каччăпа хĕр çухалса кайрĕç. Çав вăхăтра вĕсене калама çук телейлĕ, савăк пулчĕ. Чĕрисем харăссăн тапма пуçларĕç. Кăкăртан сиксех тухать пулĕ. Тен, хăрарĕç те кăштах. Анчах хăранипе пĕрле тулли телей килсе çитрĕ. Куçĕсене чарлаттарса пăхаççĕ çын курман япалана Ванюкпа Нинук.

— Кăвак хĕвел! Кăвак хуппи вĕт ку!

Çапла каларĕ кăна Ванюк — кăвак хуп-

пи лап сӳнчӗ. Тӳпере — яланхи пекех сар хӗвел. Тавралӑх та хӑй тӗсне тупрӗ, асамлӑх та пӗтрӗ.

— Эх, — кӳлешрӗ Ванюк. — Телей ыйтса ӗлкӗреймерӗмӗр. Кӑвак хуппи кам мӗн ыйтать, ҫавна парать тет.

— Кирлех те мар ыйтма, — ача пек хавасланчӗ Нинук. — Эпир унсӑр та телейлӗ. Мӗн кирлине хамӑртан ыйтӑпӑр та, пӗр-пӗрне кӑвак хуппи тӑсса панӑ пек, телей туса парӑпӑр.

— Ку та тӗрӗс. Пирӗн телей халь хамӑр алӑра. Ҫынна шанса лармалли ҫук.

Ванюк Нинука ачашшӑн ҫупӑрласа илчӗ. Иккӗшӗн чӗринче те тӗлӗнмелле вӑй тапни сисӗнсе тӑрать. Куҫӗсем хӗвел ҫути ҫинче кӑвар пек ялкӑшаҫҫӗ.

— Ҫӗклен те ҫӗнтер, пӗтсен те ан парӑн! — каласа хучӗ Ванюк ҫыруллӑ чул ҫине ҫырса хӑварнӑ Самать патшан сӑмахӗсене.

— Ҫӗклен те ҫӗнтер, пӗтсен те ан парӑн! — савниййӗ хыҫҫӑн кӑшкӑрсах каларӗ Нинук.

— Ҫӗклен те ҫӗнтер, пӗтсен те ан парӑн! — ахрӑмлӑн тавӑрса пачӗ тавралӑх.

Кӗр-р! кӗрлесе кайрӗ ҫав самантра. Ҫӗр чӗтренсе илчӗ, ҫамрӑксен куҫӗ умӗнчех ҫӗртен темӗскер мӑкӑрлса тухма тытӑнчӗ. Хӑрататать! Анчах Ванюкпа Нинука хӑратайӑн-и? Халӗ вӗсем нимрен те хӑрамаҫҫӗ. Куҫ илмесӗр пӑхса тӑраҫҫӗ ҫӗрпе мӗн пулса иртнине.

Шалт! тутарса сирпӗнсе кайрӗ те тӑпра, ҫӗр айӗнчен пурнӑҫ йывӑҫҫи тухса ӳссе ларчӗ. Питӗ хӑвӑрт ӳсрӗ вӑл. Юмахри пек. Ванюк-

па Нинук ăна самантрах палласа илчĕç. Ун патне чупса пычĕç.

— Пурнăç йывăççи! — кăшкăрчĕ хĕр.

— Кăвак юман! — ўпĕнчĕ ун умне Ванюк. Куç умне каллех Нинук пан улми çыртнă ўкерчĕк тухса тăчĕ. Шăпах çак тĕле ыватса янăччĕ мар-и-ха вăл ăна? Тепĕр çултан вăрринчен пурнăç йывăççи тепĕр хут шăтса тухрĕ.

Пурнăç йывăççи-и, кăвак юман-и, тĕнче е ырăпа усал йывăçĕ — паллă мар, тĕрлĕрен калаççĕ халăхра. Чăвашсем ăна Киремет йывăççи тесе те каласа пăхнă. Библире пĕлў йывăççи тенĕ. Ĕç ятĕнче мар. Ĕç çак йывăç çĕрпе пĕлĕте çыхăнтарнинче. Çын çĕр ĕçĕпе кăна мар, тўпе ĕçĕпе те пурăнтăр тенинче. Çакна та чухлаççĕ йывăç çимĕçне тутанса пăхнă çамрăксем.

Йывăç самантрах тенĕ пек ўссе ларчĕ. Каччăпа хĕр ун умне пырса кĕлтунă пек пăхса тăраççĕ. Тем калать пек вĕсене çак йывăç. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна пуççапнă. Ахальтен мар вăл Икĕ çырма пуçне шăтса ларнă.

«Таса пул! — тет вăл. — Чăваш мĕн авалтан таса пурăннă, çавăнта ун вăйĕ. Кăшт варалансанах ху вăйна самантрах çухататăн. Сан вăйу усала куçать. Усал сана варалама тăрăшать. Эс ан парăн. Ун хыççăн ан кай. Таса тўпене пăхса ил те чăн çĕр ĕçĕпе пурăн. Чăнлăх кăна таса. Ырă пул! Ырă пулма вăй, тасалăх, чăнлăх кирлĕ. Вĕсене эсĕ пурне те Таса çĕр ĕçне ĕçлесе кăна тупма пултарăн.

Çĕре ан сиенле! Вăл сан аннӳ. Ăна сурма та, пĕтерме те юрамасть. Пĕтĕм çĕр ĕçне урăхла майпа йĕркелемелле. Мĕнле йĕркелемеллине çĕр хăех каласа пырать. Илтме кăна пĕл. Çĕр чĕлхине вĕрен. Кам ăна çухатать, çав пĕтет. Çĕр вăл ăслă. Унран асли ним те çук».

Кам каларĕ çак шухăшсене йывăç умне чĕркуçленсех ларнă çамрăк çынсене? Е вĕсем çĕр чĕлхине чухлама пуçларĕç, е пĕлӳ йывăçĕ хăй калаçрĕ-и? Калама хĕн. Çĕр хăйĕн ачисене пулăшас тени çеç паллă. Тĕпсĕр çăлкуçĕнчен чĕрĕлĕх кĕртекен шывне те, сиплĕ юшкăнне те пĕр шеллемесĕр кăларса пачĕ. Ытти хăйсенчен килет. Енчен те каллех пĕрпĕринпе вăрçса пурăнас пулсан çĕр пулăшни те усса каяс çук. Халиччен çĕр пĕрлĕхне туйман халăх авалхи çĕртен уйăрăлса кайса пурăннă. Тăван çĕр каллех вĕсене пĕрлештерĕ. Пурнăçра таса пурăнма таса апат-çимĕç, таса шыв, таса чĕлхе парĕ. Чĕлхи те вăл çĕр чĕлхиех! Кашни халăха çĕр хăй чĕлхине парать. Чăваша чăваш чĕлхине пачĕ. Вырăс çĕрĕ — вырăс чĕлхине. Тутара — тутар чĕлхине. Енчен те хăвăн чĕлхӳне мантăн тăк — çĕре те манатăн. Çĕр каçармасть. Тĕнче тăрăх хăваласа ярать. Çӳретĕн вара чĕлхесĕрленсе... Тен, пуян та, вăйлă та пулăн, анчах тăван çĕр сана тек каялла йышăнмĕ.

Пĕлет çакна Ванюк. Сисет çакна Нинук. Хăй те тӳссе курчĕ, тăван çĕртен инçе çӳресе пăхрĕ... Асфальт мĕн вăл! Вăл тăван çĕр мар! Апачĕ те хулара ют çĕршывран илсе

килни. Мӗн тума вара сана ку чух чӑваш ҫӗрӗ?

Каччӑпа хӗр пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те кӑлтӑртаттарса кулса ячӗҫ. Халь тин вӗсен чӑн-чӑн учитель пур. Калаҫма кӑна пӗл! Йӑлт каласа кӑтартать.

Ҫапла шутласа илчӗҫ ҫеҫ, ҫийӗнчех хӑраса ӳкрӗҫ. Енчен те Тулай Иванӗпе Ҫтаппан пек ҫынсем тупӑнсан ӑна касса яма та пултараҫҫӗ. Вара мӗнрен пӗлӳ илӗҫ-ха ҫӗр ачисем?

Сасартӑк йывӑҫ куҫ умӗнчен ҫухалчӗ. Хальхинче чӑнласах хӑраса кайрӗҫ. Харӑссӑн ӳкӗтлерӗҫ ӑна ачасем, куҫ умне тухма ыйтрӗҫ. Йывӑҫ кӗттермерӗ. Каллех куҫа шартарса ӳссе ларчӗ. Акӑ мӗнле йывӑҫ вӑл, пурнӑҫ йывӑҫҫи! Ҫынна кирлӗ чухне кӑна палӑртать хӑй вӑйне. Пӗтӗм чун-чӗререн ыйтсан кӑна парать хӑй пӗлӗвне. Усал ҫын ӑна курас тесен те кураймӗ.

Савӑнса кайнӑ хӗрпе каччӑ аллисене ҫупса илчӗҫ. Вӗсен асамлӑ йывӑҫ пур! Халь тин ялтах ҫӑтмах тума пулать. Ӗҫлес пулать. Пӗлӳ пухас пулать. Ырӑ пулмалла. Таса пулмалла. Никама та сиен кӳме юрамасть. Сиен тени атом бомби пек ҫурӑлса каять. Вара ӑна, усал сӑнлӑскере, чарма ҫук. Пурте пӗр-пӗрне сиенлеме, пӗтерме пуҫлаҫҫӗ. Пурте пӗр-пӗрне ҫилленсе ҫӳреҫҫӗ. Кашни тепӗрне япӑх тесе шутлама тытӑнать. Сиен кӳни вӑл бомбӑран та хӑрушӑ. Ҫавӑнпа та никама та, ниме те сиен кӳме, усал тума юрамасть. Ҫакна халь Ванюкпа Нинук ҫеҫ мар, ял халӑхӗ те пӗлет пулас. Нимелле ӗҫлеме пуҫларӗ.

Асамат кĕперĕ пек ялтăрса тăрать пурнăç йывăççи ачасен умĕнче. Тем пуплет, тем вĕрентет вĕсене. Тен, йывăç та мар вăл? Кăвак хуппи, тен? Илтнĕ вăл çамрăксен чунри ыйтăвне, йывăç пулса килнĕ. Кун пек те пулма пултарать. Кирек мĕнле пулсан та ял халăхĕн халĕ ним çук çĕртех тăватă тĕрек тупăнчĕ. Тĕпсĕр çăлкуçри чĕрĕ шыв, авалхи чăвашсем хăварнă çыруллă чул, пурнăç е пĕлӳ йывăççи тата таса çĕр. Çук, çук, тăваттă кăна мар, тата таса тӳпе пур! Акă епле шăрантараççĕ кăвак хуппи пек çӳл тӳпере хăйсен юррисене тăрисем. Апла, тăри юрриллĕ кăвак тӳпе те пур! Кăвак хуппи тейĕпĕр. Кун пек асамлă вăйсемпе мĕнле çĕнтермĕн? Çĕр ачисене çĕр амăшĕ хăй пулăшса пырать. «Çĕклен те çĕнтер, пĕтсен те ан парăн!» — тет пек вăл хăй ачисене ырă сунса.

Кил умне çывхарса пыракан мăшăра Марье аппа ура çинче кĕтсе илчĕ. Вăл çĕрĕпе çывăрман. Кĕтсе илчĕ те амăшĕ хăйĕн ачисене ыталасах илчĕ. «Пĕрле пулăр!» — тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Мишер ялĕнче пĕрлĕх самани пуçланчĕ...

## Эпилог

Пырса курнă-и эсир Мишер ялне? Повеçре çырса кăтартнă вăхăт манăçа тухнă пулĕ. Ванюкпа Нинук тахçанах çĕре кĕнĕ. Ачипăчисем юлнă. Ял тулли.

Ялĕ паллама çук улшăннă. Ванюкпа Нинук ĕмĕтленнĕ пекех, çырма-çатра тулли шывлă пĕвесемпе карăннă. Унта тем тĕрлĕ пулă ишсе çӳрет. Çырма тăршшĕпех садсем. Таса сукмаксемпе утса ывăннă хыççăн ларса канмалăх тенкелсем. Уйсем таса, тухăçлă. Тӳпере тăрисем юрлаççĕ.

Ĕлĕк уйра путене те авăтма пăрахнăччĕ. Халĕ тырă пиççе çитме пуçласанах путене авăтма пуçлать. Апла, мишерсем тырăллă пулаççĕ.

Çурчĕсем вара! Хуларинчен пин хут хăтлăрах та хитререх. Чăн-чăн усадьбăсем. Вĕрисивĕ шывĕ юхсах кĕрет. Ахальли мар, чĕрри!

Пахчисем сиплĕ сывлăшпа тулли. Тухса лар тенкел çине — самантрах вăй илетĕн. Ун пек тутлă сывлăш çăтмахра кăна пулма пултарать.

Эрех-сăра таврашне тутанса та пăхмаççĕ. Ун вырăнне тĕрлĕ сиплĕ хутăшсемпе пуянлатнă чĕрĕ шыв кăна ĕçеççĕ. Ялта пĕр чирлĕ çын та çук.

Мишерсем çĕр çул ытла та пурăнаççĕ. Анчах автан сассисĕр яла вăхăтра каймалла теççĕ чылайăшĕ. Ĕлĕкхи пек вăхăтсăр мар, вăхăтлă.

Тĕпсĕр çăлкуçĕпе çыруллă чулĕ вĕсем Икĕ

çырма пуçӗнче халӗ те пур. Кам килсе курас тет, тархасшӑн. Ырӑ сунса кӗтсе илӗç ял çыннисем. Пурнӑç йывӑççи вара кам çут çанталӑка итлеме, ун чӗлхине ӑнланма пултарать — çавна кӑна курӑнать. Тен, эсир те Ванюкпа Нинук пек унпа пуплеме мел тупатӑр.

Тӗрӗссипе, вӑл кашни пахчарах пур. Халӗ пурте ӑру вӑрманӗсене лартма тытӑнчӗç. Вӑрман хӳтлӗх кӑна мар, ырлӑх та кӳрет. Ку аваллӑха аса илниех. Малашлӑх çут çанталӑк урлӑ килет. Куна пурте туяççӗ, пӗлеççӗ, кӗтеççӗ...

## Автор çинчен

Михаил Сунтал (Желтов Михаил Павлович) 1945 çулта нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕнче Тăвай районĕнчи Сăхăтпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тăвай салинчи вăтам шкултра вĕреннĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче пĕлӳ пухнă. Вăл Шупашкарти приборсем тăвакан заводра инженер пулса ĕçленĕ. Шăп çак вăхăтра литература ĕçне пуçăннă. Каярах чăваш радиопа телевиденире, унтан «Хыпар» хаçатра корреспондентра тăрăшнă. Хальхи вăхăтра И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи философипе наука методологийĕ кафедринче доцент пулса ĕçлет. Вăл философи наукисен докторĕ.

М. Сунталăн пĕрремĕш фантастикăллă хайлавĕсем техника аталанăвне, наука çитĕнĕвĕсене уçса параççĕ («Алтăр çăлтăр шерпечĕ», 1990). Çавăнпа пĕрлех çыравçă тăван çĕре упрас, ăна чĕрĕ организм пек йышăнас темăсене çутатса парать. Унăн пултарулăхĕнче хăй çуралса ӳснĕ вырăнсем уççăн курăнса тăраççĕ: Самать вăрманĕ, Тишле çырми, Нишер кати...

М.П. Сунтал Писательсен союзĕн членĕ (1992), чылай кĕнеке авторĕ. Паллăраххисем: «Асамлă алгоритм» (1994), «Аçа çапнă чун» (1997), «Хĕвел çутипе килетĕп» (2001) т.ыт. те.

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего и старшего школьного возраста*

**Михаил Сунтал**
**(Желтов Михаил Павлович)**

**МĂНТУ ВĂРТТĂНЛĂХĔ**

**ТАЙНА ВЕЛИКОЙ ГОРЫ**

**Рассказ**
**и фантастическая повесть**

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *Н.И. Орлова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректор *Н.П. Печникова*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 04.07.11. Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 7,56.
Учетно-изд. л. 4,99. Тираж 1000 экз. Заказ № К-6113. Изд. № 32.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Сунтал М.П.**

С 89 Мăнту вăрттăнлăхĕ: калавпа фантастикăллă повесть/М.П. Сунтал. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2011. — 142 с.

ISBN 978-5-7670-1863-5

**Хайлавсенчи тĕп сăнарсем — ырă чун-чĕреллĕ ачасем. Тăван çĕре упрас, унăн историне тĕпчесе пĕлес тесе тĕв тăваççĕ, тавралăх илемне чун-чĕрипе туяççĕ.**

**«Ялти çăтмах» фантастикăллă повеçре Ванюк тăван ялĕнчех çăтмахри пек илемлĕ те ырă пурнăç тума ĕмĕтленет. Ăна пулăшакансемпе пĕрлех ура хуракансем те тупăнаççĕ.**

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6-4**

**ISBN 978-5-7670-1863-5**

75,00

Чăваш
кĕнеке
издательстви

